Ж73
Ч-41185



Николай ЖИРНОВ

# ЫЛХАНЛĂ ылтăн

Куҫкĕç - 1999 ç.

Национальная библиотека ЧР
4-041185

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ

обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

М т 3 3835 Т 5000 1989г

Николай Жирнов

# ЫЛХАНЛĂ ЫЛТĂН

КАЛАВСЕМ

Кӳкеҫ — 1999 ҫ.

УДК 894, 344
ББК 84 (2 Рос.— Чув.)-4
ИС-73.

ПРОВЕРЕНО
2010

2-41185
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Издательство «Чувашия», 1999 г.
ISB№ 5—86—765—119—3

## АХ, ҪАТЕНЬКА, ҪАТЕНЬКА...

Кăҫал хĕл пĕлтĕрхинчен маларах ларчĕ. Тӳперен, пачах кĕтмен ҫĕртен, аслăкăн-аслăкăн юр йăтăнса анчĕ. Виҫĕ талăк ҫавнашкал чыхăнтарнă хыҫҫăн чĕркуҫҫи таран хыврĕ. Тăваттăмĕш талăкĕнче ирпе тӳпе янкăрланчĕ. Ҫывăхри юханшывĕ вара малтанхиллех кĕрлерĕ-шавларĕ, юрлă-пăрлăха паттăррăн парăнмарĕ, анчах та сивĕ «алли» хăйĕннех турĕ ҫав, ăна кĕҫех кĕрлесе-шавлама тăп чарчĕ, часах ун ҫийĕн пăр янкăррăн ҫуталчĕ. Вĕресе тăракан авăрсем ҫеҫ шăнаймарĕҫ-ха, ҫаплах ҫаврăнса пăтранчĕҫ. Ҫынсем ҫав ахăр вырăнтан пăрăнса иртрĕҫ, шыва кĕрсе ӳкесрен шикленсе-хăраса утрĕҫ. Ик-виҫ кунтан юханшыв урлă каҫу йĕркелерĕҫ, тепрер эрнерен вара лашасемпе те кĕрлеттерсе ҫӳреме тытăнчĕҫ.

Ҫак Обь хĕрринче тахҫанах пĕр-пĕччен старик пурăнать. Хĕрĕх пĕрремĕшĕнче ывăлĕсем Мускав патĕнче пĕр ротăра паттăррăн ҫапăҫса, пуҫ хуни ҫинчен хыпар илтсен вăл чутах тăнран каятчĕ. Амăшĕ те ҫак усал хыпара пĕлсен чăтма ҫук кулянчĕ, унăн чĕринче темскер пулчĕ, сывлăхĕ начарланчĕ, урине тахăшĕ ҫавапа касрĕ тейĕн—утаймарĕ вăл, пĕчĕк ача пек вырăн ҫинчен хăй тăраймарĕ, юлашкинчен вара типсе-типсе ҫитнĕ аллине тăсрĕ те Гришăпа сывпулашрĕ, ĕмĕрлĕхех... Упăшки нимĕн те тăваймарĕ, аптăранипе хăйĕн те пуҫĕ ҫаврăнчĕ. Пĕччен юлнă хыҫҫăн ун пурнăҫĕ йывăрланчĕ, вăл хăйĕн шăпине йĕрейĕре сивлерĕ, ҫапах та пĕччененех хăйне май кăштăртатса ҫӳрерĕ. Пӳрчĕ ĕнтĕ хăрах енне ҫĕрсе тайăлчĕ, пĕчĕкленчĕ, хуҫи пекех лăпчăнсах кукăрăлнăн туйăнчĕ. Пĕр ҫăмламас йытти кăна чупкалать, Гриша ури ҫумне сĕтĕрĕнсе чунне ҫырлахтарать. Ара, сунара ҫӳреме вăхăт ҫитнине систеретҫке-ха.

— Пĕлетĕп, Найда, эсĕ аса илтермесĕрех туятăп.

Йытă ачашланма чарăнчĕ, хуҫине куҫран чăрр пăхрĕ те айăплăн йынăшса ячĕ. Юлашки вăхăтра хуҫин шăмă сыппи ыратать, йытти ăнланмасть, инҫенелле вăл ҫӳреме

пултараймасть. Гриша çавăнпа сунара тайгана тухма васкамарĕ. Анчах яланлăха хăнăхнă чунĕ ăна ялан вăранмаллах астарать. Вăй пур чух вăл пулла çӳрет-ха, нумайрах-ытларах тытса, тăранса-çисе пурăнма хатĕрлесшĕн. Кимĕпе аякка çӳремерĕ, тетеле юханшыв хĕрринчи пӳртĕнчен инçех мар лартрĕ. Кăçал шыв чакрĕ те пулă кĕме пăрахрĕ. Пуçра çаплах пĕр шухăш канăç памарĕ, темле пулсан та сунара çӳреме тытăнмаллах пулĕ унăн. Пуçра яланхи шухăш: малтан пулă ытларах тытсаччĕ. Çавăнпа яланхи пекех юханшыв хĕррине васкарĕ, кунта вăл хăйне иккĕмĕш килти пек туйрĕ, темле чĕрĕ вăй ăша çĕклесе хавхалантарчĕ, пурăнас килсе кайрĕ. Вăл вара йывăç аварлă лумпа çӳхе пăра татăкăн-татăкăн катрĕ. Хăвăрт çеç виçĕ вака тетел лартрĕ те вĕсем ăçтине паллă турĕ, вакĕсем ĕнтĕ шăнма та тытăнчĕç. Старик кăкăр туллин çăмăллăн пĕр кана сывларĕ, пăр çинче выртакан тир алсине тăхăнса аллине ăшăтрĕ. Халь унăн кунтан ниçта та каяс килмерĕ, çутçанталăк илемлĕхне лекрĕ. Йывăç турачĕсене пас тытнă, вĕсем çине шӳлкеме кĕленчи çакса янă пекех туйăнать. Вăл киленсе тăчĕ-тăчĕ те: «Эх, тайга, тайга... Эп сансăр пурăнаймастăп — эсĕ те мансăр çук...» — тесе хучĕ.

Çывăхра сасартăк шăв-шав илтĕнчĕ, Гриша кăлт сиксе илчĕ те çаврăнчĕ, тӳрех асăрхарĕ. Икĕ арçын малта сиккипе чупаççĕ, хыçран вĕсене лашапа тепĕр арçын хăвалать, самантран-саманта вăл лашине пушăпа хĕртсе-вĕтсе хăвăртрах вĕçтерме васкать. Кĕçех çуна тайăлчĕ те тӳнчĕ, лаши шыв пулăхне тăсăлса анчĕ. Арçынсем малтан епле чупнă пекех вăрман еннелле, çаврăнса пăхмасăр, çиçтерчĕç. Гриша та пулăх патнелле ыткăнчĕ, унта лаша кĕçенчĕ, пулăх капкăнĕнчен тухаймарĕ. Пăр çумне пуçĕпе çапăнчĕ, суранран юн юхма тытăнчĕ, вăл çунинчен çапах вĕçерĕнеймерĕ. Унăн майне хăмăт пăврĕ, тапаçланнипех вара вăл шыва путса çухалчĕ, çуни çеç шыв çийĕнче, çыран хĕрринчи пушă кимĕ пек, тăрса юлчĕ. Гриша рюкзакран васкаса вĕрен туртса кăларчĕ, вĕçне тĕвĕлесе ункă турĕ те шывра путакан енне хăвăрт ывăтрĕ, тӳрех аллинчен çаклатрĕ ăна. Çывăхрах шăнса ларнă пĕренене асăрхарĕ, вĕренне унран кайса çаклатрĕ, хăй патнелле мĕн пур вăйран туртрĕ, хăй ассăн-ассăн сывларĕ. Аллисем чĕтрерĕç, çапах та çавăрчĕ-çавăрчĕ вĕрене вăл. Шывран кăларнă çынна йĕлтĕр çине хучĕ, хăйĕн килти ытти япали-

сене пăрахса килелле вĕçтерчĕ. Ах, çав, темле йывăр пулсан та вакка, ннкеке лекнĕ çынна туртса çитерчĕ килне. Қиле çитсен, пĕр пилĕк минут пек ним тăваймарĕ, пĕтĕм кĕлеткипе сиксе чĕтрерĕ, куç хупса иличчен пек канса выртрĕ те чĕтреме пăрахрĕ. Пăрланса ларнă çынна сĕтел çине йăтса хучĕ те ун çипуçне хыврĕ.

— Ара, ку Қатенька вĕт, пирĕн пулă хуралçи — ак тĕлĕнтермĕш.

Вăл çиçĕм пек хăвăртлăхпа шкапран кĕленче туртса кăларчĕ, çавăнтан спирт ярса илчĕ те унпа хĕрĕн пĕтĕм кĕлеткине сăтăрчĕ, пĕр çĕр грамм пек çăварĕнчен ячĕ. Унтан вăл унăн кĕлеткине хир сыснин çăвĕпе сĕрчĕ. Тăна кĕменскерне утиялпа чĕркерĕ те койка çине йăтса кайса вырттарчĕ. Хăй те, ывăннăскер, эрех ĕçрĕ те çавăнтах тĕлĕрсе кайрĕ. Сасартăк койка чĕтренчĕ, ассăн-ассăн, йывăррăн сывлани чуна çурасла илтĕнчĕ. Гриша сиксе тăрса ларчĕ, Қатькăна сăнларĕ. Ерипен-ерипен куç харшине хăпартрĕ, тарăнăн сывласа илчĕ те тăна кĕчĕ. Ним шарламасăр, йĕри-тавралла сиввĕн пăхкаларĕ те кайран шăппăн ыйтрĕ:

— Эпĕ ăçта?

— Çывăр, пĕтĕмпех кайран калăп, хĕрĕм.

Гриша ун валли шур çырли шывĕ илсе пычĕ.

— Çакна ĕç, хĕрĕм, çăмăлрах пулĕ.

Қатя темиçе сыпкăм çăтрĕ те пуçне стена еннелле пăрчĕ. Унтан çаврăнса выртрĕ. Қаçхине ăна ăшăтса-вĕрилентерсе ячĕ, çанçурăмне, пит-куçне тар чăмăрккн хупларĕ. Гриша тултан пăр йăтрĕ, Қатьăн тарлă çамки çине пырапыра хучĕ, тӳрех ку ăçтан пулăштăр-ха? Çапах та ир енне хĕр, хăй сисмесĕр-туймасăр, канлĕн çывăрса кайрĕ, çавăн хыççăн Гриша та канлĕн тĕлĕрчĕ. Ирпе Гриша малтан вăранчĕ, сивĕ пек туйăнчĕ пӳртре, ун урине çеç ăшă, Найда ури вĕçĕнче выртать-мĕн. Қил хуçи кăмака хутса ярсанах пӳрт ăшăнчĕ, чылаях та кирлĕ мар иккен вутти-шанкн пĕчĕк пӳлĕме хăвăрт ăшăтма, çавăнашкалах васкавлăн чей те вĕрерĕ. Чейнике Гриша зверобой ячĕ, пӳртс тутлă шăршă тапса тухрĕ. Қатя кăвак куçĕсене чарса маччаналла тинкерсе выртать. Старик çакна асăрхасан пысăк алюминн кружккăпа чей, тепĕр татăк хура çăкăр илсе хĕре пырса пачĕ. Қилте унăн çимелли урăх нимĕн те çукчĕ, çавăнпа вăл пулă патне кайса пăхма шутларĕ. Қатя вĕри чее вĕре-

вĕре сивĕтрĕ, унтан ăнтăлса ĕçрĕ. Гришшăн çурăмĕ хыçĕнче тытăнчăклă сасă илтĕнчĕ:

— Манăн лаша ăçта?

— Шыва путрĕ.

— Шел, юлашки çулсенче эпĕ ăна питĕ хăнăхнăччĕ, лайăх чупатчĕ, хуса та çитетчĕ.

Катьăн тĕксĕм куçĕсем шывланчĕç. Гриша йытă тирĕнчен çĕленĕ çăмламас кĕрĕкне тăхăнчĕ, йĕлтĕрне сырчĕ те ваксем патнелле вĕçтерчĕ. Виçĕ теттелĕ те пуш-пушах, вĕсене пĕр пулă та лекмен. Шывран туртса кăларнă чух шăнса ларчĕç, вăл хаклă япаласене рюкзака хучĕ. Киле илсе кайса типĕтме шутларĕ. Пӳртре Гриша вĕсене кăмака çумне çакса хучĕ. Уçăлса çӳренĕ хыççăн çиес килчĕ унăн. Пĕлет-ха — Катя та выçă. Гриша вара стена çумĕнче çакăнса тăракан сунар пăшалне илчĕ те тулалла тухрĕ, сунара килĕнчен аяккарах каяс темерĕ. Астăвать-ха вăл, çулла хĕрлĕ хурлăхан пуçтарнă чухне мулкач йăвине асăрханăччĕ. Гриша халь тӳрех çавăнталла çул тытрĕ, йытти малта ыткăнса пычĕ. Вĕсем чăтлăх патне çывхарма ĕлкĕреймерĕç, йытă вĕрсе те ячĕ, мулкачсене сасартăк сирпĕтсе кăларчĕ. Пĕрре пенипех Гриша пĕрне ӳкерчĕ. Çитĕ кунпа та тесе вăл хăвăртрах киле таврăнчĕ. Çĕрулми шуратрĕ. Питĕ тутлă шаркку пулчĕ, чи малтан вăл Катьăна антарса пачĕ. Хĕр-рыбнадзор тĕлĕннипе пуçне хум çинчи кимĕ пек пăркаларĕ.

— Тепĕр хĕрарăмрн та лайăх пĕçерсе хатĕрленĕ иккен эс!

Мулкач шăммисене Найда шăлĕсене шатăртаттарса, савăннипе хӳрине вылятса, кăшларĕ-çирĕ. Çисе тăрансан Катьăн та питне хĕрлĕ сăн кĕчĕ, çамки çине тар пĕрчисем тапса тухрĕç, çини усăллă пулчĕ, уншăн кăмăл та çĕкленчĕ хĕрĕн...

— Мучи, эсĕ, ма авланмастăн? — ыйтрĕ вăл кулкаласа.

— Ан кул манран, эпĕ вĕт ватă, кама кирлĕ çĕрĕк тунката.

— Эпĕ эс ун пек каланипе килĕшместĕп, сана пĕччен пурăнма кичем-çке-ха.

— Хам арăм вилнĕ хыççăн никам та кирлĕ мар мана.

Катя йăл-йăл йăлкăшса кулчĕ, ырă чĕреллĕ старик ăна чунтан килĕшрĕ. Унтан хĕр, кăмака çумне çакнă тетелсене асăрхарĕ те:

— Мучи, лайăх пĕлетĕн вĕт эс, ун пек пысăк тетелсемпе пулă тытма юрамасть, вĕсен тăршшĕ çирĕм пилĕк метр-

тан ытла пулмалла мар, вĕсем санăн виçĕ хут вăрăмрах та пулĕ.

— Эпĕ ĕмĕрех çаксемпе тытатăп, мана никам та асăрхаттарман-ха.

— Асăрхаттармалла.

Қалаçу малалла çыхăнмарĕ. Гриша канма шутларĕ, кăмака çумне вырăн сарчĕ те тăсăлса выртрĕ, анчах ăна сыпă шăммисем канлĕх памарĕç, ниепле те тӳрех çывăрса каяймарĕ, унтан ыратнă вырăна массаж турĕ те спиртпа сăтăрчĕ, вара тин пĕтĕм кĕлеткине çăмăллăх пулчĕ, вăл кĕçех тĕлĕрсе те кайрĕ. Ирхине вăрансан, алăк енче Найда нăйкăшса выртнине асăрхарĕ, Катя çывăрнă вырăн пушă пулнине курчĕ, хĕрĕн çакса хунă çипуçĕсем те çукчĕ. Гриша, типме çакнă тетелсем çуккине пĕлсен, тем пулнă пек, тулалла вăркăнчĕ, унта çĕнĕ юр çинчи пĕртен-пĕр йĕр çеç хуланалла каятчĕ. Гришăн чун-чĕринче тунсăх хăпарса çĕкленчĕ. Мĕн тăвĕ-ха халь вăл тетелсемсĕр? Пулăсăр мĕнле пурăнмалла-ха ун? Ак еплерех тав турĕ хăйне вилĕмрен çăлнăшăн пархатарсăр хĕр. Ах, Катенька, Катенька... Тепĕр пĕр-ик эрнерен Гришăна районти халăх судне чĕнчĕç, пулă тытмалли тетелсемшĕн штраф тӳлеттерчĕç.

1979 ç.

## ЫЛХАНЛĂ ЫЛТĂН

Якутири ылтăн приискĕнче пилĕк çул ĕçлет ĕнтĕ Хĕветĕр, ĕç опытне те сахал мар пухнă, укçине те самаях тӳлеççĕ, çапах та чунĕ пĕрмай кил еннелле, Чăваш çĕршывнелле, туртать. Мăшăрĕ те кунсеренех хускатать ку шухăша:

— Тăван йăмрасем куç умĕнчен каймаççĕ, сирень шăрши сăмсара тăнăн туйăнать, атте-анне килнех таврăнар пуль, Хĕветĕр.

Юлашкинчен калаçса татăлчĕç татăлчĕçех тăван ялне таврăнас пирки. Пилĕк çул хушшинче икĕ тюк та пĕр сумка çеç пурлăх пухнă имĕш вĕсем. Укçи тесен вара, вăл çителĕклех ĕнтĕ, ял умĕнче намăс пулас çук. Анчах çула тухас умĕн пĕр кăлтăк сиксе тухрĕ. Пилĕк çул каяллах, кунта килсе барака вырнаçнă чухне. Хĕветĕр пӳлĕмри кă-

мака умěнче хут чăмăркки тупрě. Ăна салатса пăхрě те тěрленě пěчěк хутаç туртса кăларчě. Ун пек хутаçпа тапак чиксе çӳреччěç арçынсем хăй вăхăтěнче. Ку хутěнче ылтăн катăкěсем пулчěç хутаçра. Çитменнине, самаях. Ним тума пěлмесěр Хěветěр çухалсах кайрě. Ара, ку таранччен нихçан та курман вăл çакăн пек таса ылтăна, çěрě те хăлха çаккисенче çеç.

— Клавье, ку чулсене патшалăха парар пуль?

— Ухмаха ан ер-ха, Хěветěр. Кирлě пурнăçра усăллă пулěç вěсем. Укçа вăл паян пур та ыран çук. Ылтăн вара яланах хакра.

— Кам та пулин пěлсен, тěрмене те лартма пултараç-çě-çке ăна пытарса усранăшăн.

— Сан хěрачалла çуралса юбкăпа çӳремелле çеç пулнă.

Итлерě Хěветěр ун чухне мăшăрне. Хăварчě ылтăна, анчах чунě яланах канăçсăр пулнă, паян-ыран кам та пулин ăнсăртран пěлессěн туйăннă. Халь вара патшалăха пама та кая юлнă, ěнтě. Çынсем мěн калěç? Аха, ку пирěнтен тата патшалăхран пытарса вăрттăн ылтăн пухнă, тейěç. Хěветěр ылтăн чěркенě чăмăрккана пилěк çул каялла ăçтан тупнă çавăнта пăрахрě, унтан кăштах шутларě те чăмăрккана кăмака умěнчен илсе кăмаканах персе ячě.

Çула Хěветěр çăмăл кăмăлпа тухрě. Анчах ун пек шутламан çав мăшăрě. Тем вăхăтра ылтăна кăмакаран туртса кăларнă та пěр тюк варрине чикнě. «Ман упăшкасăр пуçне кам ухмахě ылтăна çавăн пек пăрахса хăварě?» — шутларě вăл чунне лăплантарса.

Самолетра яланах тěрěслеççě тесе, пуйăспа таврăнма шутларě Клавье. Пуçри тутăрне куç харши таранах çыхса ячě те нăйкăшам пекки турě вăл:

— Хěветěр, темěн пуç ыратать манăн, самолетра япăх пулма пултарать манпа. Пуйăспа каяр пуль?

— Эп самолетпа вěçме ěмěтленнěччě, çулě те кěскелнě пулěччě. Ара, хăвна йывăр туятăн пулсан, пуйăспах кайăпăр ěнтě.

Тепěр темиçе кунтан тăван Чăваш çěршывне çитрě мăшăр. Хăйсен ялне курсан сывлăшěсем пӳлěнчěç иккěшěн те, чěрисем хăвăрттăн тапрěç, куçěсенчен куççулěсем пăчăртанса тухрěç. Пěве хěррипе ӳсекен йăмрасем патне çитсен тата ытларах хумханчěç вěсем. Ача чухне мěн чухлě чупнă кунта, йăмрасем çине улăхнă! Иккěшěн пěрре-

мĕш юратăвĕ те кунтах çуралнă вĕсен. Пĕр йăмрине ытаrаласа илсе татах куçĕсене шывлатрĕ мăшăр.

— Урăх нихçан та Турă ан пӳртĕрччĕ кунтан тухса кайма, тăван килтех вилесчĕ те тăван-пĕтенсемпе юнашар тăван масарах кайса выртасчĕ.

Иртен-çӳренсем асăрхарĕç пулмалла пĕве хĕрринчи йăмрасем айĕнче тăракан мăшăра, хăшĕ-пĕри чарăнса тăрсах пăха пуçларĕ вĕсем еннелле. Хĕветĕрпе Клавье тăван урампа утса кайрĕç. Хирĕç пулакансем пурте тенĕ пекех пĕр ыйтăвах параççĕ.

— Васлей шăллĕ пулмарăн пулĕ те, ытла пĕр пек сăнлă та?

— Çавă,— хуравлать Хĕветĕр савăнăçлăн, ял çыннисем палласа илнипе хĕпĕртесе.

Акă, ашшĕ-амăш килĕ те! Кунтан тухса кайнă чухне кĕлленсе юлнă çурт вырăнĕнче ултă кĕтеслĕ пысăк пӳрт сарăлса ларать. Хветĕр лайăх астăвать вăл куна. Çурт мĕнле тивсе кайни паллă пулмарĕ ун чухне. Тăшман е курайман çын тавраш пулман пек вĕсен ялта. Ашшĕ, ытларах пурлăх çăлса хăварас тесе, самаях пиçсе кайнăччĕ пушарта. Кас выртрĕ те ирпе тек тăмарĕ. Тепĕр виçĕ кунтан пытарма тиврĕ ăна. Уйăхраан амăшĕ те çĕре кĕчĕ, шăппăн, никама кансĕрлемесĕр. Виçĕ ывăл юлчĕ вĕсенчен. Асли, Васлейĕ, яла юлчĕ. Вăтамми, Хĕветĕрĕ, Çĕпĕре çул тытрĕ. Кĕçĕнни, Çеменĕ, Шупашкарта вырнаçрĕ.

Эрешлĕ крыльцаран Васлей пиччĕшĕ чупса тухрĕ, шăл лĕне ыталаса илчĕ. Куçĕ шывланнă.

— Эс мĕн, телеграмма параймарăн-им, лаша кӳлсе кетсе илнĕ пулăттăм.

— Чăрмантарас темерĕм.

— Мĕн чăрмавĕ унта. Пар-ха, лайăхрах пăхам. Ав епле тĕрекленсе кайнă. Айтăр-айтăр, пӳрте кĕрер.

Кăшт каласса ларсан Хĕветĕр илсе килнĕ пĕр çыххине салтрĕ те парнесем пама пуçларĕ: пиччĕшне — сăран кĕрĕк, инкĕшне — шашка çĕлĕкĕ.

— Ăçта кайăп-ши ку çĕлĕкпе, пирĕн кунта ун пеккине тăхăнмаççĕ.

Юнашарах виçĕ шăпăрлан пуçĕсем курăнчĕç.

— Сире, маттурсем, пилĕк метр драп пулĕ, кашнине пĕрер пальто тухать.

Хĕветĕр таврăннине илтсе, тăванĕсем пуçтарăнма пуçларĕç. Хĕветĕр кашнинех мĕн те пулин парнелерĕ. Кайран

ушкăнпа сĕтел хушшине ларчĕç. Вара çурçĕр иртичченех шавларĕ тăван-пĕтен.

Халлĕхе Ваçлей пиччĕшĕ патĕнчех юлчĕç Хĕветĕрпе Клавье. Тăвансенчен пурăнма чĕнекенсем татах пулчĕç, анчах тăван пиччĕшĕн кăмăлне хуçас темерĕç вĕсем.

Темиçе кунтан Хĕветĕр масар çине кайса килме шутларĕ. Ашшĕпе амăшĕ юнашарах выртаççĕ унта. Тăприсем куракпа витĕннĕ, хĕрес юписем çĕрсе чалăшнă. Мастерскойне кайса, тимĕр хĕрессем тутарма тивет.

Шутласа ларнă вăхăтра ашшĕ-амăшĕн пурнăçĕ аса килчĕ. Ашшĕ ĕçсĕр ларнине астумасть Хĕветĕр. Хĕл кунĕсенче иртен пуçласа мĕн каççчен мĕн те пулин тăватчĕ вăл. Е çăпата хуçатчĕ, е пире çатан çыхма вĕрентетчĕ. Амăшĕ алă усса ларнине те курман Хĕветĕр. Ир-ирех кăмака умĕнче кĕшĕлтетме пуçлатчĕ те ачисем çывăрма выртиччченех ура çинчеччĕ.

Уявсенче амăшĕ юрă ăстиччĕ, ĕçкĕ-çикĕсенче юрă пуçараканĕ яланах вăл пулнă. Ашшĕ вара ташă ăстиччĕ. Мĕн тĕрлĕ ура хуçса кăтартмастчĕ-ши, купăсçă халран каиччченех ташлама пултаратчĕ.

Ял çыннисем калаçнă тăрăх, ашшĕн тус-тантăшĕ пулнă имĕш. Вĕсем иккĕш те пĕр хĕре, Хĕветĕрĕн пулас амăшне, юратнă пулнă. Ашшĕ ăна тусĕн сăмси айĕнченех илсе кайма пултарнăшăн лешĕ ăна темиçе çул иртсен тавăрма шутланă, теççĕ. Пушар хыççăн чăнах те лешĕ ялтан çухалчĕ. Ăçта çӳрет-пурăнать, тăванĕсем те пĕлмеççĕ, тет.

Масар хыççăн Хĕветĕрĕн чунĕ лăпланчĕ, кăмăлĕ çĕкленчĕ. Мĕн ачаран алă усса çӳреме хăнăхмансккер, пиччĕшĕпе ĕç пирки калаçса илме шутларĕ.

— Ваçлей, председатель патне кайса килер пуль, ĕçе вырнаçма вăхăт пек.

— Канăр-ха кăштах, ĕçĕ тармĕ вăл, вилсен те виçĕ куна юлать, теççĕ те. Укçи çителĕклех пулĕ-ха?

— Укçа укçах вăл, паян пур та ыран çук, ĕçлемесĕр хутшăнмасть, ĕçсе-çисе яма вара хăвăрт пулать.

— Юрĕ эпппин, аллусем ĕçшĕн тунсăхлаççĕ пулсан, ыран ирех кайăпăр.

Ял арçынĕсем ир-ирех правление те мастерскойа турттăнни пурне те паллă ĕнтĕ. Ваçлейпе Хĕветĕр те правлени еннелле утрĕç. Вăл тахçан кулак пурăннă çуртра вырнаçнă. Çурчĕ, кивелмест те тейĕн, халь те çирĕп ларать.

Арçынсем чылайăн пухăннă, туртса тултарма та ĕлкĕрнĕ. Кăваккăн тăракан тĕтĕм халь-халь маччана çĕклессĕн

туйăнать. Хĕветĕр пурне те ал парса тухрĕ, хăйĕнни пекех çирĕп алăсем. Пĕр председателĕн çеç кăпăшка та нӳрĕрех ывăç тупанĕ.

— Ман пата-и?

— Çапла.

— Ирт эппин.

Вĕсем юнашар пӳлĕме кĕчĕç. Председатель сĕтелĕсĕр пуçне кунта бригадирпа бухгалтер сĕтелĕсем вырнаçнă. Бухгалтерĕ пĕр вăхăтрах учетчица та, кассир та. Çак пӳлĕмре ларакан çынсем, виççĕнех пысăк хуçалăха тытса пыраççĕ.

— Ну, Хĕветĕр, каласа пар, мĕнле унта аякри пурнăç? Атту эпир ниçта та тухса çӳреместпĕр те, пĕлместпĕр. Кунтах çĕре кĕретпĕр ĕнтĕ.

— Мĕн каласа памалли пур, ĕçлĕ çыншăн таçта та пурнăç пĕр пекех, эс çынсемпе мĕнле, вĕсем те санпа çавнашкалах. Çавах та тăван енрен хаклине ниçта та тупаймăн. Укçи те, пурлăхĕ те илĕртеймеççĕ. Урăхла шутлакансене ĕненместĕп эпĕ.

— Тĕрĕсех калатăн пулĕ эсĕ, Хĕветĕр. Эппин хуçалăхра шанăçлă çын пулăн, хăшпĕр çамрăксем пек хуласене йăкăртатмăн. Мĕн ĕçлес тетĕн-ха?

— Тракторпа ĕçлеме пултаратăп.

— Ку çителĕклĕ те. Заявлени çыр та паянах ĕçе пуçăнма пултаратăн, кĕр анисене сухалама вăхăт.

Хĕветĕр председатель пӳлĕмĕнчен тухнă тĕле арçынсем ĕçĕсене саланса пĕтнĕччĕ. Бригадир алăк патĕнче тăрать:

— Эп сана кĕтетĕп-ха, Хĕветĕр.

Вĕсем кантуртан тухрĕç. Хĕветĕр бригадир хыççăн утрĕ. Кĕçех вĕсем мастерской картишне çитрĕç. Ватса пĕтернĕ карта çумĕнче тăлăххăн пĕр трактор ларать. Урăх нимле техника та курăнмасть йĕри-тавра.

— Çак трактора юсатăн та, вăл санăн пулать, вара хăвах çӳреме пуçлăн унпа. Унсăрăн сенĕк тытăн та тислĕк тиеме тухăн.

— Ммда-а...— хыçса илчĕ ĕнсине Хĕветĕр.

Трактор тавра утса çаврăннă тĕле бригадир куçран çухалма ĕлкĕрнĕ те. Ытла та мĕскĕн курăнать трактор. Кабина кантăкĕсем пĕри те çук, ларкăч тимĕр пралуксенчен çеç тытăнса тăрать тейĕн, двигатель те, пĕр патрубок та юлман, топливо насусĕ çухалнă, сывăхра пĕр запас пай та курăнмасть. Çапла çав вăл ялта: трактор хуçасăр тăрса юлсанах самант йăкăртса пĕтереççĕ унăн деталĕсене.

Хĕветĕр шутласа тăчĕ-тăчĕ те мăлатук сасси илтĕнекен тимĕрçĕ лаççи еннелле утрĕ. Тахçанхи лаçах теççĕ ун пирки ваттисем. Вăл пĕве хĕрринче вырнаçнă. Ача чухне Хĕветĕр сахал мар вылянă ун таврашĕнче, пĕвене пулла çӳренĕ. Тимĕр лаççи ишĕлсе анас патне çитнĕ ĕнтĕ, çавах та ĕçлет. Хĕветĕр урамранах кăшкăрчĕ.

— Салам, Иван пичче! Вăй патăр!

— Ирт-ирт, Хĕветĕр, калаçса ларар.

— Кун пек тĕтĕмре ларайăн-и, мĕнле чăтатăн эсĕ?

— Эп хăнăхнă.

Тĕтĕм ăшĕнчен хуралса пĕтнĕ Иван тухрĕ. Лутра кĕлеткеллĕскерне тимĕрçĕ тесе калама хĕн. Анчах хăй çирĕп шăм-шаклă, аллисем çинче юн тымарĕсем мăкăрăлса тăраççĕ. Ун пек ăста тимĕрçе сахал тĕл пулан пурнăçра, аллинчи мăлатукĕ выляса тăрать кăна, мĕн тĕрлĕ ӳкерчĕк эрешлемест пулĕ тимĕртен.

— Мĕн пĕчченех шаккатăн, меллĕ мар пулĕ пĕччене?

— Нимĕн те тăваймăн, председатель çын уйăрса памасть, хăть эс те пулин кил ман пата.

— Çук, пултараймастăп, мана трактор пачĕç, анчах çаврăнса та пăхас килмест вăл тимĕр-тăмăр çине.

— Аван тракторччĕ, Аркаш ĕçлетчĕ унпа. Чунлă çынччĕ, анчах мăшăрĕ çамрăк чухнехи пĕрремĕш юратăвĕпе аташмаллах çыхланса кайрĕ те ĕçке ерчĕ тракторист, вара ӳсĕрле гусеница айне лексе вилчĕ. Тракторĕ халĕ те унтах ларать. Унпа ĕçлес текенсем тупăнмарĕç.

— Эппин, мана пĕлменрен тĕртсе пачĕç.

— Тӳрех ан хуç-ха кăмăлна, Хĕветĕр, Васлей пиччупа канашласа ил, шывне-йĕрне пĕлсе каять вăл.

— Тавтапуç сана, Иван пичче, чуна кăштах лăплантарнăшăн.

Вăл кил еннелле утрĕ. Çурчĕ пиччĕшĕн ял варринче ларать, çӳллĕ те ултă кĕтеслĕ вăл. Чĕнтĕрленĕ вырăс хапха. Хăй эрешленĕ ĕнтĕ — ашшĕ вĕрентсе хăварни усăсăр пулман. Тĕрĕссипе, чăвашра ялти кашни арçын пуртă-çава тытма пултаракан ăста. Анчах кашнин хăйĕн алли, хăйĕн мелĕ, хăйĕн фантазийĕ. Мĕн тĕрлĕ эрешлемеççĕ пулĕ хапхисене, çурт чӳречисене, умĕсене, тăррисене! Кашнинченех куç илме çук.

Хĕветĕр хапхаран кĕнĕ чухне Васлей пиччĕшĕ килкартинче кĕтӳрен кĕнĕ выльăх-чĕрлĕхпе аппаланатччĕ.

— Мĕн эс, шăллăм, ăмăр пĕлĕт пек тĕксĕм?

— Васлей, кала-ха пĕр пытармасăр, пултарайăп-ши эпĕ çав трактора пуçтарма?

— Ĕçлесех тесен, пуçтарайăн.

— Эп пĕр шӳтсĕр ыйтатăп, пичче.

— Манăн та шӳтлес шухăш çук.

— Эппин, пулăш мана, тархасшăн.

— Ма пулăшас мар. Ав, мĕншĕн пуçна уснă эсĕ. Ак, ĕç пĕтерĕп те, калаçăпăр.

Пиччĕшĕн ĕçне хăвăртлатма Хĕветĕр те сенĕк тытрĕ. Кĕçех ĕç вĕçленчĕ те.

— Халь итле. Кĕçĕрех юлташсемпе курса калаçăп та хăш пайĕ кам патĕнче пулнине пĕлсе килĕп.

Чăнах та, тепĕр ирччен трактор пайĕсем вырăна пырса выртнă. Хĕветĕр кашни детальне салтса, солярккăпа çуса, çупа сĕрсе вырăна лартрĕ. Кăлтăксене юсаттарчĕ. Эрнерен хута ячĕ те.

Кĕрхи уйсене пĕтĕм кăмăлран сухаларĕ вăл. Хăй тунă ĕç савăнтарчĕ ăна. Кĕрхи ылтăн çанталăк та, хуркайăксен картисем те чуна уçса тăчĕç. Çак кунсенче хăйне çĕр хуçиĕ пек туйрĕ Хĕветĕр.

Ĕçсене вĕçлесен тракторне машина паркне лартрĕ Хĕветĕр. Ăна çаратасран тек шикленмерĕ вăл. Çынна ун ĕçĕпе хаклаççĕ ялта. Хĕветĕрĕн пысăк ĕçĕ куçкĕрет. Бригадир та, ав, ырласа кĕтсе илчĕ:

— Аван ĕçлерĕн эс, Хĕветĕр, халь канма та намăс мар. Кирлĕ пулсан, пĕлтерĕпĕр.

— Уншăн та тавах.

Хăйсем çинчен шутлама та вăхăт Хĕветĕрĕн. Юлашки вăхăтра Клавье, тем, ытла та пусăрăнчăк кăмăлпа çӳрет. Пĕчченех выльăх апачĕ пĕçерекенскер, паян та сӳрĕккĕн кĕтсе илчĕ упăшкине. Ăна курсан чашăк-тирĕке юриех хыттăн шăкăртаттарчĕ. Мăшăрĕ чĕнменнине кура чăтаймасăр йĕрсе ячĕ:

— Хăçанччен тарçăра ĕçлемелле ман ют килте?!

— Кирлĕ мара ан калаç-ха эс, Клавье. Эпир кунта килти пек пурăнатпăр вĕт.

— Ман хамăн кĕтесре пурăнас килет. Сана хĕтĕртсе тăмасан, эс пĕр утăм та тумастăн. Ыранах çурт лартма çĕр ыйт председательтен. Тăван пиччу пулсан та, ĕмĕр пурăнаймăн кунта, ытлашши эпир вĕсемшĕн.

— Эс шутла-ха, Клавье, кам пире тӳрех çĕр парĕ, кăштах кĕтме тивет.

— Ман кĕтес чăтăм çук. Председатель патне каясшăн

мар пулсан, айта, райцентрта çурт илер. Çурт суйламалăх укçа çителĕклĕ пирĕн. Ялтан та инçех мар. Хăнана çӳрĕпĕр пĕр-пĕрин патне.

— Эс лăплан-ха, тархасшăн.

Хĕветĕр Клавьене ыталарĕ те чуп туса илчĕ.

— Пурте йĕркеллех пулать, Клавье.

Клавье ăшра кулса илчĕ — çавах та упăшкине хускатма пултарчĕ-çке.

— Пĕлетĕн-и, Хĕветĕр, кичем мана, кунĕ-кунĕпе пĕччен те пĕччен. Эс кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек уйра. Ывăнса килетĕн те пĕр сăмахсăр кĕрсе выртатăн. Улшăнтăм пулмалла, сивĕнсе пыратăн манран. Çĕпĕрте яланах пĕрле пулнă эпир.

— Ан сӳпĕлтет ытлашши, эп ĕçре пулнине курса-пĕлсе тăратăн вĕт.

Тепĕр кунне ирпе ирех вăратрĕ Клавье Хĕветĕре. Чышкипе тĕке-тĕке аяккине кăвакартса та пĕтерчĕ пулĕ.

— Мĕн выртан, чуп хăвăртрах.

— Ан васкат, нарядсем парса пĕтертĕр-ха.

— Мĕн калаçан эс, Хĕветĕр, халь ĕлкĕреймесен кунĕпе кĕтсе илейместĕн ăна.

— Юрĕ-çке.

Правление вăл чупса-чупса тенĕ пек пашкаса çитрĕ. Председателе алăкра тĕл пулчĕ, кăшт çеç çамкисемпе çапăнмарĕç.

— Эп сирĕн пата!

— Ирт, лар, сывлăшна çавăрса ил. Мĕн сиксе тухрĕ çавăн пекех васкамалли?

— Çурт лартма çĕр пиркиччĕ те...

— Эпир çĕрне ытлашшиех парса кайман.

— Апла мĕн тумалла-ши пирĕн?

— Сирех пама юрать пуль тетĕп, ял çынни пулнине эс ĕçпе кăтартрăн, çитменнине — тракторист. Эс сухаланă анасене пăхса çӳрерĕм те, кăмăла кайрĕç, тикĕс сухаланă. Сан ыйтăвна правленин çитес ларăвĕнчех тăратăпăр, пурте килĕшĕç тесе шутлатăп. Халь вара ял вĕçне çĕр пăхма кайма пултаран. Хăш енне суйласа илен, çав вырăн санăн пулĕ.

— Тавтапуçах сире, ĕмĕр манмăпăр ырă кăмăлăршăн.

— Юрĕ-çке, юрĕ... Хучĕсене вара пуху хыççăн майлăпăр.

Хĕветĕрпе Клавье çав кунах ял вĕçне çитрĕç. Пĕр енче айлăмлăрах вырăн лаптăкĕ, тепĕр енче колхозăн тикĕс уйĕ тăсăлать.

— Çак енне суйласа илĕпĕр, Хĕветĕр,— терĕ Клавье, тикĕс уй çине кăтартса.

— Мана, Клавье, айлăм енĕ килĕшет, купăста лартма пулать, пĕве те, ав, çывăхрах, пахчаçимĕç шăварма меллĕ.

— Мĕн ăнланан-ши эс, Хĕветĕр, тӳрĕ вырăна ним те çитес çук. Пахчине шăварма çăл та алтма пулать.

— Санпа тупăшиччен тупăшманни, çавах хăваннех илетĕн,— килĕшнĕ ятне турĕ Хĕветĕр, çавах та ăшĕнче кăмăлсăр юлчĕ.

Çав вăхăтра савăнăçлă мăшăр хĕрринчи пахчаран пĕр мăнтăртарах хĕрарăм карта хушăкĕпе вĕсене сăнаса тăнине асăрхарĕ. Хăйне асăрханине лешĕ туйрĕ.

— Мĕн кирлĕ сире кунта?

— Сирĕн пускил пулас тетпĕр-ха.

— Ытла та хăвăрт-çке, килме ĕлкĕреймен, çĕр пар вĕсене. Çынсем темиçе çул кĕтеççĕ.

— Каяр кунтан, Клавье.

Хветле ятлă мăнтăртарах хĕрарăм вĕсене сиввĕн пăхса ăсатрĕ.

— Асту, Клавье, ку пускиле ху суйласа илтĕн.

— Темех мар, çемçелĕ-ха, тен, туслашăпăр та-и. Çапах та çурт вырăнĕ лайăх.

Ăçта çĕр суйласа илнине Хĕветĕр пиччĕшне савăнăçлăн каласа пачĕ.

— Пускилпе савăнмалли çук вара, ял çыннисем унран пăрăнса çӳреççĕ. Тепĕр енче суйламалла пулман-им?

— Эп те Клавьене çавнах каларăм.

— Мĕн хĕрарăмла калаçатăр.

— Юрĕ-çке, сирĕн пурăнмалла, эп ырă çеç сунасшăн шăллăма.

Васлей килте пĕçернĕ çавра çăкăр, шăрттан кăларчĕ, нӳхрепрен сăра ăсса кĕчĕ, тĕпсакайĕнчен эрех хăпартрĕ.

— Айта, шăллăм, сирĕн çĕнĕ пурнăçшăн кăштах сыпар.

— Эп хирĕç мар.

Пӳрте фермăри касхи сăвăмран таврăннă Юля кĕчĕ, сĕтел çине кăмăлсăррăн пăхса илчĕ.

— Çитет пуль, Васлей, сыпса, вăл таврăннине палăртни çитмест-им?

— Ан мăкăртат-ха эс, кăвакарчăнăм, шăллăма çĕр панă.

— Çапла каламалла та тӳрех, атту нервăсемпе вылятăн,— кăмăлĕ çемçелнине тăруках палăртас мар тесе, тултанах çуса кĕнĕ резина аттисене лартма кăмака хыçне кĕчĕ. Унтанах сас пачĕ:

— Юрĕ-çке, ку сăлтавшăн сыпма та çылăх мар.

Савăнăçлă икĕ çемье чылай калаçса ларчĕ тулли сĕтел хушшинче, малашлăх планĕсене турĕ. Юрă та янăрарĕ юлашкинчен.

Ир ирех тухса утрĕç Васлейпе Хĕветĕр район центрне. Йывăçне пĕр чăрмавсăрах çыртарса илчĕç. Ку ĕçре Васлей авторитечĕ пулăшрĕ пулмалла, пуш алăпа тухманни те усăллă пулчĕ. Хатĕр хутсемпе лесник патне кăнтăр иртсен çитрĕç. Хутсене лесник вăраххăн вуларĕ, темиçе хутчен çавăркаласа пăхрĕ.

— Делянкине сире ăçта уйăрса парас?

— Унччен кăштах калаçар мар-и? — сĕнчĕ Васлей, аллинчи мăкăрăлса тăракан сумккине кăтартса.

— Вăт ку урăх сăмах,— терĕ лесник хавхалануллăн.— Анчах малтан ĕçне тăвар-ха. Сире çывăхра уйăрса парăп делянкине, йывăçĕсем те унта тӳрĕреххисем, пĕр пеккисем, сăмалисене те юхтарман. Çул хĕрринчех.

Лесник йывăçсене пуртăпа çырса хучĕ. Ĕçĕ вĕçленсен Васлей лесникран ыйтрĕ.

— Аялти рет валли юмансем пулмĕç-ши?

— Э-э, уншăн уйрăм тӳлемелле.

— Пĕр сăмахсăр.

— Айтăр эппин

Вăрман хĕрринчен инçех мар лесник тăватă кĕреш юман суйласа пачĕ.

— Кусем сирĕн. Çакăнпа ĕçе тăрлар пуль.

Пусламăш ĕç ăнăçлă вĕçленнипе савăннă пиччĕшпе шăллĕ киле кăмăллă таврăнчĕç.

— Васлей, ниепле те ăнланаймастăп, мĕншĕн пурнăç кайрĕ пирĕн, кашни ниме тăман ĕçшĕн укçа тĕрт е эрех ларт.

— Ăçтан пĕлем, шутламан ун пирки. Çынсем мĕнле, эп те çавăн пек.

— Ак, юмансемшĕн тӳленĕ укçана та кĕсйине чикĕ лесник.

— Уншăнах пуçна ан ват, сана юман пултăр. Ытти пирĕн ĕç мар.

— Вăт-вăт, çавнашкала тухрăмăр çав эпир: хăв ĕçна тăвас пултăр, ытти сан ĕç мар.

— Пирĕнтен килмест ку, шăллăм, çĕршывĕпех çавнашкал. Халь кашни хăй пĕлнĕ пек пурăнма ирĕклĕ.

Хĕветĕр йывăç çыртарса илнине пĕлсен, арçынсем хăйсемех пухăнчĕç Васлейсен умне, кама чĕнме пулать-ши

тесе пуҫа ватма та кирлӗ пулмарӗ. Председатель те трактор пама килӗшрӗ. Хӗветӗр хӗпӗртенипе ниҫта кайса кӗме пӗлмерӗ, арҫынсене сивӗ лаҫҫа чӗнсе кӗрсе ҫӑмӑллӑн хӑналарӗ. Кунтах ыран вӑрман касма каяс пирки калаҫса татӑлчӗҫ.

Ирхине трактортан улӑм сарнӑ ҫуна ҫаклатса вӑрмана васкарӗҫ. Тепӗр икӗ сехетрен ҫитрӗҫ те пӗр тӑхтамасӑр ӗҫе пуҫӑнчӗҫ. Ҫуна пӗренесемпе тулсан кил еннелле ҫул тытрӗҫ. Пӗренесене ял пуҫӗнче, ҫурт пулас вырӑнта, пушатрӗҫ. Каҫхи апата Ваҫлейсем патӗнче ирттерчӗҫ. Кунӗпе ӗҫленӗшӗн Хӗветӗр ҫынсене укҫа сӗне-сӗне пӑхрӗ, анчах пӗри те илекен пулмарӗ, пурте Хӗветӗр ҫине тӗлӗнерех пӑхрӗҫ. Ун вырӑнне Ваҫлей ывӑннӑ арҫынсене сӗтел ҫинче мӗн пуррипе хӑналама тӑрӑшрӗ. Хӗветӗршӗн тӗлӗнмелли татах тупӑнчӗ: арҫынсем темшӗн ҫутти вырӑнне сӑмакун кӑмӑлларҫҫӗ.

— Ваҫлей, арҫынсем мӗншӗн ҫуттине ӗҫмеҫҫӗ?

— Кунта килти эрехе хӑнӑхнӑ, ӑна таса тырӑран юхтараҫҫӗ, патшалӑх эрехӗнчен пӗртте кая мар вӑл. Ҫитменнине заводра унта эрехе известкӑпа тасатаҫҫӗ тет. Эс ан кулян, кунтине пасара кайса илӗпӗр.

— Эс тӗрӗсех калатӑн пулӗ, ку аван. Анчах кунсӑр пуҫне арҫынсене мӗнле парӑмпа тивӗҫтерес?

— Ют ҫынсем мар вӗт, хамӑр ялсем.

— Тен, вутӑ парас, йывӑҫсене тасатнӑ хыҫҫӑн ҫавах чылай юлать.

— Хӑвӑнне ху пӗл. Айта ҫывӑрар, куҫ тахҫанах хупӑнать.

— Юрӗ, курӑпӑр унта.

Вӑрманта ӗҫленӗ ҫынсене кашниех вутӑпа тивӗҫтерчӗ Хӗветӗр. Хӑех турттарса килсе пачӗ. Ҫыннисем йышӑнасшӑн пулмарӗҫ. Вара Хӗветӗр хӑех хапхасем умне пушатапушата хӑварчӗ. Хӑйсем хыҫҫӑн вӑрманта пӗр каснӑ турат та хӑвармарӗ Хӗветӗр. Ку таранччен ун пеккине курман лесник та тӗлӗнсе савӑнчӗ:

— Ай, маттурсем, пӗр турат та хӑварман, пуҫтарса ҫунтарма та кирлӗ мар. Ай маттур та эс, йӗкӗт,— хӑй Хӗветӗр ҫине тархасланӑн та ҫӑткӑнӑн пӑхрӗ. Хӗветӗр пӗр сӑмах та шарламарӗ, тракторне тапратрӗ те юлашки лавпа яла таврӑнчӗ.

Кӗҫех ял платникӗсем пура лартма тытӑнчӗҫ. Пӗр май пӳрт валли кӑна мар, мунчапа вите валли те хатӗрлерӗҫ. Ун хыҫҫӑн пурасем тӑхӑр уйӑх типсе ларчӗҫ.

Ч-41185



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА

Тĕштырă пуçтарса кĕртнĕ тĕле мăклама шутларĕ Хĕветĕр çуртне. Ак, колхоз уйри ĕçсене вĕçлерĕ теме те пулать. Пахчисенче çĕрулми, купăста, кăшман таврашĕсем çеç юлнă. Çав тапхăрти пĕр канмалли кун нимене пуçтарăнчĕ халăх Хĕветĕр патне. Ĕç вĕресе тăрать. Васлей ятарласа така пусрĕ. Така хуранĕнче какай шӳрпи пиçет. Ялта выльăх-чĕрлĕхе тирпейлекен специалист Михала хăйĕн ĕçне вĕçленĕ хыççăн пĕрене çинче канса ларать. Вăл анекдотсем калама юратнине пурте пĕлеççĕ, çавăнпа ун тавра хăшпĕр ĕçсĕр çынсем пухăннă. Лешĕ, сыпма ĕлкĕрнĕскер, хавас сăмах ваклама:

— Итлĕр, çĕнĕ анекдот каласа парам сире. Никита Сергеевич пĕррехинче машинăпа ларса пырать, çул хĕрринче пĕр çын утă çулнине курать: «Эй, хресчен, çавана тепĕр енчен те туптасан, икĕ еннелле те çулма пултаратăн вĕт»,— тет. Тепринче çав çынах кĕреплепе утă пуçтарать. Каллех Никита Сергеевич иртсе пырать: «Эй, хресчен,— тет вăл,— хыçал енчен тепĕр кĕрепле çаксан, икĕ хут хăвăртрах пуçтарнă пулăттăн утта!» Виççĕмĕшĕнче çав çынах уйра çĕрулми кăларать. Каллех Никита Сергеевич иртсе пырать. Ăна асăрханă çын кĕреçине пăрахать те тарма пикенет. Никита Сергеевич машинипе хăваласа çитет те ыйтать: «Эс мĕншĕн таратăн?» — тет. Хресчен калать: «Эсир, Никита Сергеевич, ман çамка çине шахтерсен хунарне çакма хушса çĕрле те ĕçлеттересрен шикленсе тартăм»,— тет.

Мишша тавра пуçтарăннă халăх лăх-лăх кулать. Ун халапне пăхмасăрах ĕç вĕресе тăрать. Кăнтăрла тĕлне пурана мăкларĕç те. Юлашки йĕркене хунă хыççăн кăнтăр апатне ларчĕç. Хĕвел аннă тĕле çурт шуç тимĕрпе витĕнчĕ. Ваттисен йăлипе пӳрте Хĕветĕрпе Клавье кушак йăтса кĕчĕç, анчах лешĕ темшĕн, пӳрте кĕрес вырăнне, урасем хушшипе тухса тарчĕ.

— Ку ырра мар,— терĕ пĕр карчăк.

— Юрĕ-çке сана хăвăн тĕшмĕшӳпе,— терĕ тепри.

Хĕрĕннĕ Мишша хуткупăс туртса ячĕ. Çур минут каялла мĕн пулса иртнине пурте манма тăрăшрĕç. Шутлама та вăхăт пулмарĕ, мĕншĕн тесен таврана тирĕксене антарнă шӳрпе шăрши сарăлчĕ. Кунĕпе тар тăкса ĕçленĕ çынна мĕн кирлĕ унтан ытла? Тен, аншарлийĕ? Ăна çителĕклĕ илнĕ Хĕветĕр пасарта. Çĕрĕпе шавларĕ ниме халăхĕ çĕнĕ çурт килкартинче: ĕçрĕ, çирĕ, юрларĕ, ташларĕ. Ир енне

çеç шăпланчĕ ял вĕçĕ Хĕветĕрпе Клавьешĕн савăнăçлă çав каçра.

Уйрăмах Клавьешĕн савăк пулчĕ çак ирĕклĕ самант. Хĕветĕре мĕн ăна, пиччĕшĕ патĕнче пурăннă пулин те, хăйне тăван килте пек туйнă ашшĕ-амăшĕн пӳрчĕ вырăнĕнче лартнă çуртра. Клавье вара мĕн-мĕн кăна шутламан пулĕ хăй ăшĕнче, мĕн чухлĕ асаплантарман пулĕ кăлăхах чунне. Халь, акă, вĕсен хăйсен кĕтесĕ, халь, ак, вăл ирĕклĕ, мĕн тăвас тет, çавна тума пултарать, тата никамран ыйтмасăрах. Ах ирĕк, ирĕк! Çын патĕнче пурăнса курнă мĕнле чуна илĕртмест пулĕ вăл?

Çĕнĕ çурта куççан урăх шухăш канăç памарĕ Клавьене: ăçта, мĕнле кĕтесе чиксе хумалла ку таранччен салтмасăр усранă çыхăри ылттăна? Салтса япаласене кăларсан вăл та сиксе тухать вĕт. Хĕветĕр ĕçре чухне миçе саврăнмарĕ пулĕ вăл çĕнĕ пӳртре хăйĕн тупри валли вăрттăн вырăн шыраса. Ăнсăртран кĕтесри турăш умĕнче чарăнса тăчĕ. Ку турăшне хăй качча тухнă чухне амăшĕ парнеленĕччĕ. Акă ăçта меллĕ вырăн, алă айĕнчех, е куç умĕнчех, анчах никам та чухлас-пĕлес çук. Клавье сăх сăхса турăша илчĕ те хыçал енне уççа меллĕ вырнаçтарчĕ миçе хутчен ĕнтĕ сехре хăптарнă, халлĕхе усăсăр выртакан паха пурлăха. Тинех чунĕ лăпланчĕ хĕрарăмăн. Лаш сывларĕ вăл çăмăллăн лăпкăн пăхса ларакан турăша вырăнне вырнаçтарса. Хăйĕн вăрттăн ĕçĕпе сылăха кĕрсе турăша кӳрентерме пултарни çинчен шутламарĕ те вăл çавăн чухне. Ара, ĕненсех кайман та туррине, ваттисенчен юлнă йăлапа ячĕшĕн çеç тытнă турăшсене.

Тепĕр тăхăр уйăхран ача çуралчĕ вĕсен. Çуратасси ăнăçлах пулмарĕ: хырăм ӳтне касса кăларма тиврĕ хăй вырăнĕнчен тухайман ачана. Çапах та сывă çуралчĕ вăл, тата ывăл пулчĕ. Ку мăшăра савăнтарчĕ. Аслашшĕне асра тытса Лекçей тесе ят пачĕç ăна. Çавăн хыççăн урăх пĕр ача та çуратмарĕ Клавье.

Унтанпа çирĕм çул иртрĕ. Лекçей те, ак, салтакран таврăнма ĕлкĕрчĕ. Анчах ялта кичем ăна пĕччене. Тустантăшĕсем е район центрĕнче, е Шупашкарта вырнаççа пĕтрĕç. Тус-тантăшсем çеç-и? Аслăраххисем те, кĕçĕнреххисем те шкул пĕтерсенех ялтан туха-туха кайма тăрăшаççĕ. Ял пушанса, кичемленса юлать. Кĕçех ял урамĕсенче пĕренесем çине тухса ларакан ватăсем çеç юлчĕç. Ытларах вĕсем савăк Мишша килĕ умĕнче пуçтарăнса лараççĕ.

Пĕррехинче вĕсем урампа иртсе пыракан Лекçее тытса чарчĕç.

— Мĕн эс, Лекçей, пĕчченех çӳретĕн?

— Ара, эсир ачăрсене хăвăр вĕт хуласене ярса пĕтерне.

— Пирĕн ачасен те ĕмĕрĕпе колхозра нушаланса çирĕм сакăр тенкĕ пенси илмелле тет-и? Луччă хулара пурăнччăр. Унта сакăр сехет ĕçлеççĕ те — ирĕклĕ, хăть ăçта кай, е канса вырт. Укçине те тӳлеççĕ, кайран пенсийĕ те пысăк. Ухмаха ан пер, тар хăвăртрах хулана.

— Çук, ман ялтах пурăнас килет.

— Паллах, сан аçу-аннӳ Çĕпĕртен чылай укçа илсе килнĕ. Эсир чи пуяннисем ялта.

— Ĕçĕ унта мар вĕт.

Лекçей аллине сулчĕ те кил еннелле утрĕ. Савăк Михала ахăлтатса кулса юлчĕ. Килтисем кашни хăйĕн ĕçне тăватчĕç: амăшĕ газ плити умĕнче кăштăртататчĕ, ашшĕ çатан çыхатчĕ.

— Ывăлăм, хулана каясах темесен, лар ман трактор çине, ют алла парас килмест.

— Ан хăйнă пултăр! Аçу пек ĕмĕрĕпех мазутпа çăрăлас тетĕн-и? Район центрне кай хăть, çурт илсе парăпăр. Халь йӳнĕ хакпах сутакансем чылай. Авланăн та лăпкă пурăнăн. Ним ырри те çук ялта. Мĕн тупрăм эп фермăра ĕçлесе? Урасем пĕр вĕçĕм сураççĕ, тулли витре йăтайми пултăм, çĕçĕ алăран тухса ӳкет. Шăмшак ыратнипе çывăрайми пултăм.

— Мĕн эсир калаçса татăлнă-им ял халăхĕпе? Райцентр! Хула! Ниçта та каяс килмест ман ялтан!

— Хăвăнне пĕл эппин, ывăлăм.

Хĕветĕр кунĕпе тăвата хутчен турттарса килчĕ йывăç вăрмантан. Колхоз çĕнĕ вите тума тытăннă фермăра. Киле кайма пуçтарăннăччĕ çеç, председатель чупса çитрĕ.

— Хĕветĕр, тархасшăн, тепĕр рейс ту-ха, мăй таран кирлĕ йывăçĕ.

— Кирлĕ-тĕк кирлĕ, мĕн калаçмалли пур.

— Тиекенсем кĕтеççĕ унта, эп асăрхаттарнă.

Чăнах та, хăвăрт тиерĕç лешсем йывăçа. Унтан машина çине ларчĕç те вĕçтерчĕç ялалла. Тусан çеç çĕкленсе юлчĕ вĕсем хыççăн.

Пĕччен тăрса юлчĕ Хĕветĕр хăйĕн тракторĕпе. Вăрманта тĕттĕмленсе килчĕ. Хĕветĕр ывăннине туйса илчĕ, çывăрас килсе кайрĕ. Ку туйăма вăйпа сирсе вăл асаилĕве

путрĕ. Çакăнта вăл çурт валли вăрман каснă, кайран кил-çурт çавăрнă. Шутласан, çирĕм çул ытла телейлĕ пурăнаç-çĕ вĕсем çав кил-çуртра. Мăшăрĕпе ывăлĕ кĕтсе те ывăн чĕç пулĕ унсăр касхи апата лармасăр. Лесник аса килчĕ пуçа. Хĕветĕр ун пирки ним усаллине те калас çук, анчах сынсем тĕрлĕрен калаçаççĕ, чылай çынна улталаса ма-кăртнă теççĕ. Çăткăнлăхĕ Хĕветĕре те курăннăччĕ-ха. Ан-чах йывăçĕ кирлĕрех пулнă ун чухне, çавăнпа укçине шел-лемен, сĕрнĕ лесник аллине. Хăшĕ-пĕри чăтайман, ав, ун çăткăнла мăшкăлне: шăмми-шаккине, сумккипе карттусне çеç тупнă вăрман варринче. Кашкăрсем çурса тăкнă теççĕ пĕрисем. Çук, вĕлернĕ ăна, теççĕ теприсем. Ĕненсе пĕтер çынсене. Хăть мĕн калаччăр те, çынни çук тек çут тĕнчере.

Тĕрлĕ шухăшсемпе арпашăнса трактор переездра ча-рăнса ларнине тăруках асăрхамарĕ Хĕветĕр. Тен, тĕлĕрес патне те çитнĕ-и? Хĕветĕр хăвăрт сиксе анчĕ те пускача чĕртме пикенчĕ. Лешĕ чăхăмларĕ тем. Инкеке, стрелочник пырса тухрĕ.

— Çула ан хупла эс, кĕçех тавар пуйăсĕ çитмелле.

— Халех, ĕлкĕретĕп.

Пускач бензинĕ юхса тухнă имĕш. Хĕветĕр ларкăч хы-çĕнчен канистра туртса кăларчĕ те бензина пускач бачок-не ячĕ. Будкинчен каллех стрелочник сиксе тухрĕ.

— Мĕн эс, ухмаха ермен пулĕ те? Ав пуйăс сасси ил-тĕнет те!

— Кай кунтан, ан чăрмантар, хамах чухлатăп!

Тепловоз çутти курăнса кайрĕ, гудок сасси илтĕнчĕ.

— Пăрах тракторна, ухмах, тарар хăвăртрах!

Стрелочник чукун çулран мулкач пек тапса сикрĕ. Хĕ-ветĕр пускач туртрĕ те, лешĕ çавăнтах чĕрĕлчĕ. Тракторист хăвăрт кабинăна сиксе хăпарчĕ, рычагсене туртрĕ. Трактор вырăнтан тапранчĕ. Анчах вирхĕнсе килекен пуйăса ма-шинист чараймарĕ, тепловоз прицепа çаклатса тракторĕпе пĕрлех пĕр вунă метр ытларах сĕтĕрсе кайрĕ, унтан çул айккине вăркăнтарса хăварчĕ.

Хĕветĕрĕн питне-куçне, ӳт-пĕвне палламалла мар му-таласа пĕтернĕ. Тупăка хунă чухне питне виткĕчпе хупла-рĕç, унсăрăн пăхма хăрушăччĕ. Пытарма пĕтĕм ял пухăн-чĕ. Пытарса килсен, халăх йăлипе сĕтел хушшинче асăннă хыççăн, çынсем пĕрерĕн-пĕрерĕн е ушкăн-ушкăнпа килĕсе-не саланса пĕтрĕç. Пускил хĕрарăмĕ Хветле çеç тем ты-тăнса юлнă. Вăл та пулин, акă, алăк еннелле утрĕ. Тарăн шухăша путнă хуйхăллă Клавье çакна асăрхаман та пулĕ.

Пурте тухса кайса пӗтрӗç терӗ пулмалла та ывӑлне хӑй патне чӗнчӗ:

— Лекçей, кил-ха кунта, ман сана каламалли пур. Тен, эп те аçу пек ӑнсӑртран вилӗп-и, пӗлтерсе хӑварам-ха унччен. Манӑн ылтӑн пур, ывӑлӑм, пирӗнни пек хуçалӑх виççӗ те çавӑрма çитет. Çавна кӑтартмалла ман сана.

— Кӗçӗр мар, анне, тепринче.

Те тухса кайма ӗлкӗреймен, те юри уçса хӑварнӑ алӑк хыçӗнче итлесе тӑнӑ вӑл, анчах Хветле çак сӑмахсене илтнӗ пулнӑ. Çавӑн хыççӑн канӑçне çухатрӗ вӑл, пускилсен çурчӗ хӑçан хуçисемсӗр пуласса кӗтсе сыхласа пурӑнчӗ. Уйӑх хушшинче чылаях начарланчӗ вӑл, кӗлетки йӑрӑланчӗ унӑн. Çитес вырсарни кун Клавьепе Лекçей пасара кайма пуçтарӑнаççӗ тени кӗчӗ ун хӑлхине. Çав куна чӑтӑмсӑррӑн кӗтрӗ вӑл. Лешсем хапха алӑкне кантрапа çыхса тухса кайнине курсанах, пахча енчи алӑкпа пускиле каçрӗ. Ӑçта кӑна шырамарӗ пуль вӑл ылтӑна: килкартинче те, витере те, лаçра та, нӳхрепре те, çӑл хупӑлчине те уçса пӑхрӗ — ниçта та тупаймарӗ. Унтан çенӗкре шырарӗ, пӑлтӑра кӗчӗ, маччана хӑпарчӗ — ылтӑн çук та çук. Хӑшкӑлнипе шыв ӗçес тесе, пӳрте кӗчӗ, чӑланти витререн пӗр курка шыв ӑсса илчӗ те ӗçме пикенчӗ. Çав вӑхӑтра ӑна ун çине витӗрӗн пӑхакан турӑш курӑнса кайрӗ. Хветле чутах куркине урайне ӳкеретчӗ, малтан намӑс пулса кайрӗ ӑна, кайран пуçа шухӑш пырса кӗчӗ: «Ак ӑçта пулма пултарать ылтӑн!» Вӑл куркана шыв витрине печӗ те турӑш кӗтессине чупса пычӗ. Чӗтрекен аллисемпе турӑша илме пикенчӗ. Лешӗ палӑрмаллах йывӑр имӗш. Хумханнипе Хветле сисмен те çав вӑхӑтра пӳрт алӑкӗ уçӑлнине тата кил хуçи Клавье кӗрсе тӑнине.

— Мӗн тӑватӑн эс кунта, Хветле, кӑнтӑр кунӗнчех çаратма шутларӑн-и? Мӗнле намӑс мар сана? Ларт вырӑна турӑша! — Клавье пускил хӗрарӑмӗ патне чупса пычӗ, турӑша туртса илме пикенчӗ, анчах лешӗ те ӑна хӑй еннелле туртрӗ. Чӑн-чӑн çапӑçу пуçланчӗ вара, çӳçрен те туртрӗç пӗр-пӗрне, питрен те çапрӗç. Халран кайрӗç кӗрешсе. Хветле аллине темлерен-çке йӗтӗр лекрӗ. Вӑл унпа Клавье пуçне пӗтӗм вӑйран туртса çапрӗ. Кил хуçи хӗрарӑмӗ турӑша вӗçертсе куклене-куклене анчӗ те каснӑ йывӑç пек палт кайса ӳкрӗ. Ылтӑнсӑр пуççӑр ним çинчен те шутламан Хветле турӑш хыçӗнчи ылтӑна арки çине пушатрӗ те хӑвӑртрах тухса шурӗ.

Лекçей киле таврӑннӑ тӗле килкартинче выçӑ сысна

хăлхана çурмалла çухăратчĕ. «Ăçта вара анне?» — шутларĕ Лекçей. Хăвăрт пӳрте чупса кĕчĕ те шак хытса тăчĕ алăк умĕнче: амăшĕ урай варринче аллисене сарса выртать, уçăлнăрах тути чалăшнă, шурă куçĕсем сиввĕн маччана пăхаççĕ. Лекçейĕн çӳçĕсем вирелле тăчĕç, ӳчĕ сăрлатса илчĕ. Вăл амăшĕ патне чупса пычĕ, юн тымарне тĕрĕслерĕ, пурнăç паллине тупмарĕ. Вара амăшĕн куçĕсене хупрĕ, тутине пăчăртама пикенчĕ.

Вилене район центрне илсе кайрĕç. Клавьене пуçран çапса вĕлернĕ терĕç тухтăрсем, ӳчĕ çинче кăвак вырăнсем пуррине пĕлтерчĕç. Яла следователь килсе çитрĕ. Анчах çынсем ытлашшиех калаçасшăн пулмарĕç, пăрăнма тăрăшрĕç унран, сăлтавсăрах килтен туха-туха утакансем те тупăнчĕç. Аякраракхри пускилсемпе калаçса следователь юлашкинчен Хветле патне кĕчĕ. Кил хуçи, ним пулман пекех, лăпкă ларать.

— Кĕр, кĕр, çамрăк çыннăм, ирт тĕпелелле.

Следователь сĕтел хушшине ларчĕ, папкинчен таса хут листисем кăларчĕ.

— Мĕн каласа пама пултаратăр пускилсем пирки, инке?

— Мĕн каламалли пур, аван çынсемччĕ пускилсем.

— Ывăлĕ пирки мĕн калама пултаратăр?

— Лекçей салтакран таврăннăранпа шăв-шав пуçланчĕ пускилте: ĕçке ерчĕ ывăлĕ.

— Ытти пускилсем урăхла калаççĕ-çке.

— Эп юнашарах пурăнатăп, мана ытларах курăнать пулĕ.

Следователь нимех те калаймарĕ кун хыççăн, хучĕсене пуçтарса чикрĕ те Лекçей патне каçрĕ. Лешĕ, пысăк хуйха путнăскер, тĕтреллĕ куçĕсемпе никама асăрхамасăр, сĕтел хушшинче ик аллипе пуçне тытса ларатчĕ. Вăл ӳсĕр пулĕ тесе, следователь алăкранах ыйтрĕ:

— Ну, кала, салтак, мĕнпе тата мĕншĕн вĕлертĕн аннӳне?

— Эсир мĕн, эп аннене пурнăçра пĕр сивĕ сăмах каласа курман.

— Ман фактсем пур.

— Эп ним те калама пултараймастăп.

— Эппин пуçтарăн.

Следователь Лекçее район центрне илсе кайрĕ те милици дежурнăйне парса хăварчĕ.

Лекçей ниепле те тăна кĕреймерĕ-ха. «Мĕншĕн арестлерĕç ăна? Мĕншĕн камерăна хупрĕç? Мĕнре ман айăп?» Йывăр хуйхăпа минренĕскер кунта та тăна кĕреймерĕ-ха вăл.

Следователе сĕмсĕр суйнăшăн Хветле шикленсе ӳкрĕ. Лекçеех ĕненĕç пулсан, ăçта кайса кĕмелле унăн? Ылтăна та тупма пултарĕç. Хăтăлмалла хăвăртрах унтан. Ылтăнăн çуррине уйрăм тутăрпа чĕркесе чикрĕ те район центрне таплаттарчĕ. Çӳресен-çӳресен чи чаплă çурт умĕнче чарăнса тăчĕ. Сывлăш çавăрса илнĕ хыççăн хапха юпи çинчи кнопка çине хăюсăррăн пусрĕ. Хапха çумĕнчи пĕчĕк алăкран пĕр аллă-аллă пилĕк çулсенчи арçын тухрĕ.

— Мĕнле ĕçпеччĕ-ши эсир?

— Йышăнмăр-ши мана?

— Килнĕ çынна ма йышăнас мар, кĕрĕр.

Килкарти таса, типтер. Пӳрт çумĕнче пĕчĕк сĕтел, икĕ пукан лараççĕ. Çавăнта вырнаçтарчĕ хуçа хăнана, хăй итлем пек туса чĕнмерĕ.

— Сире ылтăн кирлĕ мар-и? — шăппăн ыйтрĕ Хветле. Лешĕ ял хĕрарăмĕ çине тĕлĕнерех пăхрĕ, шухăша кайнă пек пулчĕ. Ку шӳт маррине кура, хуравларĕ:

— Кама кирлĕ мар вăл ылтăн, кирлĕ тавар.

— Мĕн чухлĕ илме пултаратăр?

— Мĕн чухлине кура.

Хветле тутрине туртса кăларса сĕтел çине сарса хучĕ. Хуçан куçĕсем алчăрасах кайрĕç. Вăл çыхăна илчĕ те пӳрте кĕрсе кайрĕ. Кăшт вăхăтран тухрĕ.

— Сирĕн ылтăн хĕрĕх пине туртать, анчах халь манăн ун чухлĕ укçа çук. Килĕшетĕр пулсан, çирĕм пилĕк пин пама пултаратăп. Эп ыйтса тăмастăп сирĕнтен, ăçтан тупма пултарнă эсир ку паха ылтăна, çапах та ман сĕнӳпе килĕшетĕр пуль тетĕп.

— Çирĕм пилĕк пин тенкĕлĕх уйăрса илĕр те ыттине тавăрса парăр.

— Çук, ун пек ĕç тухмĕ, илĕр пĕтĕмпех каялла.

Хветле çухалса кайрĕ, ун пек чухне мĕн тумаллине те пĕлмерĕ тăруках. Кăшт чĕнмесĕр ларсан, ун-кун шухăшласа пăхрĕ те килĕшрĕ кил хуçипе:

— Парăр эппин хăвăр укçăра.

— Пуçламан укçа чĕркисене çавăн чухлĕ курсан, алчăраса кайрĕç Хветлен куçĕсем. Укçасене сăран сумккине пĕтĕрсе чикрĕ те тухса шурĕ хăвăртрах урамалла.

Ĕçе хăвăртрах хупас тесе сахал мар хĕнерĕç Лекçее

милицире, пётём ăшчикне тапратрĕç. Юлашкинчен Лекçей чăтаймарĕ: «Эп вĕлертĕм аннене»,— тесе йышăнчĕ. Кун хыççăн хĕнеме пăрахрĕç ăна. Тепĕр уйăхран суд пулчĕ. Суд умĕнхи каç виççĕн пырса хăратрĕç ăна: «Ху следствире йышăннине судра хирĕçлетĕн пулсан, чĕррĕн тухаймастăн кунтан»,— терĕç.

— Эп вĕлертĕм аннене,— терĕ те судра Лекçей, чĕтрекен сассипе ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

— Пулма пултараймасть, ялти чи лăпкă ача пулнă вăл! — кăшкăрчĕç залран ял çыннисем.

— Шавланăшăн кăларса яратпăр,— терĕ те судья, хаяр лăх шăпланчĕ.

Прокурор вунпилĕк çуллăха лартма ыйтрĕ. Канашлăва кайса килнĕ хыççăн суд ку сĕнĕве çирĕплетрĕ.

Васлейпе ял çыннисем ку приговорпа килĕшмерĕç, Мускава кассаци шалоби çырчĕç. Тепĕр уйăхран Мускавран комисси килчĕ. Ĕçе çĕнĕрен пăхса тухрĕç. Лекçей айăпла мар тесе йышăнчĕç ку хутĕнче. Ăна тĕрмерен кăларчĕç. Анчах нумай пурăнаймарĕ аппăрша ачи, район пульницинче вилчĕ. Хытă хĕненипе ăшчикĕ юрăхсăра тухнине пĕлчĕç тухтăрсем, анчах никама та пĕлтермерĕç.

Çур çул хушшинче виçĕ виле пулчĕ пĕр килтен. Çурт мăрйинчен тĕтĕм тухма пăрахрĕ. Хветле ылтăншăн илнĕ укçине тăкаклама шикленчĕ, юлашкин ылтăнне те урăх никама та сĕнмерĕ. Пурăнчĕ шăппăн та вăрттăн.

Тем сăлтава кура-ске, пĕррехинче унăн пӳртне пушар тивнĕ. Хăй пахчара ĕçленĕ пулнă. Пӳртне çулăм самаях тивсе илсен çеç асăрханă вăл пушара. «Ман укçасем çунаççĕ, ман ылтăнăм çунать!» — тесе кăшкăрнине темиçе пускил те илтнĕ имĕш. Хветли хăй вара çулăм ярса илнĕ пӳртне чупса кĕнĕ тет те тимĕр арчине ыталаса çунса кайнă, тет. Те арчине туртса кăларас тенĕ ĕнтĕ, те укçипе ылтăнне кăларас тенĕ, анчах çав самантра çулăмпа çунакан мачча ун çине ишĕлсе анă, тесе кăлаçать ял халăхĕ.

## УЛТАВÇĂ

Урамра сарă хĕвелĕ хĕртет, ăшăтçах ячĕ çанталăкĕ. Шавлă хапрăк патĕнчи чечек кăшăлĕсем ырă шăршă сапаççĕ, куçа астарса илентереççĕ. Вĕсене ĕçе кĕриччен, пĕр

кана пăхса тăнă хыççăн, урисем ниçталла та утасшăн мар, куç та илемлĕхрен хăпаймасть. Анчах хырăм выçни çинчен те шухăшламалла пурăнакан этемĕн — ĕçлемесĕр никам та укçа памасть!.. Кăмăлсăррăн утатăн эс вара ялан-хи хăвăн ĕçе — тăван хапрăка. Урамри илем хыçа юлнă хыççăн, цеха кĕрсен, тамăкри пек саншăн — пăчă, сывлăш таса мар. Цехра çĕвĕ машинисен йĕппипсем шаркаласа ĕçленĕ йӳçĕхтерекен сасă çеç янăрать. Ерипен шăвакан конвейера ăстаçăсем йĕркелесе лараççĕ — шурă халатлă хĕрарăмсем. Хăшисен аллисем вăр-вар, йăпăр-япăр, теприсен, вĕренсе пыракансен — çыпăçусăр. Çĕнĕскерри патне хĕрарăмсем пухăнчĕç, темскер пулман-ши? Ытти çынсемпе пĕрле эпĕ те унта çитсе тăтăм. Анчах çĕнни патне çитеймерĕм, ăна хĕрарăмсен ушкăнĕ ункăна çавăрса илнĕ.

— Ну-ка, хĕрсем, мана та çул парăр-ха!

Вĕсем эпĕ каланине хăлхана чикмерĕç, кĕпĕрленсех тăчĕç. Эпĕ вара сĕтел çине хăпарса тăтăм, тинех хам куçпа çĕнĕскеррине куртăм, вăл аллисемпе питне хупланă та — йĕрет те йĕрет.

— Мĕн пулчĕ, Таня?

Вăл алисене пичĕ çинчен сирчĕ те сăмсипе нăшлатса шăхăрчĕ, унтан куçне шăлчĕ:

— Хамăр пурăнакан засыпушка тĕппипех çунса кайнă, ăпăр-тапăр та тумтирсем те пĕтнĕ, юрать ачасем чĕрĕ юлнă-ха...

— Миçе ача санăн?

— Тăваттă!

— Ай-ай, паллах, шел телейсĕр хĕрарăма.

Пурте хĕрарăмсем кăмăлсăррăн пĕр-пĕрин çине пăхаççĕ, хăшĕсен куçĕсем те шывланчĕç, ара, чылайăшĕ кунта ача амăшĕсем-çке-ха.

— Хĕрсем, айтăр пулăшар ăна, укçа пуçтарса парар ун валли?

Хĕрарăмсем, пурте тенĕ пекех, укçа енчĕкĕсене уçкалаççĕ. Манăн пин тенкĕ пурччĕ, эпĕ те ăна кăларса хутăм укçа купи çине. Халĕ пĕр смена укçасăрах ĕçлеме тивет, шалăвне нумаях тӳлемеççĕ, юрать-ха преми укçи килет, çавă çеç пулăшать нормăна ирттерсе тултаракан ăстасене.

Кӳршĕри конвейер çинчен те килчĕç хĕрарăмсем, укçа парса хăварчĕç. Смена пĕтес умĕн пухса хатĕрленĕ укçана Таньăна пачĕç. Вăл нимĕн те шарламарĕ, шăпăрттăн укçана хăй сумкине персе чикрĕ те проходной патнелле вăркăнчĕ. Тепĕр кунне Таня ĕçе тухмарĕ, çыннăн пысăк хуйхă,

ан тив хăйĕн çемйине килте пулăштăр, терĕç. Уйăх иртрĕ, Таня çаплах ĕçре курăнмарĕ. Цеха уйăх çурăран çеç килсе тухрĕ. Пурне те тĕлĕнтермĕшле, чирлени çинчен хут илсе килнĕ, çавăнпа никам та нимĕн те каламарĕç ăна. Тепрер ерне пек ĕçлесен, Таня пач çухалчĕ. Ку вара вăраха тăсăлчĕ, Таня хĕрсе ĕçлес вырăнне, канура ытлашшипех çухалса пурăнчĕ.

Смена вĕçлениччен Таня ĕçленĕ çĕвĕ машинĕ патне хĕрарăмсем кĕшĕлтетсе пухăнчĕç. Бригадира та чĕнсе илчĕç.

— Пирĕн йышран эсĕ Таньăн нормине чĕрсе пăрах.

— Нимĕн те тăваймастăп, соцобязательство йышăннă вĕт-ха, нормăна тултарма пурне те пулăшма пулнă. Сирĕнтен кам та пулин проходнойĕнче чăлха илсе тухнă чух лекет, каллех пĕрле ответ тытăпăр. Çак пунктсене пурнăçлаймасан, эпир пурте преми укçине, хамăр хăлхасем пекех, кураймăпăр.

— Тен, ун пекех тăвар мар, çыннин ахаль те пысăк инкек пулнă.

— Çитĕ сӳтсе явса, кам хирĕçлет, мастера кайса калатăп! — ку сăмахсем хыççăн нихăшĕ те хирĕç каламарĕç, ĕçлеме пикенчĕç.

Хĕрарăмсем кунсерен Таньăн ĕç нормине пурнăçларĕç, кăна тума тепĕр чух ал та çитместчĕ, шăматкун тухса ĕçленисем те пулнă. Кĕçех Таня хăй те ĕçе тухрĕ, хĕрарăмсем пурте лăш! сывласа ячĕç. Вăл, мĕн пур хĕрарăмсем пек, васкамарĕ çĕвĕ машини умне ларма. Час-часах буфета чупрĕ, таçта çĕтсе çӳрерĕ, аран-аран çур норма кăна пурнăçларĕ. Бригадир унпа калаçса пăхма шутларĕ, ма ун пек сӳрĕккĕн ĕçлет-ха вăл?

— Эсĕ ма, Таня, носкисем питĕ сахал çĕлетĕн?

— Пĕлетĕр-и, ниепле те çав хуйхă-суйхăран хăпса пĕтейместĕп эп.

— Ах, телейсĕрскер, эпĕ пачах ун пирки маннă-çке, калаçар.

Вара вăл Таньăпа юнашар ларнă та ăна пулăшнă. Çапла кунсерен унпа юнашар бригадир ĕçленĕ. Малтанах вăл çунса кайни çинчен чылай калаçрĕç, кунсерен ĕçре урăх çĕнĕлĕхсем тупăнчĕç, килти ĕçсем çинчен манчĕç.

Таня икĕ эрне яхăн çĕвĕ машинипе ĕçлесе чăтрĕ, тĕлĕнмелле — чирлерĕм тесе хут та илмерĕ. Паян каллех Таньăн машини умне ĕçрен тухма ĕлкĕреймен, сменăпа ĕçлеме кĕрекен хĕрарăмсем пухăнчĕç.

— Мĕн пулчĕ?

— Анне вилнĕ.

— Ой, еплерех инкек, пулăшар-ха телейсĕр çынна пурте.

Ун умĕнче иртсе пыракан кашни хĕрарăмах укçа хунă. Пухăннă укçана Таньăна тыттарнă. Вăл йĕме чарăннă. Бригадир ун патне пынă та пуçĕнчен ачашласа:

— Аннӳне пытарма киле кай, паян санран ĕçлесси пулас çук, асăрхамасăр хăвăн пӳрнӳне те çĕлесе хурăн.

Таня хăйĕн япалисене илнĕ те алăкран тухса çухалнă. Ун хыççăн ăна пăхса юлакан хĕрарăмсем ĕçри тусне чунчĕререн хĕрхеннĕ.

Ун хыççăн шăпах уйăх иртнĕ, Таня ним пулман пекех цеха кĕрсе тăнă. Пĕр смена бригадир пулăшнипе чиперех ĕçленĕ. Çав кун, ĕç хыççăн, проходнăйĕнче Таньăна тытса чарнă, сумки тĕпĕнче темиçе колготка выртнă унăн. Вăл вара унта хуралçăсемпе ятлаçса кайнă, пропускне лешсем туртса илнĕ унран, Таня хăй тухса шăвăнма ĕлкĕрнĕ. Тепĕр кун ирпе Таня ĕçе тухман, ун машини яланхи пекех сменăра шăпăрттăн ларнă. Мастер бригадира хăй патне чĕннĕ те:

— Йĕрке тавраш çук сан участокра,— тенĕ.

— Пурте йĕркеллех-çке-ха.

— Пĕлетĕн-и, ĕнер санăн сменăри Таньăна проходнойĕнче тытса чарнă, виçĕ мăшăр колготка вăрланă пулнă вăл.

— Кăна эпĕ пĕлмен.

— Халĕ астуса юл, санăн бригадăна преми памалла мар турĕç.

— Юрĕ, паян пĕтĕмпех хам тĕрĕслĕп.

Бригадир смена вĕçленичченех кичемĕн конвейер умĕпе уткаларĕ, ĕç кунĕ пĕтеспе вăл профорг патне пычĕ те:

— Ĕç хыççăн пĕр çĕре çитмеллеччĕ.

— Ăçта?

— Таня килне.

— Эпир халь вăл ăçта пурăннине пĕлместпĕр, вĕсен засыпушки çунса кайнă вĕт-ха.

— Кадрсен пайне кайса тупатăн, ăçта пропискăра тăнине пĕлетĕн.

Çавăн пек турĕç те вĕсем, иккĕшĕ пĕрле хулан кăнтăр урамĕ тăрăх утрĕç, пĕр урама çитсе ыйтрĕç, тепĕр урама. Кирлĕ номерлĕ çурта шыраса тупрĕç. Кил хушшинчи сак çинче Таня ларатчĕ. Вĕсене курсан сасартăк куçран çухалчĕ, хăваласа çитес тесен те çитеймерĕç — тарса ӳкрĕ вăл.

Хваттерне шыраса тупрĕç, шăнкăравларĕç, алăка самăр хĕрарăм уçрĕ, вăтам çулхискер, вăйлăскер.

— Сире кам кирлĕ?

— Таньăна курса калаçмаллаччĕ пирĕн.

— Вăл килте çук.

— Эпир ĕçрен, пĕлес терĕмĕр, еплерех пурăнать-ха вăл?

— Пирĕн килйышра пурте йĕркеллĕ.

— Эсир кам пулатăр?

— Таня амăшĕ.

— Сирĕн тата анне пур-и?

— Кĕрӳн амăшĕ ялта пурăнать, сывлăхĕ лайăх, манăн вара тахçанах çут тĕнчере çук ĕнтĕ.

Ĕçрен килнĕ хĕрсем хăйсем сисмесĕрех çĕрулми усрамалли ещĕк çине тайăнчĕç.

— Мĕн пулчĕ, хĕрарăмсем?

— Сирĕн хĕрĕр пире мĕн пĕлтернине сире калама, каçарăр та, чĕлхемĕр те çаврăнаймасть пирĕн.

Кăшт-кăшт сывлăш çавăрса ярсан, бригадир каласа хучĕ:

— Таня ĕçе пычĕ те манăн анне вилсе кайрĕ терĕ, эпир тӳрех вара, икĕ сменăри çынсем, сире пытарма укçа пуçтарса патăмăр ăна.

— Ой, пурнăçăм, хĕрĕм чĕрĕллех пытарчĕ апла мана,— амăшĕ йĕрсе ячĕ те чĕтрене ӳкрĕ,— Мĕн тери намăс çынсенчен, çапларах тав тăваççĕ иккен ватлăхра амăшĕсене хĕрĕсем.

Ĕçрен килнĕ хĕрарăмсем нимĕн те калама пĕлмерĕç, тĕлĕннипе хăйсем халь кунта мĕн илтнине пурнăçра ун пек пулма та пултараймасть пек шутларĕç.

— Эпĕ ĕçлетĕп-ха, пахчаçимĕç магазинĕнче. Çăмăл мар, вĕсене пулăшас тетĕп,— терĕ Таня амăшĕ.

Тепĕр пӳлĕм алăкĕ уçăлчĕ, унтан арçын тухрĕ.

— Пĕтĕмпех илтрĕм, Таня тата мĕнлерех камит кăтартрĕ,— ыйтрĕ вăл.

— Эсир ку хваттерте чылайранпа пурăнатăр-и?

— Пиллĕкмĕш çула куçрĕ.

— Сирĕн засыпушка пулнă-и?

— Нихăçан та пулман, хам авланнăранпах кунта пурăнатпăр.

— Таня йĕре-йĕре сирĕн засыпушка çунса кайни çинчен каласа çынсене ĕнентерчĕ, пĕр çипуççăр тăрса юлнине те асăнчĕ, ун пек чух çынсем инкеке лекнĕ çынна хĕрхе-

неççĕ, эпир хăвăрт укçа пухрăмăр, хапрăк ертÿçисем те хытса тăмарĕç ку енĕпе.

— Ќиле таврăнтăр-ха, ăна, суеçе, вĕрентетĕп çынсене улталама,— арçын пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ, чышкисене чăмăртарĕ.

Амăшĕ ни вилĕ, ни чĕрĕ ларчĕ. Пÿлĕмрен икĕ ача сиксе тухрĕç, асламăшне лăплантарса пирĕн çине хаяррăн, шурă куçĕсемпе тинкерчĕç, эпир вара текех тытăнса тăмасăр тухрăмăр вĕсен килĕнчен.

— Ыран Таня кадрсен пайне пытăр.

— Хам та унпа пĕрле çитĕп, тем тума тата пултарĕ вăл.

Эпир вара кăмăлсăррăн çак хваттер алăкĕнчен тухрăмăр. Таньăна кураймарăмăр. Еçе çитсен бригадир пурне те тĕп-тĕрĕссине пĕтĕмпех каларĕ. Тĕлĕнсе хытнă хĕрарăмсем ухлатрĕç те ахлатрĕç. Хăшĕсем ĕненмесĕр тăчĕç:

— Ара, Таня вĕри куçульпех йĕчĕ-çке-ха.

— Хĕрарăм тем тума та маçтăр, вĕсем чике тăршшĕ те лартаççĕ тепĕр чух ухмахсене.

Ватă хĕрарăм, ĕç ветеранĕ, çĕкленчĕ.

— Тĕрĕссипе каласан,— терĕ вăл,— Пире укçа шел, укçа ĕçлесе илес тесе, эпир çĕвĕ машини умĕнчен пĕр самант уйрăлмасăр ĕçлетпĕр, çемье валли укçа тăватпăр. Суеçĕне кÿренме сăлтавĕ пур пирĕн.

Хĕрарăмсем чылайччен шавларĕç, калаçса тăрансан ĕç вырăнĕсене шăппăн саланчĕç. Бригадир пĕрле ĕçлекенсене çапах та веçех каламарĕ, урса кайнă хĕрарăмсем ăна çурса тăкăччĕç.

Цех начальникĕ бригадира чĕннĕ чухне ун пÿлĕмĕнче Таня тăратчĕ.

— Вăрăна статьяпа ĕçрен кăларар!

Таня йĕрсе ячĕ, куçне-пуçне чарса пăрахрĕ, анчах халĕ ку никама та хумхантармарĕ. Бригадир пÿлĕмрен сиксе тухрĕ, ачасем вĕсем çине еплерех пăхнине аса илчĕ те чĕрене темскер хĕсрĕ.

— Хĕрхенĕр, унăн тăватă ача вĕт,— тесе хучĕ вăл.

— Юрĕ, апла, эсĕ каланă пек пултăр, хăй ирĕкĕпе кайнă тесе çырар.

— Тавтапуç сире, бригадир.

— Хăвăн ачусене тав ту, унсăрăн «медальпе» тасалаттăн-ха хапрăкран,— бригадирăн хаярлăхĕпе ыркăмăллăхĕ кĕрешрĕç Таня тухичченех.

Таньăна хăй ирĕкĕпе кайнă тесе ĕçрен кăларчĕç. Ул-

тавҫă тухса кайсан та бригадирăн куҫĕ умĕнчен айăпсăр ачасен хаяр та шурă куҫĕсем ҫухалмарĕҫ.

## ШĂПА

Паян ир-ирех вăранчĕ Веня. Тăрса хăвăрттăн-васкавлăн тенĕ пек ҫăвăнса ҫырткалам пекки турĕ те район пульницине тухса утрĕ. Хĕвел йăмăх-хĕрлĕ шăналăк карнă горизонт хыҫĕнчен тухать кăна-ха. Сывлăш халлĕхе уҫă та нӳрĕрех, ҫапах та типсе ăшăнса пыни утнă ҫемĕн туйăнса пырать. Тавралăх симĕс кавирпа витĕнме ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Уйсенче тикĕс шăтнă калча кăмăла ҫĕклентерсе ешерет.

Пĕлтĕртен юлнă улăм ури айĕнчен сасартăк мулкач сиксе тухрĕ те ҫывăхри вăрман еннелле вĕлтлетрĕ. Ку сав тери ăнсăртран тата ура айĕнче тенĕ пекех пулса иртнĕрен, Веня шартах сикрĕ те тăпах чарăнса тăчĕ. Ӳт-пĕвĕ тăрăх тем сиввĕн чупса илчĕ, пуҫ тӳпинчи ӳт-тир сăрлатса пĕрĕнчĕ те, ҫӳҫ вирелле тăнăн туйăнчĕ. Ҫакăн пекех пĕррехинче Веняпа салтакра пулсаа иртнĕччĕ. Ҫавăн чухне ун умне пянхи пекех ăнсăртран душман тухса тăнăччĕ, хăй аллинчи пăшалĕн курокне шĕвĕр пӳрнипе пуснăччĕ.

— Фу, хăратса пăрахрĕ.

Унтан ҫăмăллăн сывласа илсе сасăпах кулся ячĕ. Ҫапах та Афганистанран юлнă йывăр йĕр паян кун та, ав, палăрать. Юлташĕсене ҫухатни ҫинчен курăнакан тĕлĕксем кашни каҫах тенĕ пек хăпма пĕлмеҫҫĕ.

Паян Веняшăн уйрăмах паллă кун: вăл район центрĕнчи суратакансен сутне васкать. Паян вăл ашшĕ пулмалла. Мĕнле унта мăшăрĕ, ҫуратрĕ-ши, ҫук-ши? Ҫакна пĕлмесĕр унăн канăҫа ҫухатнă чунĕ лăпланас ҫук. Веня ситнĕ тĕле пульница тавра шăплăх тăратчĕ. Вăл алăка тĕксе пăхрĕ, анчах алăкне тĕкĕленĕ имĕш. Ирĕксĕрех хулленĕн шаккама тиврĕ. Кăштахран шалта кăштăртатнипе шакăлтатни илтĕнчĕ те, уҫăлнă алăкра ыйăхлă сестра курăнчĕ.

— Кăшт кăтăш туса илме ĕлкĕрнĕччĕ ҫеҫ, эсир вăратрăр. Паян ҫĕр йывăр иртрĕ, темиҫен тертлĕн ҫуратрĕҫ.

— Мĕнле унта манăн Натюш, ҫуратрĕ-и?

— Ҫуратнă пулмасăр, ҫуратнă. Саламлатăп: сирĕн Сирĕн йĕкĕреш ывăл ҫуралнă.

Веня савăнăҫуллă туйăмĕсене ниҫта чикеймесĕр сест-

рана пилĕкрен ыталаса илсе йатса темиçе хут çавранса илчĕ.

— Вăт сулăнчăк, яр хăвăртрах урайне.

— Курма юрать-ши ăна?

— Халлĕхе май çук, чылай тертленнĕрен вăйсăрланнă вăл.

— Калăр-ха, мĕн илсе килме юрать ун валли?

— Мăшăруна витаминсем ытларах кирлĕ, чылай юн çухатрĕ вăл.

— Тавтапуç, сестра, пуриншĕн те.

Ура çĕре перĕнми майлă васкарĕ Веня каялла яла. Хăйĕн савăнăçĕ çинчен кама та пулин хăвăртрах пĕлтерес килчĕ унăн. Вара вăл тӳрех ял хĕрринче пурăнакан тусĕ патне кĕчĕ. Лешĕ вырăн çинчен тăма ĕлкĕрменччĕ-ха. Веня ăна хул пуççинчен силлесе вăратрĕ.

— Мĕн? Мĕн пулнă ирех вăратса çӳреме?

— Саламлама пултаран мана, Герман. Ман йĕкĕреш ывăл çураалнă.

— Çапла кала та, атту силлетĕн тем пулса тухнă пек.

Герман хăвăрт тăрса трико тăхăнчĕ те нӳхрепе анчĕ.

— Пулăш, мĕн пăхса тăратăн?

Вăл икĕ витре кĕрекен тулли пичке тыттарать Веняна.

— Анне пĕлнĕ пекех виçĕм кун сăра вĕретрĕ.

— Вĕсем яланах туяççĕ çав.

Германпа Веня пĕрер курка кăпăкланакан сивĕ сăра ĕçрĕç.

— Мĕн туса ларатпăр эпир кунта? Айта киле пирĕн пата, аннене савăнтарар. Вăл мĕн те пулин тупатех унта.

— Эппин йăт пичкене, ахальтенех кăларман пуль ăна нӳхрепрен.

Вĕсем пичке йатса урам тăрăх тăвалла утрĕç. Тĕл пулнă çынсене Веня хăйĕн савăнăçне пĕлтерчĕ, хăшне-пĕрне хăйсемпе пыма чĕнчĕ. Килне вĕсем вара ушкăнпа пырса кĕчĕç. Ăна-кăна чухлакан амăшĕ тӳрех ăнланчĕ, тĕпелĕн-чăланăн ăшталанма тытăнчĕ. Кĕçех пурте сĕтел хушшине вырнаçрĕç. Пуçланчĕ вара кĕтмен тенĕ пек ĕçкĕ. Пурте Веняна йĕкĕреш ывăлпа саламлаççĕ, вĕсен сывлăхĕшĕн, тĕрĕс-тĕкелĕхĕшĕн ĕçеççĕ.

Каçченех шавларĕ пухăннă ушкăн, пĕр четвĕрт аншарли пушатрĕ. Каç кӳлĕм килĕсене саланчĕç, пĕр Герман çес тăрса юлчĕ.

— Пĕлетĕн-и, Герман, ман Натюш чылай юн çухатнă, çавăнпа ăна техĕмлĕ апат-çимĕç кирлĕ пулать.

— Апла вăлча тупма тивет, вăл белокпа пуян теççĕ. Анчах çтерлĕкне тытма чарнă çав халь.

— Ничево, эп Натюшшăн тем тума та хатĕр. Айта, халех каяр, ир-ирех таврăнăпăр.

— Халь çĕрле ăçтан ăман тупатăн?

— Мĕн сӳнĕлтететĕн, чичас тислĕк купи айĕнчен чавса кăларатпăр, унта нумай вĕсем, кĕреçепе чав кăна, купипех йăшăлтатаççĕ.

Веня сунтăкран хунар кăларчĕ. Кĕçех вĕсем пахчара пĕр савăт мăнтăр ăмансене пухрĕç те.

— Пăх-ха, мĕнле мăнтăр вĕсем. Пĕтĕм çтерлĕк пирĕн пулать.

Вĕсем ампар умĕнче çакăнса тăракан вăлтасене, икшер сакидушка илчĕç те пахчасем хыçĕпе Атăл хĕрнелле утрĕç. Каç сĕмĕ тавралăха витернĕ пулин те, ытлашши куçран сыхланас терĕç, урама тухмарĕç. Тĕттĕмре шăппăн утса пынă чухне сасартăк тĕмсем хушшинче тем кăштăртатни илтĕнчĕ.

— Шуйттан аташмасть пуль те унта?

— Ан шиклен, Афганра тем те курма тивнĕ, тек ним те хăратас çук мана.

Веня сасă еннелле хунарĕпе çутатрĕ. Тĕмсем хушшинче икĕ куç ялтăртатса илчĕ. Хунара кĕтмен çĕртен сасартăк çутатнăран, чĕрчун тарма пĕлмерĕ. Веня сумккинчен йывăр грузило кăларчĕ те чĕрчуна персе тивертрĕ. Лешĕ палтах кайса ӳкрĕ, Веня чĕрчуна пырса йăтрĕ. Пурăш пулнă имĕш.

— О-о, мĕнле вырăнлă пулчĕ ку. Пурăш çăвĕ питĕ усăллă теççĕ. Айта, каялла таврăнар. Кĕçĕр пулла каймасан та юрĕ. Юнĕ кĕвеличчен тирпейлес пулать куна.

— Эс таврăн, Веня. Эп килелле уттарам, анне мана çухатрĕ те пулĕ.

— Юрĕ эппин, пулла ыран та кайăпăр.

Вĕсем алă тытса уйрăлчĕç. Веня пурăша хăвăрт тирпейлерĕ. Тирне туртса карчĕ. Кил картинчи çутта курса, шыçăннă сăн-питлĕ пускил хашлатса каçрĕ. Вăл мухмăрпа аптăрани каламасăрах паллă. Ăна шеллесе Веня кĕсйинчен пĕр литрлăх укçа кăларса тыттарчĕ.

— Ме, тупса кил, вилсе кайăн тата, ачусене халех тăлăха хăварар мар.

Лешĕ кĕттермерĕ. Вăштах тухса утрĕ хапхаран. Вара вĕсем çĕрĕпех халапласа ларчĕç лаçра. Ирпе амăшĕ намăслантарса ятлаçсан çеç кĕрсе выртрĕ Веня утă ăшне.

Вара кунĕпех хуп туртрĕ вăл унта. Каç еннелле Герман пырса вăратрĕ ăна.

— Çитет пулĕ хуп турттса, тăр, пулла каяр.

— Пĕлетĕн-и, Герман, аван мар тĕлĕк курнă. Тĕлĕкре Атăла путнă пек эпĕ.

— Сахалтарах шутла ун пирки. Тĕлĕкре унта тем те курăнĕ.

— Э-э, ун пек ан кала. Ломоносов, ав, ашшĕ хăш утрав çинче инкек курса вилнине тĕлĕкре курса пĕлнĕ. Ашшĕ ӳтне вара чăнах та çав утрав çинче тупнă. Менделеева, ав, хими таблици тĕлĕкре курăннă. Ун пек тĕслĕхсем чылай тупма пулать.

— Тху, тху, сан тĕлĕк тӳрре ан килтĕрччĕ. Шыва ан кĕр, вара путас çук. Çавă çеç.

— Туятăп, ăшра тем канăçсăрлать. Темĕнле инкеке пулĕ.

— Юрĕ-çке, çитĕ сана кирлĕ-кирлĕ мара сӳпĕлтетме. Айта пулла, атту ăмансем шăршланса пăсăлĕç.

— Тăхта-ха, тем пыр типсе ларнă, йĕпетмелле ăна кăштах.

Вăл пичке пăккине уçрĕ. Унтан çăра çĕпре çеç юхса тухрĕ. Веня лаç умĕнчи сак çинче ларакан витререн çăл шывĕ ăсса ĕçрĕ. Анчах ăшĕ канмарĕ.

— Анне,— кăшкăрчĕ вăл пӳрт еннелле.— Мĕн те пулин пур-и унта пирĕн?

— Пур пулмасăр. Хăй вăхăтĕнче аçу валли хăварнă пек, яланах запас хăваратăп эпĕ, пĕлетĕп кайран аптăрасса.

Амăшĕ пĕр кĕленче аншарли илсе тухрĕ. Германпа Веня ăна туллишер стакан ярса пушатрĕç, лаç сĕтелĕ çинче мĕн пуррине çырткаларĕç. Вара çĕр каçхи пекех пулла тухса утрĕç. Кĕçĕр вĕсем пĕр чăрмавсăрах Атăл хĕрне çитрĕç. Шыв çинчен уçă варкăш вĕрет, кăшт сивĕрех те — ӳтпĕве çӳçентерет. Кĕçех вĕсем сакидушкăсене майласа шыва ыватрĕç.

— Эп пушатса килем-ха,— терĕ те Веня çыран хĕррипе утса кайрĕ. Ун асне ĕнер хăй вĕлернĕ пурăш пырса кĕчĕ. Куç умне чĕрчунран юхнă юн тухса тăчĕ, вăл кĕвелнĕ, хуп хуран курăнать. Мĕн чухлĕ юн курнă Веня Афганра, анчах кун пекех хуп хура пулнине ас тумасть. Сасартăк Венян хăлхара тем шавласа килчĕ, унăн пуçĕ çаврăнса кайрĕ. Вара вăл ура çинче тытăнса тăраймарĕ, чăнкă çыртан шыва шампăлтатса ӳкрĕ. Çипуçĕ шывпа йĕпенсе йы-

вăрланчĕ, шыв кĕрсе тулнă аттисем авăралла туртрĕç. Веня сывласа ярас тесе çăварне уçрĕ, анчах ӳпкине сывлăш вырăнне шыв тулчĕ. Веня чыхăнса ларчĕ. аллисемпе арăш-марăш хăлаçланса çырана ишме пикенчĕ. Çырана çитесси пулмарĕ унăн, темĕнле вăй ăна юханшыв тĕпнелле туртса анса кайрĕ. Ăна хирĕçлеме вăй юлмарĕ унăн, вара вăл кĕçех шывра курăнми пулчĕ.

Тепĕр кăштахран Герман Веняна сакидушкăпа туртса кăларчĕ, анчах тусне чĕртсе тăратаймарĕ, каярах юлчĕ.

## ПИЧЧЕ

Хĕвел тӳпене хăпарса çитнĕ те кăн тăрать. Ялта шăплăх хуçаланать. Пĕр çын та курăнмасть урамра. Çăл умĕнчи пыльчăкра икĕ сысна киленсе нăрăхлатса выртаççĕ. Пĕвере хурсем тĕк кăларма пуçланă чĕпписемпе ишеççĕ. Пĕве вĕçĕнче кăвакалсем кутăн чăмаççĕ. Килсенче ват çынсем çеç юлнă. Ачи-пăчи пĕтĕм халăхпа улăхра утă таваççĕ, пухаççĕ. Çуласса ĕнерех çулса пăрахнă. Утă типме ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Хăвăртрах пухса капансем тумалла. Кăткăсем пек хĕвĕшет халăх улăхра.

Кăнтăр апатĕнче аслисем сулхăна ларчĕç, çамрăксем шыва кĕме кайрĕç. Арçын ачасем пĕр еннелле кайрĕç, хĕр ачасем — тепĕр еннелле.

— Айтăр ĕнерхи вырăна каяр,— сĕнчĕ Çемен.— Унта йăмра синчен сикме меллĕ.

— Çук, ĕнер унта тымартан çакланса чутах путса вилеттĕм.— терĕ Петĕр.

— Эп ĕнер хĕрсем шыва кĕнине пăхса лартăм, атя унта.

— Вĕсем ăçта шыва кĕреççĕ?

— Ав çав сăрт хыçĕнче.

— Атьăр, атьсемри, хĕр ачасем патне каяр.

— Атьăр, атьăр.

Арçын ачасем пĕри те теприне иртсе чупрĕç сăрт хыçнелле. Сасартăк Çемен пурне те тытса чарчĕ.

— Тăхтăр пĕр самант, ан шавлăр, çакăнта хурăн пуçлă çĕлен пулаканччĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана?

— Курăн ак.

— Çемен чăнах та вăрăм çĕлен тытрĕ. Хĕрсем хăйăр çинче хĕртĕнетчĕç. Çемен шăппăн çывхарса хĕр ачасем еннелле çĕленс печĕ. Çĕлене курса, хĕр ачасем çуйхашма

тытăнчĕç, вырăнтан тăрса чăл-пар саланса пĕтрĕç. Çĕлен шыв хĕрринелле шуса кайрĕ. Хĕр ачасем тумĕсене йатса тепĕр вырăна куçрĕç. Нина таçтан патак тупса Çемене хăваларĕ, патаккипе хăмсарчĕ, çапам пекки турĕ, анчах пĕртте тивертмерĕ. Çемен сасартăк тăп чарăнчĕ те Нина еннелле çаврăнчĕ. Хĕр ача, çавна кĕтменскер, ирĕксĕрех арçын ача ытамне кĕрсе ÿкрĕ.

— Эс мĕн хăтланан? Çын курсан мĕн калĕ?

— Эп мар, эс ху кĕрсе ÿкрĕн ытама.

— Яр теççĕ, ан ытала, намăссăр.

— Мĕн намăсĕ пултăр уншăнах? Ыталама та юрамасть-им?

— Кăнтăр кунĕнче мар ĕнтĕ. Яр, çынсем, ав, пăхаççĕ.

— Пăхчăр-им.

— Сан кулса пултăр, намăса ăçта чикем?

— Мĕн намăсĕ пултăр ыталанăшăнах?

— Эпир иккĕнех мар вĕт кунта, вăн, мĕн чухлĕ çын.

— Пулин.

— Парап эп сана пулин,— Нина Çемене хулпуççинчен чышкипе шаккаса илчĕ. Çемен Нина аллисене ярса тытрĕ. Нина каялла туртăнчĕ те темрен такăнса лăках ларчĕ. Çемен ăна тăма пулăшрĕ. Вара вĕсем ыттисем патне шыва анчĕç. Хĕр ачасемпе арçын ачасем шăв-шав кăларсах пĕр-пĕрне шывпа сирпĕтеççĕ. Пĕр инке çавна курнă та кăшкăрать анчах:

— Мĕн эсир, çумăр кăларас тетĕр-им, чарăнăр сирпĕтме. Утă пухса пĕтермесĕр кам аташтăр?

Ачасем самант шăпланчĕç, йăпăр-япăр шывран тухса пĕтрĕç, тумĕсене ярса илчĕç те утнă çĕртех тумлана пуçларĕç. Апат вăхăчĕ иртнине пĕлтерчĕ ку.

Каç тĕлне утă пуçтарса пĕтерсе капансене хыврĕ ял халăхĕ. Çамрăксем тăлăххăн пурăнакан Праски инке патне улаха пуçтарăнчĕç. Улатимĕр хуткупăсĕпе çитрĕ. Пуçланчĕ вара савăнăç, тăраниччен юрларĕç те ташларĕç çамрăксем. Нина ăна сăнанине асăрхарĕ Çемен, вара пĕр тăхтамасăр ун патне пычĕ.

— Мĕн кунта пиççе ларатпăр, айта уçăлса çÿрер?

Нина пĕр сăмахсăр Çемен хыççăн утрĕ. Ытти хĕр ачасем ăмсануллăн пăхса ăсатрĕç вĕсене. Арçын ачасем кулкаласа илчĕç. Тахăшĕ шÿтлеме тăчĕ те, ăна çавăнтах шăплантарчĕç. Урам вĕçĕнче пĕр пы-ысăк йăмра ÿсет. Çавăнта çывхарчĕç Нинăпа Çемен. Ял çине каç сĕмĕ аннă ĕнтĕ. Уйăх çук кĕçĕр. Çăлтăрсем те пăт-пат çеç курăнаççĕ, мĕн-

шӗн тесен тӳпене татӑк пӗлӗтсем хупланӑ. Тӗттӗмре хӗ-рӗн куҫӗсем хура пӑнчӑсемпе йӑлтӑртатаҫҫӗ. Шӑплӑхра чӗре тапни те илтӗнет. Ҫемен Нинӑна хӑюсӑрӑрн чуп туса илчӗ. Хӑйӗн пурнӑҫӗнче пӗрремӗш хут тутанать вӑл ӑна. Ҫапла сисмесӗрех ҫӗр ирттерчӗҫ вӗсем урамра. Кӑвак ҫу-тӑлла тин аран-аран уйрӑлчӗҫ пӗр-пӗринчен.

Пӗр эрне ӗнтӗ ҫакӑн пек ырӑ кураҫҫӗ Ҫеменпе Нина. Кунӗпе ӗҫре пулин те ыйӑннине туймаҫҫӗ. Ыйхисем те ик-виҫ сехетрен ытла мар талӑкра. Эх, ҫамрӑклӑх, ҫамрӑк-лӑх. Пӗрре ҫеҫ килет вӑл пурнӑҫра.

Пӗррехинче ирпе таврӑнчӗ те Ҫемен кил картинче мо-тороллер асӑрхарӗ. Шупашкартан Лекҫей пиччӗшӗ килсе ҫитнӗ, ав, мотороллер илсе янӑ.

— Ӑсак каччи таврӑнчӗ пулать? — тӗртсе илчӗ пиччӗ-шӗ.

— Эс мӗн, кулатӑн?

— Кутран вӗлтренпе хӗртекен ҫук пулмалла.

— Эс ху яшӑ пулман пек.

— Юрӗ-ҫке, юрӗ, аслисемпе ан хирӗҫле,— Лекҫей Ҫе-мене ыталаса илчӗ те савӑклӑн муталама тытӑнчӗ. Лешӗн хирӗҫ тӑма пӗр вӑй та ҫук.

— Э-э, санӑн пӗтӗм вӑйна ӗмсе илнӗ-ҫке. Кам-ха хӗр ачи? Ҫав Нина пулӗ-ха, саттур ҫемьерен. Ак, начарлатӗ-ха сана вӑл, ҫавӑнпа сана хулана чӗнесшӗн. Сакӑр класс вӗҫ-ленӗ, техникума кӗме вӑхӑт. Кӑштах канса ил те пуҫтарӑн. Халех каймаллаччӗ те, ҫул ҫинче ҫывӑрса кайса ӳксе юлас-ран шикленетӗп.

— Мана ялтах лайӑх, вӑтам шкул кунтах пӗтересшӗн-ха.

— Курап, курап сана мӗнле лайӑххине. Пуласлӑх пир-ки те шутламалла, хӗрсем тарса пӗтес ҫук вӗсем. Малтан вӗрен, специальность ил, ӗҫ ҫынна тӑрантарать. Итле пич-чӳне. Техникум хыҫҫӑн института кӗме ҫӑмӑлтарах.

Пӳртрен амӑшӗ тухрӗ.

— Ак, аннене те вӑратрӑмӑр.

— Ман ыйӑхӗ кӗске, ҫӗрӗпех ыйӑхсӑр аптӑратӑп, халь килет-и, халь килет-и Ҫемен тесе выртатӑп.

— Вӑн, аннене те канӑҫ памастӑн. Илсе каймаллах са-на хулана.

— Мана кам кансӗрлетӗр ӗнтӗ тек? Аҫу вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ ав. Пурӑнӑп-ха кӑштӑртатса.

— Анне, ак, мотороллер илтӗм. Час-часах килсе ҫӳрӗ-пӗр малалла.

— Сана хăвна та пĕччене пурăнма йывăр пулĕ, тата Çемене илсе каясшăн.

— Иккĕн пурăнма хаваслăрах пулĕ.

— Ара, кинпе ăнăçмарĕ те, хăраххăнах ĕмĕр ирттерес тетĕн-им?

— Куç курĕ унта анне, шăллăма ура çине тăратам-ха.

— Илсе каясах тетĕн-им? Эппин, мĕн те пулин хатĕрлем-ха çул çине. Тата ĕне суса выльăх яма та вăхăт.

Çемен мĕнле выртнă, çавăн чухнех хăрлаттарма пуçларĕ. Амăшĕ утиял витсе ячĕ, пĕр самант шеллевлĕн пăхса тăчĕ. Мĕнле унта пурăнĕ хулара? Ача вĕт-ха.

Кăнтăрла иртсен çула тухрĕç пиччĕшпе шăллĕ. Амăшĕ кучченеçсем парса ячĕ. Малтанлăха пурăнма çитĕ терĕ.

— Анне, таçта ют çĕре мар — пиччĕш патне пырать вĕт вăл. Юр-варĕ çителĕклех ман. Тав сана пирĕншĕн тăрăшнăшăн.

— Ах, ярас килмест-çке сире хулана. Тен, пуçĕпех яла таврăнан? Çеменĕ, юрĕ-çке, вĕрентĕр унта.

— Анне, ял çынни мар ĕнтĕ эпĕ тек. Килĕшет мана хула шкулĕнче ĕçлеме. Мĕнле ăслă ачасем пулаççĕ тепĕр чухне. Чăнах та, мĕн пытарас, хулиганлисем те пур ĕнтĕ. Анчах пурте ун пеккисем мар вĕт. Якăлти хĕр ачисене те ăс памалла.

— Хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр. Çул урлă тăрам мар. Пурăнăпăр-ха ял-йышпа.

Тепĕр сехет-сехет çурăран Шупашкара çитрĕç те Мотороллерпах техникум умне çитсе тăчĕç. Вĕсене техничка кĕтсе илчĕ.

— Ăçта васкатăр, атьсемри?

— Документсем пама.

— Йышăнма пăрахнă тенĕ пек илтрĕм.

— Çавах та кĕрсе пăхар-ха, тен, ĕç тухĕ.

— Йышăну комиссине сылтăм еннелле каймалла. Кам та пулин пур пулсан унта.

— Тавтапуç, тупатпăр пуль-ха.

Пӳлĕмре пĕр хĕр арăм пĕчченех ларатчĕ.

— Мĕн кирлĕччĕ сире?

— Ак, документ пама килнĕ.

— Кая юлнă эсир, йышăнма пăрахнă.

— Ăнланăр пире, шăллăм ялта утçире пулнă, çавăнпа вăхăтра килеймен. Эп хам та шкултан хăпаймарăм.

— Эсир коллега пулсан, йышăнмах тивет пулĕ. Кӳрĕрха хутăрсене, тĕрĕслем, пурте йĕркеллĕ-и?

Хĕр арăм документсене хăнăхнă йăлапа хăварт пăхса тухрĕ.

— Пурте йĕркеллĕ. Ыран экзамен.

— Тавтапуçах Сире, Турă пулăшса пытăр.

— Ăнăçу сунатăп йĕкĕте. Мĕнле калаççĕ-ха, ни пуха, ни пера теççĕ-и?

— Шуйттана пултăр. Сывă юлăр.

Вĕсем техникумран кăмăллăн тухрĕç. Анчах Лексей канăç памарĕ Çемене, математикăпа тĕрĕслерĕ, шăллĕ мĕн пĕлменнине вĕрентрĕ. Юлашкинчен кăмăллă юлчĕ. Вара апатланчĕç те çывăрма выртрĕç.

Лексей ир-ирех вăратрĕ Çемене, каллех пĕлĕвне тĕрĕслерĕ, вара техникума ăсатрĕ. Шăллĕ экзамен тытасса урамра кĕтсе ларчĕ.

— Ну тытрăн-и?

— Пĕлместĕп, тытнă пек туйăнать. Ыран паллă пулĕ-ха.

Тепĕр кунне Çемене вăратмасăрах тухса утрĕ техникума Лексей. Списоксене çакма ĕлкĕрейменччĕ-ха. Лексей комисси пӳлĕмне кĕчĕ. Леш пĕрремĕш кун курнă хĕр арăмах ларатчĕ унта.

— Саламлатăп, тăваттă илнĕ шăллу. Ăста-ха вăл, савăнтар ăна.

Лексей лăпланса лармарĕ, вырăс чĕлхипе тĕрĕслерĕ Çемене, вăйпах тенĕ пек лартрĕ сĕтел хушшине . Каллех пĕрле пычĕ Çеменпе. Лешĕ кĕрсе кайсанах чӳрече патне чупрĕ. Ытти абитуриентсем хутсем çине çырса лараççĕ. Çемен пур, билетне илнĕ те ларать ун-кун пăхса, ответне çырасшăн мар-ши хут çине, е нимĕн те пĕлмест-ши? Лексей хумхана пуçларĕ. Хăй экзамен тытать тейĕн. Кайран çилленсех кайрĕ. Çилĕллĕ питпе кĕтсе илчĕ те шăллĕне.

— Эс мĕн çавăн пекех силлес?

— Сана пăхса тăтăм, мĕн нимĕн те çырмасăр лартăн?

— Мĕнех вара? Экзамен тытнă.

— Чăнах-и?

— Чăнах çав, пиллĕк лартса пачĕç.

— Ан суй-ха.

— Ма манăн суймалла тет, пичче? Чăнах, чăнах, ан кулян.

— Вăт маттур, вăт маттур, техникума кĕнĕ тесе шутла.

Пиччĕшĕпе шăллĕ савăнăçлă ыталашса хула урамĕпе утса кайрĕç.

## ЫВĂЛ ЛАРТНĂ УЛМУÇÇИ

Эпир ял хĕрринчи урамра, укăлчаран улттăмĕш çуртра пурăнатпăр. Пирĕн тĕлте урам тепĕр урампа Т саспаллилле юпленетчĕ. Пирĕн çурт шăп та лăп икĕ урам пĕрлешнĕ кĕтесре ларатчĕ. Эпир пурăнакан çурт тăррине çăка хуппипе витнĕччĕ. Çурт хыçĕнче пысăк ампар пурччĕ, пĕренисем пўртĕннинчен çĕнĕрехчĕ, çуртран çўлерех те курăнатчĕ ампар. Вĕсене çенĕк пĕрлештерсе тăратчĕ, çенĕк вăрринче пĕчĕк крыльца пурччĕ. Пўртре темиçе çемье пурăнатчĕ, çавăнпа каççерен тăвăрччĕ унта. Аслисем кая юлса çывăрма выртатчĕç, тапак мăкăрлантаратчĕç, ўсĕретчĕç. Ир выртакан ачасене питĕ кансĕрччĕ вăхăтра çывăрса кайма. Çавна пула анне кил хуçи хĕр арăмĕнчен, Анна аппаран, ампарта выртса тăма ирĕк ыйтрĕ. Лешĕ пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ. Ампарта çывăрма питех те канлĕччĕ, хăнкăласем те кансĕрлеместчĕç. Кăнтăрла ампар умĕнче выляма юрататтăм. Кун варринче хĕвел ўкместчĕ унта, çавăнпа шăрăх марччĕ. Çенĕкрен аннă тĕлте умывальник пурччĕ. Çăвăннă чухне шывне çĕр çинех юхтаратчĕç, çавăнпа яланах кўлленчĕк тăратчĕ унта, шăна сăрлаьса явăнатчĕ. Ампар умĕ вăл вырăнтан кăшт аяккарахчĕ, çавăнпа шăна-пăван кансĕрлени пулман.

Пĕррехинче эпĕ ампар умĕнче выляттăм. Те выляттăм теме пулать ăна, те ĕçлеттĕм теме те май пур-и, мĕншĕн тесен тăмран машинăсем тăваттăм. Паллах, сутма мар, кайран, вĕсем типсе хытсан, хамах выляма е юлташсене парнелеме. Ун чухне вара эп ĕçленех теме пулать. Ачалла чĕлхе кăларсах тăрмашнă вăхăтра пускил ачи Волоть каçрĕ. Ашшĕ унăн — Иван пичче. Çапах та темшĕн-çке иккĕшне те Кирюш тесе чĕнетчĕç ялта.

— Куля, эс мĕн тăватăн? — ыйтрĕ вăл манран. Эп мĕнле аппаланнине кура тăрах. Çавăн пек ĕнтĕ вăл ял çынĕн йăли.

— Курмастăн-им? — терĕм эпĕ кăштах кăмăлсăр пулса.

— Пĕлетĕн-и мĕн пĕлтерме килтĕм?

— Ăçтан пĕлем ĕнтĕ?

— Атте выртмана кайма ирĕк пачĕ.

— Чăнах-и?

— Чăнах пулмасăр.

— Урра-а! — кăшкăртăм эпĕ сиксе тăрса ташша ярасла. Тăм çинчен манса та кайрăм темелле.

— Ан çухраш, айта, пуçтарăн.

Эп ун хыççăн чупма хатĕрччĕ. Çапах та паян тунă машинсем çинчен аса илтĕм те, вырăнтан хускалмасăр, чарăнса тăрса машинсене ампар айне пытарса хутăм. Ман унта нумай вĕсем. Унтан хапха патне çитме ĕлкĕрнĕ Волоть хыççăн чупрăм. Урамра ачасем чушкăлла вылятчĕç. Эпир чупса иртнине курсан, пурте пирĕн еннелле çаврăнчĕç.

— Эй, сире вĕлтренпе хĕртмен пулĕ те, ăçта çав тери васкатăр?! — кăшкăрчĕ тахăш.

— Васкатпăр-ха! — теме çеç ĕлкĕрчĕ Волоть, ачасем ярт! сиксе тăчĕç те пире сырса та илчĕç.

— Пире пĕлтерме юрамасть-и вара?

— Ним вăрттăнлăхĕ те çук, паян выртмана каятпăр.

— Пире илетĕр-и?

— Ма илес мар? Анчах килтисене пĕлтерсе хурăр, кăштах çимелли те илĕр, ирччен хырăм выçать унта.

Ачасем чăл-пар килĕсене саланчĕç. Эпир Волотьпа лаша витисем патнелле васкарăмăр. Лашасем çăл умĕнчи вăрăм валак патĕнче пуçтарăнса тăнă та чăтăмсăррăн шăварасса кĕтеççĕ. Анчах валакран аяккарах кайса тăнă лашасем те пур. Тӳрех курăнать, кусене ĕç хуçисем шăварсах ăсатнă. Çакна курсан, Волоть кашниичех çилĕллĕн çĕрсе сурать.

— Ќам-кам лашана юратнине çакăнтанах пĕлме пулать. Тепри пур, лашапа усă курса çеç пултăр, курăк çитерме мар, шăвармa та ӳркенет.

Волотьпа иккĕн валака шыв яма тытăнтăмăр. Пĕри тулли витрене çăлтан хăпартать, тепри ăна валака ӳпĕнтерет. Лашасем киленсех шыв ĕçеççĕ. Хушăран-хушăран пуçĕсене çĕклеççĕ, силлесе илеççĕ. Ун пек чухне аялти усăк тутисенчен шыв тумлать, аяккалла сирпĕнет. Ĕçсе тăрансан, лашасем пĕрерĕн-пĕрерĕн валак патĕнчен уйрăлса утаççĕ. Ќăмăллăн кĕçенсе илекенĕсем те тупăнаççĕ. Ак, юлашки лаша та утса кайрĕ. Эпир Волотьпа çавах та валака шыв тултарса хăвармасăр çăл патĕнчен каймастпăр.

Кĕçех ачасем те чупса çитрĕç. Конюх пӳрчĕн çенĕкĕнчен кашни хăй лашин йĕвенне илсе тухрĕ те лаша тытма пикенчĕ. Хăш лашисем хăйсемех пыраççĕ пĕрре хăнăхнă «хуçисем» патне, теприсене çăкăр татăкĕпе илĕртме тивет. Волоть иленнĕ лаша Орлик ятлăччĕ, манăн — Звезда. Вĕсене темĕн пекех чăвашла Ăмăрт, Çăлтăр теме пулатчĕ те,

темшĕн лашасене чăвашла ят парасси йăлара çук. Лашасене икĕ ята хăнăхтараяс çук тенĕ пулĕ çеç: хутсенчи отчетсенче лашасене вырăсла ятпа палăртаççĕ-çке.

Юлашкинчен пурте хăйсен лашисем çине утланса ларчĕç те, ытти лашасене хыçалтан хăваласа пырса выртма улăхне çул тытрăмăр. Малта лашасене ертсе пыраканĕ Волоть хăй. Чи хыçалти эпĕ пыратăп. Ман вара пĕр-пĕр лаша е тиха тăрса юласран асăрхаса пымалла. Ыттисем лашасем ик айккинелле саланса каясран сыхлаççĕ. Тĕрĕссипе, вырăна çитиччен лашисем ниçта та тармĕç-ха, пĕр хăнăхнă çулпа юртĕç те юртĕç. Çапах та сыхлани те чарас çук. Шикленмелли кунта — шоссе урлă каçса каясси. Иртнинче çулпа пыракан машина пĕр тихана çапса хăварнăччĕ те, çавăнтанпа Волоть ашшĕ Кируш-Иван эрне ытла пире лашасене шанса паманччĕ. Паян та ĕçлĕ вăл, те таçта каймалли пулнă, лашасене пире шаннă. Аслă çул пирки Волоть пире пурне те хытарсах асăрхаттарчĕ. Шĕкĕр турра, чиперех каçса кайрăмр яла çурмалла пайлакан аслă çул урлă.

Çулăн тепĕр енче Киров урамĕ тăсăлать. Унти ачасем ытла та чăрсăр. Тем сиксе ан тухтăр тесен, сыхлансах пымалла. Урам вĕçне çитнĕччĕ ĕнтĕ. Лашасем ялтан тухса пĕтнĕ. Пĕр эпĕ, чи хыçалта пыраканскер, хапха патне çывхарса пыратăп. Çав вăхăтра тахăш ачи ман Çăлтăра тăппра муклашкипе туймалла тивертрĕ. Ман лаша, çавна кĕтменскер, ярт! сикрĕ вырăнтан, вара хапхаран тухнă-тухман укăлча еннелле вăрт! пăрăнчĕ те, лап! персе антăм çĕр çине. Манран хăтăлнă лаша ыттисем хыççăн вирхĕнчĕ. Çакна курса тăнă ачасем хăранипе вăр-вар саланчĕç те таçта тарса пытанчĕç, нихăшне те палласа юлаймарăм. Вĕсене пĕререн-пĕререн тĕпчесе пĕлсе, айăплине тавăрма тивет ĕнтĕ.

Эп ўкнине асăрхаса, ачасем ман лашана тытса чарчĕç. Пĕри ăна йĕвенрен тытса эп çитессе кĕтрĕ. Кайран иккĕн юнашар юрттарса пытăмăр. Кунта лашасемшĕн шикленмелли çук: выртма вырăнĕ юнашарах.

Улăха çитсен, кашни хăйне уйăрса панă лашисене тăлларăмăр та кăвайт вырăнне пухăнтăмăр. Ларса тăма унта вăрăм пĕрене выртать. Анчах вут-шанкă таврашĕ çукчĕ. Волоть пире вутă хатĕрлеме хушрĕ. Эпир çырмара ўсекен йывăççем патне чупрăмăр. Çур сехетрен пĕрене çумĕнче пысăк купа хăрăк турат пухăнчĕ, çĕр каçа çунтарма çитмелле пек.

Çак улăх енчи пирĕн ял хĕрринче пĕр мучипе кинемей иккĕнех тăлăххăн пурăнаççĕ. Вĕсен ывăл пулнă тет, анчах вăл хăрушă вăрçăра пуçне паттăррăн хунă имĕш. Эпир, ача-пăчасем, çакăнтан ытла нимех те пĕлместпĕр вĕсем çинчен. Вăт çав ватăсем ял халăхĕ ăмсанмаллăх сад пахчи ӳстереççĕ. Чи тутлă пан улмисем те вĕсеннех. Мĕнле ача юхтарман пуль сĕлехине çав витĕрех курăниччен тулакан çутă та шултра улмасем çине ăмсануллăн пăхса тăрса. Кĕрсе татса тухакансем те пулкалатчĕç те, анчах ашшĕ-амăшĕсем çавăн çинчен пĕлсен, хĕнесе тенĕ пекех хытаратчĕç урăх вăл сад пахчине ан кĕрĕр тесе. Тепре хăлхаран хĕреличчен турттарас темесен, итлемех тиветчĕ вара атте-аннесене.

Иртнĕ вырмара, çакна аса илсен, чăтаймарăм Волотьа йĕкĕлтемесĕр, тем парсан та, татса килейместĕн мучипе кинемей пан улмисене терĕм. Волоть çакăншăн кӳренчĕ пулмалла. Ăмăрчĕ çине утланчĕ те вĕçтерчĕ ял еннелле. Çур сехетрен-и, тăпăртатса та çитрĕ пĕр хĕв те трико йĕм тулли пан улми йăкăртса. Лашине тăллаçа ирĕке ячĕ те хăй илсе килнĕ тупра-çимĕçе кăвайт умĕнчи çерем çине пушатса. Эпир илĕртсе выртакан пан улмисем патне пĕр харăссăн сĕкĕнтĕмĕр, пуçпа пуç çапăннине те асăрхамарăмăр пек. Кĕçех кăвайт тавра сĕтеклĕ улма латăрт-латăрт латăртаттарса чăмлани илтĕнсе тăчĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, каç сĕмлĕхĕнчен кăвайт умне мучи тухса тăчĕ. Пирĕн кашнин аллинчех пан улми пулнине аякранах асăрханă ĕнтĕ вăл.

— Ну, атьсемри, мĕнле, тутлă-и пан улми?

Пурте чăмлама пăрахрĕç, аллисене çурăм хыçнелле пытарчĕç. Нихăш те пĕр сăмах та чĕнмерĕ, кашниех малалла мĕн пуласса кĕтрĕ.

— Эсир лартнă-и вăл улмуççисене, атьсемри, шăварсатăпкалатса ӳстернĕ-и, тăм ӳкнĕ каççенче сивĕрен сыхланă-и?

Ним калама пĕлмесĕр, эпир куççене тартрăмăр, айăплăн пуççене усрăмăр.

— Вăт, вăт, намăс пулмалла та сире. Эсир пĕлетĕр-иха, кам лартнă вĕсене? — ыйтрĕ вăл пирĕнтен лăпкă сасăпа. Эпир интересленсе пуççене тăратрăмăр. Мучи васкамасăр кăсйинчен «Север» ятлă пирус пачкине кăларчĕ, пĕр пирусне кăларса илсе ик пӳрнипе çавăркаласа çемçетрĕ те кăвайтри çунакан çатра турат пуçĕпе чĕртрĕ.

— Тоттă пĕлместĕр. Ывăлăм вăрçа тухса кайиччен лартса вăй илтернĕ вĕсене. Хăй пĕр пан улми те тутанса кураймарĕ. Вăрçă тухас умĕнхи çуркунне пĕрремĕш хут çурнăччĕ вĕсем çеçкисене. Мĕн тери савăннăччĕ ывăлăм ун чухне. Таврăнаймарĕ çав ирсĕр вăрçăран. Вăл паттăрла пуçне хунă чухне юнашар тенĕ пекех çапăçнă имĕш эпир. Çĕнтерӳпе киле таврăнсан çеç пĕлтĕм эп çавна.

Çак сăмахсем хыççăн пире татах та намăсрах пулса кайрĕ. Мучи пире тепре тимлĕн пăхса çаврăнчĕ те мĕнле килнĕ çавăн пек çухалчĕ каç тĕттĕмĕнче. Эпир вара мучипе кинемей пахчине урăх нихçан та кĕместпĕр тесе сăмах патăмăр пĕр-пĕрин умĕнче.

Унтанпа эрне ытла иртрĕ.Ак, эпир каллех выртмара. Кăвайт лăпкăн çунать, хушăран пĕр-пĕр лаша кĕçенсе илет. Вĕри кĕл ăшĕнче çĕр улми пиçет. Пире кичем ан пултăр тесе Волоть çĕр каç клубра пулса иртнĕ пăтăрмах çинчен каласа парать.

— Çĕр каç клубра чуттах ют ачасемпе хирĕçсе-çапăçса каяттăмăр. Эпир, ял ачисем чылайăн пулнине кура, тухса кайма тиврĕ вĕсен клубран. Анчах ахалех ирттерсе ярас темен пулмалла вĕсем кун пек намăса. Кино курма тытăннăччĕ çеç ял халăхĕ, чăл-пар! çиçсе илчĕ урамра, çавăнтах экран сӳнсе ларчĕ. Эсремет ачисем, урамран кĕрекен лини çине çара пралук çакса замыкани тунă, хăйсем тарса ӳкме ĕлкĕрнĕ. Юрать монтерĕ клубра пулнă. Трансформатор патне кайса çутă сӳнтерсе, линие сыпиччен тата тепĕр хут трансформатор патне çитсе çутă париччен сехет те иртсе кайрĕ. Çапах та кино куртăмăр, питĕ интереслĕ. «Человек-амфибия» ятлă вăл. Май пулсан, кайса курăр, вăл сире килĕшмелле.

Волоть çăвара карса итленĕ вăхăтра сисмен те, кăвайт умне иртнинче килсе кайнă мучи пырса тăнă. Аллинче килте çыхса тунă çавра çатан. Ăна таса пир татăкĕпе витнĕ. Волоть халапĕ вĕçленнине ăнкарса илсе, вăл çатанне пирĕн ума лартрĕ, пир татăкне илчĕ. Çатан тулли витĕр курăнакан сар улмасем! «Çут улма» теççĕ ăна пирĕн патра. Вырăссем вара «белый налив» теççĕ.

— Çийĕр, атьсемри, эпир карчăкпа иксĕмĕр çисе те, усă курса та çитереес çук,—сĕнчĕ мучи кăмăллăн.

Эпир илĕртекен улмасене пĕрерĕн-пĕрерĕн илме пуçларăмăр. Эх, мĕн тери тутлă-çке улмисем! Çыртнă-çыртман ирĕлеççĕ çăварта.

— Ку улмуççие эпир ывăлăмпа иккĕн пĕрле лартнă-

ччĕ. Пахчари чи ватă улмуççи вăл. Пахчана тухса ун патне çывхарсанах ывăла аса илетĕп вара. Пĕртен-пĕр чун йăпатмăш вăл маншăн.

Кăвайт çутинче мучи пичĕ çинче куççульсем ялтăртатнине асăрхарăмăр. Кашнин чунĕнче шеллес туйăм çуралчĕ мучипе кинемее. Тараватлă мучин шерпет тутиллĕ улмисемпе киленсе, кĕл ăшĕнчи çĕр улмисем çинчен мансах кайнă эпир. Тахăшĕ ăнсăртран аса илчĕ те, мучи çинчен манса кайсах кĕл ăшĕнчи çĕр улмисене патаксемпе туртма тытăнтăмăр. Мучи пĕр сăмах шарламасăр пан улмисене хăйсен таса пир татăкĕ çине пушатса хăварнă та каллех иртнинчи пек каç тĕттĕмĕнче çухалчĕ. Шел, эпир, апăршасем, тав тума та ĕлкĕреймерĕмĕр ырă чунлă мучие.

## ВИТЕ ВИТТИ

Çил çурçĕртен вĕрет, тӳпене талккăшпех хура пĕлĕтсем хупланă. Вĕсем çăран та йывăррăн йывăç тăррисем çийĕн тенĕ пекех шăваççĕ. Те вĕтĕ çумăр пĕрĕхет, те нӳрĕ юр çăвать — пĕлме çук: пĕри те, тепри те вĕлтлетни палăрать автобус чӳречинчен. Кĕçтен автобусран тухрĕ те кирлĕ çĕрелле утрĕ. Çил Атăл çинчен хирĕç вĕрет. Кĕçтен çухавине тăратрĕ, чĕрĕп пек хутланчĕ. Кун пек вăл кĕлеткипе тум ăшне кĕрсе ларнăн курăнать. Çил вăйлă вĕрнĕрен, малалла ӳпĕнсе утма тивет. Айккинчен пăхсан, çын пуçĕпе чăтлăха сирсе пырать тейĕн.

Çул çынни йывăçран купаланă пĕр хутлă вăрăм çурт патне çитсе тăчĕ. Пĕр алăкĕ тăрринче «ПРАВЛ» тесе çырса çапнă. Ку совхоз правленийĕ пулнине ăнланчĕ Кĕçтен. Кантур çурчĕн хăмине тирпейлĕ тытса тăратаймаççĕ те, мĕнле хуçалăх-ши ку? Вăл çухавине антарчĕ, тумне хăй çинчех силлесе илчĕ, вара шалалла кĕчĕ. Ун телейне, строительсен маçтăрĕ вырăнтах пулчĕ.

— Сывлăх сунатăп.

— Сире те çавнашкалах, иртĕр, ларăр. Мĕн ĕçпеччĕ?

— Илтнĕ тăрăх, сире строительсем кирлĕ терĕç.

— Кирлĕ çав, вите витти юрăхсăра тухрĕ, витĕрех шыв ярать. Юсама алă çитмест.

Нерви хавшанă пулмалла маçтăрăн, умĕнче выртакан журнала кирлĕ мар çĕртенех пĕр май вырăнтан вырăна илсе хурать.

— Информацийĕ тĕрĕсех-ха сирĕн, çапах та камран илтнĕ-ши?

— Паллакан юлташсем пĕлтерчĕç.

— Ăнланмалла. Ăçтан-ши хăвăр?

— Шупашкартан.

— Астăватăп, астăватăп, килнĕччĕ Чăваш енрен вырма вăхăтĕнче ĕçчен механизаторсем, чăн-чăн хресченсем.

Маçтăр шăпланчĕ, сĕтел çинчен хутсем хушшинче тем шырарĕ.

— Тăхтăр-ха кăштах.

Кĕçтен плащ тӳмисене вĕçертрĕ, меллĕ вырнаçса ларчĕ. Пӳлĕмре ăшă, тулти пек мар.

— Ак тупрăм та,— маçтăрăн унччен нушаллă курăннă пичĕ çине кулă ӳкрĕ, вăл тăчĕ.— Айта, директăр патне кĕрер.

Вĕсем урамах тухрĕç, вăрăм çуртăн пĕр пуçĕ еннелле утрĕç. Çурт пуçĕ крыльцаллă. Кунта пĕр директăр пӳлĕмĕ валли уйрăм алăкраснă. Маçтăрпа иккĕш директăр патне кĕчĕç. Лешĕ сĕтел хыçĕнчен аран-аран курăнса ларать. Сĕтелĕ çӳллĕрен-ши, ку, е çынĕ лутрарах?

— Петĕр Ваçличчă, ак вите виттине юсама килĕшекен çын тупăнчĕ.

— Хакĕ пирки калаçса татăлтăр-и?

— Çук-ха, Сирĕнсĕр мĕнле пултăр вара.

— Юсавшăн мĕн чухлĕ ыйтать?

— Эп объектне курман-ха, çавăнпа хаклама пултараймастăп халлĕхе.

— Йăкăр Йăванччă, ман машинăна ил те хăвăрт вĕçтерсе килĕр.

Тепĕр çур сехетрен вĕсем маçтăр пӳлĕмне таврăнчĕç. Директăр унта хăй пычĕ.

— Пăхрăр-и?

— Тумалли ĕçсене пурне те палăртрăмăр.

— Ну, Йăкăр Йăванччă, мĕн чуль тăма пултарать?

— Наряд тăрăх пĕр виçĕ пин çурă.

— Килĕшмелле пек-и кунпа, Кĕçтен?

— Çук.

— Миçе ыйтатăр?

— Ултă пин.

— Ку кăнтăр кунĕнче çаратни пулать-çке. Пирĕншĕн вăл ытла пысăк тăкак.

— Вити сире кирлĕ, вăхăтра, çу кунĕсенче, юсамалла

пулнă, вара йӳнĕ ларатчĕ. Халь, ав, çанталăкĕ йĕпеллĕ-сăпаллă, пыльчăклă-юрлă. Йӳнĕрехпе килĕшекенсене тупма пултаратăр-тăк, тархасшăн. Хуçа — хăй улпут, теççĕ вĕт вырăссем.

— Тем тумалла ĕнтĕ. Шутласа пăхас пулать.

Директăр пуçне каçăртрĕ, куçĕсемпе маччана тĕллерĕ, вара ăшра хăй çеç пĕлнине шутла пуçларĕ, çавна май тутипе чăмла-чăмла илчĕ.

— Маччана пăхса шутличчен, айтăр-ха конкретлă ĕçĕсене хисеплесе тухар. Вите тăррине пĕтĕмпех сӳтсе çĕнĕрен тумалла? Тумалла. Мачча хăмисене сӳтсе тĕрĕслесе çĕрĕккисене улăштармалла? Улăштармалла. Вите алăкĕ çумĕнчи стена ишĕлсе аннă? Аннă. Ăна çĕнĕрен купаламалла. Ырăнта хăми те, стропил пĕренисем те, кирпĕчĕ те, шиферĕ те çук. Эп асăрханă тăрăх, сире шанса, часах кĕтсе илес çук вĕсене, хамăрăн турттарма тивет. Шифер ай хăмисене те хамăрăнах пилорамăран çурса тиесе килмелле туйăнать.

— Çитĕ-çке, çитĕ хисеплесе. Выльăх, ав, юрлă-çумăрлă çанталăкра тулта тăрать, тислĕк-пыльчăка çăрать, унтах выртса тăрать. Тавай, çыр, токăвăр, Йăкăр Йăванччă. Эп ал пусăп.

Директăр тухса кайрĕ. Пӳлĕмре маçтăрпа Кĕçтен иккĕшех тăрса юлчĕç.

— Паян вăхăт çук, эрттелпе килсе çитсен çырăпăр токăвăрне.

— Çук, хисеплĕ çыннăм, кĕсъере кирлĕ хут выртмасăр ырăнтан та тапранмастăп.

Йăкăр Йăванччă договор бланкне илсе мĕн çырмаллине çырчĕ те директăр патне кайса алă пустарчĕ, пичет çаптарттарчĕ. Таврăнса хута Кĕçтене кăмăлсăртараххăн тыттарчĕ.

— Хăçан ĕçе тытăнма пултаратăр?

— Тепĕр икĕ кунтан. Хăшĕ-пĕрисен заявлени çырса отпуск илме тивет. Виçмине килсе çитетпĕр.

Маçтăрпа алă парсах уйрăлчĕ Кĕçтен. Автовокзала утма çиле май, çил çурăмран тĕртсе пырать, урасене ылмаштарма ĕлкĕр çеç. Кăмăлĕ та хăпартлануллă йĕкĕтĕн. Тĕттĕмленнĕ тĕле Шупашкара таврăнма ĕлкĕрчĕ те вăл.

Калаçса татăлнă пекех, тепĕр икĕ кунтан вĕсем пиллĕкĕн паллана кантур умĕнче пулчĕç. Йăкăр Йăванччă вĕсене асăрхаса аякранах аллипе саламларĕ.

— Çитрĕр пулать, пит аван. Тепĕр ик сехетрен эп пушанатăп, халь ман рабочисене ĕç хушмалла.

— Мĕн тăхтамалли пур, Эсир пире краватьсем илме хут çырса парăр та ăçта вырнаçмаллине калăр.

— Хăвăр ĕçлес вырăнтах, хуралçă çуртĕнче.

Маçтăр накладной çырса алă пусрĕ, унтан записка çырчĕ.

— Ак записка, механикрен трактăр ыйтăр.

Запискăна илсе, машина паркĕ еннелле васкарĕ Кĕçтен, утнă май каялла çаврăнса кăшкăрчĕ.

— Атьсемри, эсир кунтах юлăр, ман япаласене те сыхлăр.

Машина паркĕнче унталла-кунталла чупрĕ вăл, юлашкинчен комбайнсем патĕнче механике тупрĕ те запискăна ăна тыттарчĕ. Лешĕ ăна туртса тенĕ пек илчĕ те вуличчен лутăркаса чăмăртарĕ. Кĕçтен çине пăхмасăр аякрах мар иртсе пыракан механизатора кăшкăрса асăрхаттарчĕ:

— Иванов, ĕç вăхăтĕнче эрех патне кайнине тепре асăрхасан, хăвна ху айăпла.

— Унтан Кĕçтен енне çаврăнса çиллессĕн тинкерчĕ.

— Пире трактăр кирлĕччĕ? — ыйтрĕ лешĕ.

— Илĕр.

— Ăçта тракторисчĕ?

— Пĕтĕм ĕçĕ çавăнта та, çук ман вĕсем. Маларах килмелле пулнă. Халь пурте нарядсемпе ĕç вырăнĕсене саланнă.

— Мĕн тума пулать-ши?

— Сирĕн хушăра тракторист пур-и?

— Хăйсенчен ыйтмасăр, калама пултараймастăп.

«Хамăннах ларма тивет пулĕ»,— шутларĕ Кĕçтен ăшĕнче, анчах трактăр çине ларса курман-çке вăл ку тарана çити. Кĕрĕшнĕ ĕçĕ вара хăйĕннех хĕтĕртет, тăхтама килмен вĕт вĕсем кунте, килĕсенчен çакăн пек инçете.

— Ăçта сирĕн техники? — ыйтрĕ Кĕçтен иккĕленĕвне çĕнтерсе.

— Ав аякра, хĕрлĕпе сăрланă трактор.

Кĕçтен трактăр алăкне аран-аран уçрĕ, пĕтĕмпех муталаса пĕтернĕ техникăна, хуçасăрскер пулмалла. Кĕçтен стартера пусрĕ, двигатель пĕр сас та памарĕ, аккумулятăр вырăнта çук имĕш. Трактора машинăпа туртса тапратма тиврĕ. Хап-хап-хап хаплаттарать двигатель тăрпи. Кĕçтен лацепление вĕçертме васкамарĕ, пуссах тăчĕ, двигатель лайăхрах ĕçлесе кайтăр терĕ, хăй хăвăртлăхсен хăмине тим-

лерӗ: ӑҫта мӗнле хӑвӑртлӑх. Юлашкинчен хӑюлӑх ҫитерсе, хӑвӑртлӑх рычагне куҫарчӗ, газ пачӗ, ерипен сцепление вӗҫертрӗ. Трактӑр хаяррӑн кӗрлесе те ҫӑра тӗтӗм кӑларса вырӑнтан тапранчӗ. Кӗҫтен ҫӑмӑллӑн сывлааса ячӗ, питӗнче кулӑ вылярӗ.

Кӗҫтене трактӑр рулӗ умӗнче курсан, эртелтисем тӗлӗнсе те савӑнса алӑ сулчӗҫ, трактӑр пынӑ ҫӗртех япалисене прицеп ҫине печӗҫ, унтан чупса ҫитсе хӑпарса ларчӗҫ. Складра кладовщикрен койкӑсем, матрацсем, утиял-простыньсем илчӗҫ. Лешӗ тата пысӑк кастрюль тыттарса ячӗ, вӗри апатсӑр типӗлле ан пурӑнӑр, унсӑрӑн тухӑҫлӑ ӗҫлеймӗр терӗ. Тавах ӑна уншӑн.

Хуралҫӑсем выртса тӑракан кивӗ ҫуртра вырнаҫрӗ эртел. Пӳртре теме пула-ҫке чӑтма ҫук эмел шӑрши кӗрет. Ун шӑршине пӗтерес тесе, урайне эрӗм утипе шӑлса кайрӗҫ. Вырнаҫса ҫитсен, типӗ апатпах ҫырлахрӗҫ паянлӑха.

— Ӗҫе хӑвӑртрах вӗҫлес тесен, кун пек апата пӑрахӑҫламалла, атьсемри,— терӗ Кӗҫтен, апатланнӑ хыҫҫӑн.— Вӗри апат пӗҫерме тивет, анчах мӗнле тӑвӑпӑр, черетпе е кама та пулин уйӑрар? Эртел мӗнле шутлать?

Нихӑш те сӑмах чӗнекен пулмарӗ, кашни хӑйӗн койки ҫине кайса ларчӗ, хӑшӗ-пӗри ура тӑсса выртрӗ. Ҫеменӗн йӑла пур: вӑл сӑмах пуҫлас умӗн йӑл кулса илет. Ку хутӗнче те вӑл йӑл кулса илчӗ.

— Хӑҫан пӗҫермелле, бугор?

Бугор тесе бригадира е эртелте бригадира калаҫҫӗ. Кунта бригадирӗ вера Кӗҫтен. Вӑл хуравларӗ те.

— Пуринпе пӗрле тӑрса ҫӑвӑннӑ хыҫҫӑн. Ыттисем ӗҫе тухӗҫ: повар апат хатӗрлеме тытӑнӗ.

— Юрать, эп килӗшетӗп.

— Вӑт аван. Так, атьсемри, Ҫемен юлать, ыттисем вите виттине хӑпӑтма тухаҫҫӗ. Эп кантура ҫитсе нарядсем ҫырса хурам, кайран маҫтӑр хыҫҫӑн чупмалла ан пултӑр.

Тӑсӑлса выртма ӗлкӗрнӗ Мӗтри кӑмӑлсӑррӑн тӑчӗ.

— Тен, паян кирлӗ мар пуҫлама, бугор? Лайӑхрах канар та ыран ирех ӗҫе пуҫӑнар.

— Эпир кунта, Чулхула облаҫне, уҫӑлма килнӗ-им?

Пӗри те шарламарӗ.

— Айтӑр, тухӑр, атьсемри, киле ҫитсен хӑть тем чухлӗ уҫӑлӑр.

Кӑмӑлсӑррӑн мӑкӑртатса рюкзаксенче хуҫланса пӗтнӗ кирҫӑ атӑсене урайӗнче сике-сике тӑхӑнчӗҫ те кирлӗ ха-

тĕр-мĕтĕр илсе вите еннелле утрĕç. Çемен витре йатса шыв патне çăлкуçа кайрĕ. Кĕçтен кантураваскарĕ.

Йăкăр Йăванччă хăйĕн пӳлĕмĕнче çукчĕ. Ăна кĕтекенсем кунта чылайăн, тĕтĕм йăсăрланать коридорта. Кĕçтен тула тухрĕ. Унта çур сехет патнелле утса çӳреме тиврĕ ăна. Тепĕр пилĕк минутран килмесен, шырама тивет ăна, шутларĕ вăл. Çав самантра Йăкăр Йăванччă курăнчĕ.

— Тата мĕн кирлĕ сире, Кĕçтен?

— Смета туса директора çирĕплеттермелле.

— Паян май килмĕ, куратăн, халăх нумай, кашнинех мĕн те пулин кирлĕ.

— Эсир ман характера иртнинчех пĕлтĕр, смета тумасăр хăпмастăп сирĕнтен. Вăн, миçе çын чупать сирĕн хыçран смета е наряд вăхăтра çырса хатĕрлемен пирки.

Пултараймастăп эп пĕччен строительствă хуçалăхне кирлĕ вырăна лартма. Ман умĕнхи маçтăр эрех ăшне путнипе юхăнтарнă строительство хуçалăхне. Çавăнпа мана Чулхуларан чĕнсе илчĕç. Ниепле те вырăна лартма вăйхал çитерейместĕп. Пулăшаканĕ те пĕр çын та çук.

— Эппин ЕниРсем парăр мана, наряд çырам хăть, сметине ыран е тепĕр кун пĕрле тăвăпăр.

Маçтăр хаваспах темиçе ЕниР кăларса пачĕ. Кĕçтен юнашар сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ те пĕр тăхтамасăр наряд çырма тытăнчĕ. Ун умне пĕр интеллигентлă çын пырса тăчĕ.

— Эсир наряд та çырма пĕлетĕр-и?

— Пĕлетĕп.

— Эп хам Шупашкар пединститутĕнчен. Ваçлей теççĕ мана. Отпуск вăхăтĕнче кунта пилорама лартрăмăр, анчах паян кун та татăлса пĕтерейместпĕр, пĕрмай Игорь Иванович хыççăн чупма тивет. Ун вара ялан пĕр сăмах, ыран та ыран. Пулăшаймăр-ши мана наряд çырма?

Килĕшес кăмăлĕ çуккăччĕ Кĕçтенĕн, анчах мĕскĕннĕн тăракан ентешĕ çине пăхрĕ те шеллес килсе кайрĕ институт преподавательне.

— Пулăшмах тивет пуль эппин ентеше, тен, хăçан та пулин эсир те кирлĕ пулăр. Халлĕхе ларăр та юнашар çырса хурăр хут çине мĕнле-мĕнле ĕç тунине.

— Эп халех,— савăнса ӳкрĕ вăл, унтан васкасах портфелĕнчен хатĕрленĕ хучĕсене кăларчĕ.

Ку тĕле пӳлĕмре иккĕшех тăрса юлнăччĕ. Никам та чăрмантаракан çук канлĕн ĕçлеме. Пĕр хуралçă çеç кĕре-

кĕре пăхать хушăран. Кĕçтен пилĕк сехет пĕр тапранмасăр ларчĕ сĕтел хушшинче.

— Ваçлей ентешĕм, эсир, мĕн хакпа калаçса татăлнă?

— Виçĕ пин çурăпа.

— Договорĕ ăçта?

— Сăмахпа калаçса татăлнă.

— Пурнăçра тем те курнă эп, сăмаха шанса та çуннă. Унтанпа алă пуснипе пичете çеç ĕненме хăнăхрăм. Кусем йĕркеллĕ çынсем пулин çеç, вара чиперех ĕç вĕçленĕ.

— Ан хăратăр-ха мана, Кĕçтен.

— Пурнăç асăрхануллă пулма вĕрентет.

— Эсир мĕн, Кĕçтен, ытлашши çырса каймарăр-и?

— Яланах ытлашширех çырас пулать. Кĕскетме йывăр мар ăна. Пилĕк пинлĕх çитĕ-и?

— Йышăнĕç-ши?

— Эсир ан шарлăр, ним пулман пек тытăр хăвăра.

Ентешĕн нарядне вĕçлесен, Кĕçтен кайма пуçтарăнчĕ, хăйĕнне ыран та çырăп тесе шутларĕ. Ваçлей васкаманнине кура, ун çине пăхрĕ.

— Тавах сире, Кĕçтен, нарядпа урокшăн. Тав сăмахĕсĕр пуçне, ман кунта лешĕ те пур.— Ваçлей портфелĕ çине кăтартрĕ.— Мĕнле сирĕн кăмăл?

— Кун пек ывăннă хыççăн чармăччĕ. Анчах пире иккĕне ытлашши пулмĕ-и? Тен, хуралçăна чĕнмелле?

— Çиччас чĕнсе илетĕп.

Çапла виççĕн шăкăл-шăкăл калаçса, тата çур сехет ларчĕç, вара кăмăллăн алă тытса уйрăлчĕç. Кĕçтен хурал çуртне çитнĕ çĕре эртел хăрлаттарсах çывăратчĕ. Вăл шăв-шав кăлармасăр шăппăн хывăнчĕ те апатланмасăрах хăйĕн вырăнĕ ăшне чăмрĕ. Ăшă пӳлĕмре хăй те кĕçех тарăн ыйăха путрĕ.

— Ир-ирех такам айăкран тĕртнĕ туйăмпа вăранчĕ Кĕçтен. Вăхăт ултă сехет. Вăл вите патне тухса, ĕнер юлташĕсем мĕн-мĕн тума ĕлкĕрнине пăхса çаврăнчĕ. Ирхи уçă сывлăшпа çителĕклĕ киленсен, каялла пӳрте кĕчĕ, çутă çутса ячĕ те салтакри пек «Подъем» терĕ. Çеменсĕр пуçне, нихăшĕ те тӳрех сиксе тăмарĕ, пĕр аякĕ çинчен тепĕр аякĕ çине çаврăнса выртрĕ.

— Пар хăть ыйăха курса пĕтерме.

— Килте курса пĕтерĕн.

Кĕçтен утиялсене сире пуçларĕ. Ерипен тăра-тăра тула туха-туха кĕчĕç. Пĕр Кнеç çеç вырăнтан хускалмарĕ, ыттисем апата ларсан тин йăраланса тăчĕ.

— Муçак вите тăррине сӳтме юлать, ăна Çемен пулăшать, анчах кăнтăр тĕлнелле апат хатĕрлеме кĕрет,— пĕлтерчĕ бригадир апатланнă май.

— Эсир виççĕр ăçта каятăр вара? — кăмăлсăр пулчĕ Муçак.

— Ĕç кĕттермест, çавăнпа кама мĕн хушнă, çавна тумалла. Апатлантăр пулсан айтăр ĕçе.

Муçакпа Çемен вите виттине сӳме кайрĕç. Тепĕр виççĕшĕ кантура васкарĕç. Бригадир маçтăртан материалсем валли накладнойсем çыртарса илчĕ, вара вĕсем машина паркне утрĕç. Килкарти варринче механик путевкăсем валеçет, пĕринпе шӳтлет, теприне сĕнӳсем парать, хăшнепĕрне асăрхаттарать, пĕрне вара ятласах илчĕ.

— Тепре ӳсĕрле курам, слесаре куçаратăп.

— Техникăпа кам ĕçлĕ?

— Ах, каяннăй, пĕлетĕн шĕпĕн çине пусма. Мотри, лек тулькăш.

Механик юлашкинчен строительсене асăрхарĕ.

— Сире мĕн кирлĕччĕ?

— Техника кирлĕ.

— Илĕр ĕнерхи «Владимировеца».

— Пире паян прицеплă трактăр кирлĕ.

— Ăçтан тупам-ха ăна сире валли?

— Вырма вĕçленнĕ вĕт, халь çăмăлтарах сире.

— Çĕр улми уйра юлма пултарать, çумăрсем, ав, пĕр май чăрмантараççĕ.

— Пăрусем те çумăр айĕнче кунне-çĕрне ирттереççĕ.

— Вĕсем кĕтĕç-ха, хăнăхрĕç те пулĕ. Эп шутласа пăхăп, килĕр кăштахран.

— Техникăсăр ниçта та каймастпăр.

— Юрĕ-çке, строитель, ил ав çав тракториста, пушансан, каялла кунта килтĕр.

Кĕçтенпе икĕ юлташĕ кузова хăпарасшăн пулчĕç. Тракторист вĕсене тытса чарчĕ.

— Тăхтăр кăшт, ан васкăр, эп пĕр ĕç туса килем-ха.

— Чылай кĕтмелле-и?

— Ан васка, малтан хам ĕçе тăвам.

— Парк хыçĕнче пулатпăр, хăвăртрах таврăнма тăрăш.

Тракториста кĕтсе тарăхсах çитрĕç ачасем. Лешĕ икĕ сехетрен çеç кĕрлеттерсе çитрĕ, хăй сыпнă, çитменнине, йăл-йăл çиçет.

— Мĕн тăвăпăр, атьсемри?

— Пĕрене складне çитĕпĕр те прицепа вĕçертсе стропилă валли çинçерех пĕренесем купа айĕнчен туртса кăларăпăр, кайран вĕсене тиесе пăру вити патне илсе кайăпăр.

— Эппин ларăр хăвăртрах, момент ĕçе вĕçлĕпĕр.

Малтан купари шултра пĕренесене айккинелле сирме тиврĕ. Çинçерех пĕренесене ан вăрлаччăр тесе, вĕсене ятарлă çиеле купаланă. Унтан çинçереххисене виç-тăватшерĕн кăкарса туртса кăларчĕç. Тракторист кĕрлеттерет кăна, тăрпинчен хуп-хура тĕтĕм йăсăрланать. Кăнтăрлаччен пĕр прицеп тулли тиесе турттарчĕç, вите патне, каçчен — тепĕр прицеп. Тепĕр кунне те çав трактористах лекрĕ вĕсене. Ку хутĕнче шултра пĕренесене турттарчĕç вĕсем, анчах вите патне мар, пилорамăна.

Хăма çуракан Пурис кашни пĕренене тĕплĕн тĕрĕслесе йышăнать. Анчах Кĕçтен те айван ача мар, пĕлет мĕнлисем кирлине.

— Пăчкăсем мăкалаççĕ, пылчăкран тасатăр,— хушать Пирус. Тепĕр кăштахран татах вĕрентет: Пылчăк хулăм вырăнсенче пĕрене хуппине пуртăпа сĕвĕр.

— Вĕсем тăршшĕпех пылчăклă вĕт, халь çулла мар, йĕпе-сапаллă кĕркунне.

Пурис мăкăртата-мăкăртатаваскамасăр ĕçлет. Кунне пилĕк пĕрене кăна çурса пачĕ. Тепĕр кунне те çавнашкалах пулчĕ.

— Атьсемри, пилорамщик кун пек ĕçлесен, уйăхсăр çурса пĕтерес çук,— шиклĕн пĕлтерчĕ бригадир каçхи апат вăхăтĕнче.

— Тен, пĕрре хут ватса илмелле,— сĕнчĕ Муçак.

— Эс мĕн, милицие лекесшĕн-им? Пĕтрĕ вара пирĕн ĕç, штрафран та хăтăлаймăн.

— А мĕн, айтăр, лайăхрах хăналар ăна. Ун пек чухне çутти яланах катализатор вырăнче, пулăшатех,— сĕнчĕ Çемен.

Кунпа пурте килĕшрĕç те пилĕкшер тенкĕ кăларса хучĕç. Ирпе ĕçе пырсан, мухмăрлă аптранă Пуриса çур стакан ярса пана хыççăн ĕç хăвăртланчĕ. Кăнтăр апачĕ умĕн тепĕр çур стакан ярса пачĕ Пуриса Кнеç. Чупса тенĕ пек ĕç кайрĕ. Ĕç хыççăн Пуриса пĕчĕк ĕçкĕ туса пачĕ эртел. Тепĕр кунне хăма çурса пĕтерчĕç те вĕсем, тракторпа вите патне турттарчĕç.

Çанталăк мăшкăлать тейĕн эртелтен, пĕр вĕçĕм хура пĕлĕтсем шăваççĕ, пĕр май çумăр пĕрĕхет. Юрать-ха вĕтĕ çумăр çăвать, витререн тăкнă пек ямасть, çавах та ĕçлеме

май пур. Чăнах та, каçчен çи-пуç йĕп-йĕпе пулать. Çавăнпа Кĕçтен Çемене кăмака хутса тăмах хушать, ирччен типĕтмелле-çке лачкам шывлă тума. Тата яланах вĕри чей пултăр хушăран-хушăран эртелпе кĕре-кĕре хреплеттерме.

Инкекĕ те юнашарах çӳрет çав васканă чухне. Вите алăкĕ çумĕнчи стенана купаланă чухне Кĕçтен темиçе хут та асăрхаттарчĕ Кнеçе, лешĕ леса айĕнче ан çӳретĕр тесе. Çук вĕт, итлемерĕ. Вара Мĕтри аллинчен кирпĕч тухса ӳкет те Кнеçе пуçран тивертет. Муçакпа ăсатма тиврĕ тухтăр патне. Юрать мимине минтретмен. Çур кун çӳрерĕç тухтăр патĕнче апăршасем. Юлашкинчен сулана-сулана таврăнчĕç.

— Мĕн çухалса çӳретĕр? Эпир шикленме пуçларăмăр, — терĕ Кĕçтен.

— Тухтăра кĕтме тиврĕ.

— Куратăп-ха мĕнле кĕтнине.

— Ан ятлаç бугор, ну, кăштах сыпрăмăр сывлăха юсама.

— Сире мĕн, укça катăкрах парса наказани тума тивет пулĕ.

— Юрĕ-çке, бугор, урăх ун пек пулмĕ.

— Эппин хăвăрт тум улăштарăр та ĕçе.

— Айн момент, бугор.

Пĕтĕм ĕçе вĕçлесен, Кĕçтен йышăну комиссине чĕнчĕ.

— Ак, тĕрĕслĕр, пурте йĕркеллĕ.

— Хамăрах куратпăр-ха йĕркеллине.

— Ну, тавай, бригадир, ĕç актне, лайăх паллă лартса парар. Маттур ачасем. Эпир кăмăллă.

Хутсене илсе, Кĕçтен бухгалтерие чупрĕ. Директăр пĕр сăмахсăрах алă пусса пачĕ. Экономист кăштах кутăнлашрĕ, тем килĕшмен пулмалла, хăй ним те каламасть, аллине те пусса памасть. Мĕтри чăтса тăраймарĕ. Кĕçтен аллинчен хутсене туртса илчĕ те экономист пӳлĕмне кĕрсе çухалчĕ. Кăштахран алă пустарса тухрĕ те.

— Кĕçтен, эс ăна килĕшнĕ, çавăнпа тепĕр кунлăха хăварасшăн пулнă.

Халь ĕнтĕ бухгалтери ĕçĕ кăна юлнă.

— Паян татăлаймастпăр пулмалла. Уяв хыççăн килĕр.

— Унта-кунта çӳреме çулĕ инçерех çав. Тата Октябрь уявĕ типĕлле килсе тухĕ. Çылăха ан кĕрĕр, тархасшăн.

— Эп мĕн тума пултарăп укça çук пулсан?

Кĕçтен хутсене сĕтел çинчех хăварса коридора тухрĕ.

— Атьсемри, хӑвӑрт парӑр виҫшер тенкӗ, унсӑрӑн уява кунтах иртторме тивет.

Бригадир пӗр тӑхтамасӑр лавкана чупрӗ. Унта тӗрлӗ конфетсене пӗр пакет илчӗ те таврӑнса бухгалтер патне кӗчӗ.

— Ку мӗн тата? — ыйтрӗ хӗр арӑм.

— Конфетсем кӑнтӑр апатне.

— Кирлӗ пулман чӑрманма.

— Ан ҫиленӗр, пӗтӗм кӑмӑлтан.

— Юрӗ-ҫке, банка кайса пӑхӑп-и, тен, ӗҫ тухӗ те-и. Кӑнтӑр апачӗ хыҫҫӑн кӗрӗр.

Ирӗксӗрех столовӑйа кайма тиврӗ. Ҫула май автобус расписанине пӗлтӗмӗр. Кӑнтӑр хыҫҫӑн чӑнах та бухгалтер савӑнтарчӗ. Вара расчет илсех тухрӗ эртел. Шупашкара хӑпартлануллӑ кӑмӑлпа таврӑнчӗ пилӗк строитель.

## ХӖР ТАНТӐШСЕМ

Дуня шарт сиксе вӑранса кайрӗ, хӑй ӑҫта-ши тесе. Йӗри-тавралла пӑхса илчӗ, ним те ӑнланмасӑр, хӑнӑхнӑ майлӑ аллине тӑсрӗ те торшера ҫутса ячӗ. Тӑван стенасене курсан тин лӑпланчӗ вӑл. Тӗлӗкре Дуня ашшӗпе амӑшне курнӑ. Вӑл вӗсене хӑйсене те, сӑнӗ-пичӗсене те астумасть, сӑн ӳкерчӗкӗсем те юлман вӗсен. Ҫавах та тӗлӗнмелле: тӗлӗкре курӑнчӗҫ вӗсем.

Вӗсем иккӗш те геологсем пулнӑ. Пӗррехинче амӑшӗ тӗпсӗр ҫыра ӳкмелле хысакран ҫакланать. Ашшӗ ӑна пулӑшмаваскать. Туртса кӑларма тӑнӑ чухне ури айӗнчи чул татӑкки сирпӗнсе тухса вӗҫет те иккӗш те тӗпсӗр ҫыра кусса анса каяҫҫӗ. Вырӑнти ҫынсем вӗсене ванса пӗтнӗ ӳчӗсене тупса пытараҫҫӗ.

Дуня ун чухне виҫӗ ҫулта пулнӑ, кукамӑшӗпе пурӑннӑ. Хӑрушӑ хыпара илтсен, унӑн чӗри чӑтайман, тапма чарӑннӑ. Пӗччен юлнӑ хӗр ача хваттерне амӑшӗн хӗр тантӑшӗ Аня пурӑнма куҫнӑ. Анчах Дуняна пӑхса усрас шухӑшпа мар, хваттершӗн. Кӗҫех вӑл Дуняна интерната ӑсатать, малтанхи вӑхӑтра ун патне пырса ҫӳрет, кучченеҫсем парса хӑварать. Пурна-киле сахалтарах та сахалтарах пыма пуҫлать. Пӗррехинче каникула киле илсе килме те пымарӗ. Интернатрах ирттерме тиврӗ каникул кунӗсене. Пӗр вырсарни кун Дуня килне кайса килме шут тытрӗ. Аня качча тухнӑ имӗш те хваттерне сутса хӑварнӑ. Ҫавӑнтанпа

Дуня хăр тăлăххăн туять хăйне. Урăх пĕр сывăх çын та çук унăн çак çутă тĕнчере.

Интернатра Дуня Маша ятлă хĕр ачапа сывăхланчĕ. Икĕ тăлăх турат пĕр-пĕрин патне туртăнчĕ. Яланах пĕрле пулма тăрăшрĕç вĕсем, туалета каяс пулсан та пĕрлех çӳрерĕç. Çĕрле пĕри вăранас пулсан, теприне вăратса çăмăлланма чупрĕç. Пĕр сăмахпа каласан, йĕкĕрешсенчен те ытларах сывăхланчĕç вĕсем. Ӳссе çитсе çын çине тухсан та çухатмарĕç вĕсем пĕр-пĕрне, пĕрмаях çыхăну тытса тăрасçĕ. Пĕр енчен шутласан, кӳренмелли тупăнчĕ Дунян: Маша качча тухрĕ. Ырă çын тĕлне пулчĕ вăл. Тепĕр енчен шутласан, Дуня Машăшăн савăнать те: лешĕ хăйĕн пурнăçне йĕркелеме пултарчĕ-çке. Пĕр-пĕринпе çыхăну тытасçĕ пулин те, Дуня çавах та пĕччен çын.

Вунă çул хушши хăйне шеллемесĕр ĕçлерĕ Дуня, хăйне валли шанăçлă кĕтес ĕçлесе илес килчĕ унăн. Çав хушăра ăна качча илес текен каччăсем те пулман мар, анчах нихăш те вĕсенчен хваттерлĕ пулман. Чун савнипе хӳшĕре те çăтмах теççĕ те, çук çав, пурнăç хăйĕннех ыйтать. Патшалăха шанас пулсан, нумай-и унран кĕтсе илĕн. Кăтартуллă туйсем туса илеççĕ ĕнтĕ, анчах пуриншĕн те мар вĕсем, суйласа илнисем валли çеç, тата питĕ сайра пулса иртеççĕ вĕсем, комсомолла туйсем. Чылайăшĕн çырмасенче засыпушкăсем лартма тивет. Ăна та пулин ашшĕ-амăшĕсем пулăшнипе. Дунян вара тăванĕсем те çук. Пĕр хăй çине шанма тивет. Çавăнпа вăл кунне-çĕрне курмасăр, ывăннине пĕлмесĕр ĕçлесе хăйне валли икĕ пӳлĕмлĕ хваттер тума пултарчех...

Халь ĕнтĕ Дунян пурте пур темелле: сĕтел-пуканпа та шкаф-кровательпе майланнă хваттер, кĕнеке çинче çителĕклĕ укçа, хăвна килĕшекен ĕç. Тата мĕн кирлĕ ăна? Çук çав, çумра шанăçлă çын пулмасан, пурнăç та тулли мар. Ак мĕн пăшăрхантарать халь пĕччен хĕр арăма. Пĕччен хĕре тесен те тĕрĕсрех те пулĕ, мĕншĕн тесен вăтăралла сывхарса пырса арçын тути-масине туйса курман Дуня.

Ансăртран курнă тĕлĕк тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ Дуняна. Кĕлеткипе килĕшӳллĕ çăт шăлаварпа штормовка тăхăннă амăшĕ (çавăн пек шутласа пурăнать Дуня амăшĕ пирки) асăрхаттарсах калать пек ăна:

— Ан паллаш тĕксĕм ӳтлĕ арçынпа, ан паллаш, ним ырри те курмăн унран.

Тĕлĕке аса илсе, Дуня çӳçенсе илчĕ.

— Фу, тем тĕлĕнтермĕшĕ те курăнĕ тĕлĕкре.

Дуня сехет çине пăхрĕ, тăма иртерех-ха. Вăл торшера сӳнтерчĕ, çĕнĕрен витĕнсе выртрĕ, анчах тек çывăрса каяймарĕ, ун-кун çавăрăнкаларĕ те тăрса кухньăна кайрĕ. Чей ĕçмелле-ши, кофе-ши, шутларĕ вăл, унтан аллине сулчĕ те холодильникрен пуçламан коньяк кăларчĕ. Сивĕ кĕленчене сĕртĕнни ыйăхне пачах уçăлтарса ячĕ. Дуня аялти çи-пуçпах сĕтел хушшине ларчĕ, кĕленче пăккине пăрса уçрĕ те черккене ярас-и ярас мар-и тесе шухăша кайса пĕр кана ларчĕ, унтан ерипен-ерипен черкке тултарчĕ, кĕленчине лартрĕ те вăрах хушă аллинчен ямарĕ, тем шухăша путрĕ, кунта мĕншĕн çавăн пек ирех килсе ларнине те манчĕ тейĕн вăл. Каллех тĕлĕкре курнă ашшĕпе амăшне аса илчĕ, вĕсен сăнĕсене ас тăвас терĕ, анчах вĕсем темшĕн тĕтреллĕн, сăнсăрăн курăнчĕç. Дуня каллех çӳçенсе илчĕ, ку хутĕнче уçă сывлăшра çарамас ларнăран. Тăна кĕрсе, çатăрласа тытнă кĕленчене аллинчен вĕçертрĕ те тултарнă черккене пĕр сывламасăр ĕçсе ячĕ.

— Эх, шеремет, кам шутласа кăларнă-ши сана, пурнăç çăмăллăхне?

Çăкăр чĕллипе кăлпасси татăкне чăмласа, каллех утиял айне кĕрсе выртрĕ Дуня. Шухăшсенчен çăмăлланнăн туйрĕ вăл хăйне, вара сисмесĕрех çывăрса кайрĕ. Кăнтăрла тĕлне тин вăранчĕ вăл çĕнĕрен. Пĕр кун ĕçлет, пĕр кун канать Дуня. Паян унăн канмалли кун. Тăрса чӳрече каррисене сирчĕ, форточка уçрĕ. Тултан ачасен саси илтĕнет, çурхи ăшă кунпа килленеççĕ ĕнтĕ. Йывăççем çулçă кăларнă ĕнтĕ, балконсем çинче чечексем çеçке кăларма хатĕрленеççĕ. Çут çанталăк чĕрĕлĕхпе сывлать. Дуня çавна чунĕпе туять. Теме сиссе хаваслачĕ вăл, кăмăлĕ уçăлчĕ. Ахаль те тирпейлĕ те таса пӳлĕмсене татах тĕрĕслесе тухрĕ вăл, унта та кунта çук тусана шăлкаларĕ, чечексене шăварчĕ. Унтан хăйне валли апат хатĕрлерĕ. Нумаях кирлĕ-и пĕччен çынна? Апат-çимĕç магазинĕнче ĕçленĕрен, пĕтĕмпех çителĕклĕ унăн, мĕн кăмăла каять, çавна çиме пултарать.

Тем, кăкăр вĕçĕсем кĕçĕтнĕрех туйăнчĕç ăна. Дуня, душ айне тăрса, шыв юххипе килленчĕ пĕр кана. Душ айĕнчен тухса ал шăллипе типĕннĕ чухне шăнкăрав сасси илтĕннĕ пек туйăнчĕ ăна. Алăк патне пырса, глазокран пăхрĕ вăл: хĕр тантăшĕ Маша тăра парать алăк умĕнче. Алăка йăпăр-япăр уçрĕ те ыталаса илчĕ хĕр тантăшне.

— Тăхта-ха, Дуня, çеткăсене лартам.

— Ăçта пулнă вара эс чылай хушă килсе курăнмарăн?

— Кӗтмен-туман ҫӗртен ӗҫре путевка панӗҫ те Юрӑпа иккӗн пӗр тӳлевсӗр курортра канса килтӗмӗр. Путевки пӗр-пӗр пуҫлӑх валли пулнӑ пулмалла, анчах вӗсен тем килӗшсех кайман пулмала, е кайма майӗ килмен, вара пире сӗнчӗҫ. Хаваспах канса килтӗмӗр.

— Вӑт аван, ав епле пиҫнӗ сан хулсем.

— Ой, мӗн чухлӗ интереслӗ хыпарсем пур, тӳрех каласа та пӗтерейместӗп.

— Ай, мӗн эпир алӑк умӗнчех тӑратпӑр, айта кухньӑна, Маша.

Качча тухнӑ хыҫҫӑн палӑрмаллах мӑнтӑрланнӑ Маша пукан ҫинче сарӑлса ларчӗ.

— Пар-ха, Дуня, мӗн те пулин ӗҫмелли.

— Мӗн кӑмӑллан-ши?

— Мӗн те пулин сивви.

Холодильникрен квас кӑларчӗ Дуня.

— Тутанса пӑх та хакла, хамах йӳҫӗтнӗ.

Маша курка туллиех ярса ӗҫрӗ, ахлатса илчӗ.

— Эх аван та, мур илесшӗ, рецептне памӑн-и?

— Халех, халех.

Дуня шкафран блокнотпа ручка илчӗ, пикенсех ҫырма пуҫларӗ. Маша сӑнарах пӑхрӗ те ун ҫине, хӗр тантӑшӗн куҫ айӗсем кӑштах шыҫнине асӑрхарӗ.

— Каллех йӗнӗ пулмалла эс?

— Ҫук-ҫке, пулман ун пекки, сана туйӑнать пулмалла.

— Эх, хӗр тантӑшӑм, хӑвӑртрах качча тухмалла санӑн, пӗр-ик ача ҫуратса памалла, вара кампа вӑрҫса, кама ачашласа чуна йӑпатмалли тупӑнӗччӗ.

— Тупӑнмаҫҫӗ ҫав ман валли арҫынсем.

— Шырас пулать, никам та ӑна янтине килсе парас ҫук.

— Тен, хаҫат урлӑ пӗлтерӳ памалла? Вара тупӑнӗ мӗнле те пулин йӑвалланчӑк-ҫапкаланчӑк.

— Юрӗ тейӗпӗр, ыранах сан валли мӑшӑр шырама тытӑнӑп.

— Мӗнле те пулин пӗчченех пурӑнса ирттерӗп-ха пурнӑҫа.

— Ан чӑркӑш.

— Кирлӗ вӗсем мана, йытта пиллӗкмӗш ура пек.

— Тӗлӗнетӗп эп санран, Дуня, шкулта чи хастарри пулнӑ эсӗ, арҫын ачасем сан хыҫран ҫеҫ чупатчӗҫ, халь вара нихӑшӗ те ҫук.

— Лайăх каччăсене ыттисем суйласа илсе пĕтерчĕç, япăххисем хама кирлĕ мар.

— Çавах та маттур эсĕ, Дуня, ик пӳлĕмлĕ хваттер, чаплă çи-пуç, сĕтелĕ-пуканĕ-шкафĕ — пурте пур сан.

— Кăштах ăнать мана, çавă çех.

— Ан сӳпĕлтет-ха, ăнăçу çеç мар кунта, санăн ырмиканми ĕçӳ.

Маша тепре квас ярса ĕçрĕ.

— Миçе сехет халь?

— Виççĕ çитсе пырать.

— Фу, санпа калаçса ларса вăхăт çинчен те манса кайнă. Киле васкамалла вĕт, мăшăрăмпа ачасем валли апат хатĕрлемелле.

— Лармаллаччĕ кăштах.

— Çук, Дуня, тепринче, халь, мĕнле калаççĕ-ха, çемье тивĕçне пурнăçлама каймалла.

Маша такам йышăннă лифта кĕтсе тăмарĕ, чупса тенĕ пек васкаса анса кайрĕ. Троллейбус чарăннă тĕле вăхăтра ĕлкĕрчĕ вăл. Ик аллинчи тулли çеткисене малалла тăсса хирĕнкелесе кĕрсе тăчĕ тулли троллейбуса. Пушă мар алăсемпе тăма меллĕ мар. Çавна асăрхаса, пĕр хĕрĕх çулсенчи арçын вырăн пачĕ ăна.

— Иртĕр çакăнта, ларăр, кун пек тиемпе меллех мар ура çинче тăрса пыма.

— Тавтапуç, эп хăнăхнă тиемпе.

Маша иртсе ларчĕ. Çавах та пур çав туйăмлă арçынсем те, чун хытманнисем. Хăйĕн пуçĕнчен пĕр май Дуня тухмарĕ. Мĕнле тупмалла ун валли арçын. Çамрăкрах чухне тупмалла пулнă та... Троллейбус чарăнчĕ те, Маша хăйĕн остановкине палласа илчĕ, вара çеткисене малалла тăсса, алăк патнелле вирхĕнчĕ, чуттах пĕр арçына тĕксе ӳкеретчĕ. Сăрланса пĕтнĕ пĕр майра хыçалтан кăшкăрчĕ:

— Çывăрса пымалла пулман, карма çăвар!

Çакна илтсе, троллейбусран сиксе ансанах каялла çаврăнчĕ, унран та кӳренӳллĕрех сăмахсем каласшăнччĕ те, алăксем хупăнчĕç, троллейбус тапранса кайрĕ. Хăйпе хăй мăкăртатса, Маша кил еннелле васкарĕ. Утнă май лăпланчĕ вăл, каллех Дуня пирки шутларĕ.

— Хамах айăплă, çилленетĕп тата такам çине. Майра майрах ĕнтĕ, упăшкине те çавăн пек хыçалтан кăшкăрать пулĕ.

Маша пуçĕпе сулчĕ, кулса илчĕ. Çав вăхăтра паçăрхи арçын сасси илтĕнчĕ.

— Пулăшма ирĕк парсамăр?
— Хамах, ютсемсĕрех майлашăп.
Мĕн эп паян хама тытма пĕлместĕп? Ку арçын паçăр вырăн пачĕ, халь пулăшасшăн ав. Ним япăххи те çук унта.
— Йывăртарах ак çак çеткăна илĕр эппин, анчах çав çурт кĕтессине çити çех.
Маша умри çурт çине тĕллесе кăтартрĕ.
— Мĕн, Сирĕн ĕç çук-им, пур хĕр арăма та пулăшатăр-им?
— Çук, кунта килнĕренпе пĕрремĕш хут.
— Яланах вырăн паратăр-им?
— Кăмăла кайнисене çеç.
— Айтăр калаçса таталар халех, манăн мăшăр пур, вăл аван çын: çавăнпа комплиментсене йышăнмастăп.
Арçын шарламарĕ, илемлĕн кулса илчĕ çеç.
— Эсир хусах пулмалла.
— Çапла, ăçтан курăнать?
— Эсир темĕнле уйрăмла пăхатăр.
— Интереслĕ, мĕнле-ши?
— Арçын вăл килтен тухнă-тухман яланхилле эп хусах, эп хусах тет. Эсир ун пек маррăн туйăнатăр.
— Чăнах та, эп халь хусах, анчах ун пирки чылай каласа пама тивет.
— Эсир ăçта ĕçлетĕр?
— Халлĕхе ниçта та, çарта кĕскетнипе запаса тухнă, Анăçра хĕсметре тăнă пулнă.
— Ăçта-ши вăл, Анăçра?
— Германире.
— Апла ăнланмалла. Куратăп, Эсир япăх çын мар пек, итлĕр-ха, манăн питĕ çывăх хĕр тантăш пур, пĕчченскер, ак унăн телефон номерĕ, вăл сире килĕшессĕн туйăнать, мана малалла ăсатма кирлĕ мар.
Маша арçын йăтса пынă çеткăна илчĕ те пĕр тăхтамасăр малалла утса кайрĕ, пĕртте каялла çаврăнса пăхмарĕ. Хваттерне кĕрсен, интересленсе чӳречерен пăхрĕ, анчах кăмăллă арçын курăнмарĕ. Çапах та, кăмăла каякан арçын яштака, вăтам пӳллĕ, çӳçĕ хăмăр тĕслĕ, куçĕсем кăвак, тумĕ çинче пĕр муталанчăк йĕр çук. Дуняпа çывăхлансан, аван мăшăр пулмаллаччĕ те, темĕнле ĕнтĕ.
Дуня, ирхи тавар йышăнса, хăйĕн пӳлĕмĕнче канлĕн чей ĕçсе ларчĕ. Пӳлĕме аш ваклакан Миша кĕчĕ, сĕтел

çинчен пĕр именмесĕр те ыйтмасăр икĕ печенье илчĕ те çăварне печĕ.

— Дуняша, ман тус Серега килнĕ, паллаштарам-и? Çитменнине хусах.

— Ун пек тупра купипех. Эс ав мĕнле сĕмсĕр те, тусу та çавнашкалах ĕнтĕ.

— Малтан кур, унтан калăн.

Миша алăка уçрĕ те кăшкăрчĕ.

— Серега, кĕр-ха!

Пӳлĕме типшер арçын кĕчĕ, çамки пĕркеленчĕк, çӳçĕпе куçĕ хура, ӳчĕ тĕксĕм тĕслĕ, сăнпа Дуня çулĕсенче пек.

— Ан чăрмантарăр, ман ĕçлемелле.

Дуня сĕтел хушшинчен тухрĕ, швабра тытрĕ.

— Кăш кунтан, ăçтиçуксем.

— Дуня, мĕн эс сăлтавсăрах çуйхашан?

Дуня шарламарĕ, нӳрĕ швабрăпа вĕсен еннелле хăмсарчĕ, арçынсем вăштах тухса сирпĕнчĕç пӳлĕмрен, темĕнле матьсем тени çеç илтĕнсе юлчĕ вĕсем хыçĕнчен. Кăштахран пӳлĕме ĕçри юлташĕсем кĕчĕç, пуçланчĕ вара хĕр арăмсен калаçăвĕ, килĕсенчи ĕç-пуçсем пирки, ĕçекен упăшкисем çинчен, пурнăç йывăрлансах пыни те пăшăрхантарать.

Кăнтăр апачĕ хыççăн пӳлĕме товаровед Наташа кĕчĕ.

— Хĕрсем, эп сире пĕтĕм магазинĕпе шыратăп, эсир кунта имĕш.

— Кама кирлĕ пултăмăр эпир унта?

— Паян пирĕн матушкăн (директора çавăн пек чĕнеççĕ вĕсем) çуралнă кунĕ, аллă пилĕк çул тултарать, пенси çулĕ çитрĕ.

— Сăнран хĕрĕх пилĕк çулран ытла памăн.

— Сыхланма пултарнă çав хĕр арăм, мухтамалла çеç ăна.

— Пирĕнтен-и вăл сыхланасси çак йывăр самантра, вăхăтсăр кăвакаратпăр, чĕрене тытсах çӳретпĕр.

— Юрĕ-çке шавласа, айтăр пĕчĕк банкет валли кăштах укçа пухар.

Укçа енчĕкĕсем шăлт та шăлт уçăлчĕç, кĕçех сĕтел çинче купа пухăнчĕ.

— Пулчĕ, мана пĕччене йывăр пулать, пулăшăр, хĕрсем.

Ĕç вĕçленнĕ тĕле суту-илӳ залĕ пушанса пычĕ, кĕçех магазин хупăнчĕ. Матушкăн юбилейне irttерме хĕрлĕ кĕ-

тесре пухăнчĕç. Пÿлĕм варринче вăрăм сĕтел тĕрлĕ çимĕçпе йăтăнса ларать, пылак шывĕ, сăри, эрехĕ кашнин умĕнче, çавăнпа килĕшет, çавна ярса ĕç. Кунта ытларах хĕр арăмсем, çавăнпа пÿлĕмре шав тăрать. Пурте пухăнса çитсен, Наташа ура çине тăчĕ.

— Хĕрсем, шăпланăр-ха самантлăха!

Хăшĕ-пĕри каласма чарăнманнине кура, вăл алă лапписемпе темиçе хутчен çат-çат çапса илчĕ. Тинех зал шăпланчĕ.

— Чи малтан, пирĕн юратнă матушка Елизавета Алексеевна, сана юбилей ячĕпе чунтан-чĕререн саламлатпăр.

Пурте алă çупса ячĕç.

— Çавна май сана ак çак пĕчĕк парнене, холодильнике, парнелес терĕмĕр. Апла пулин те, ан сивĕнтĕр санăн чунчĕре, ан пăсăлтăр пирĕн туслăх. Нумай çулсем сунатпăр сана, матушка Елизавета Алексеевна!

Сĕтел хушшинче ларакансем ура çине тăчĕç, черккесене илсе шаклатарма тытăнчĕç. Пуçланчĕ вара юбилей ячĕпе ирттерекен ĕçкĕ-çикĕ. Тĕксĕм ÿтлĕ Серега ун çумне мĕнле майпа тата хăçан пырса ларнине Дуня сисмен те.

— Сире мĕн хурса памалла, Дуня, салат е сервелат?

— Ăна та, кăна та кăштахшар.

Дуня шампански çеç тутанса пăхрĕ пулин те, пуçа кайрĕ кăштах, вара юнашар ларакан Серега кăмăллă çын пек туйăна пуçларĕ.

Юлашкинчен магазина хупса сигнализацие хута ярса хăварчĕç. Алăк умĕнче Елизавета Алексеевна килĕсене салана пуçланă юлташĕсене тытса чарчĕ.

— Хĕрсем, кам киле ытлашши васкамасть, айтăр пирĕн пата киле.

Магазин ĕçченĕсенчен çурри ытларах остановка еннелле утрĕ. Дуня юлчĕ, Серега унран хăпмарĕ. Тем вăхăтра магазин умне вичĕ такси пырса тăчĕ.

— Ку таксисене кам сакас панă вара?

— Эпĕ, хĕрсем, айтăр, ларăр кам хăшне кăмăллать.

Хваттер алăкне кăвакарнă çÿçлĕ, кăмăллă сăн питлĕ арçын уçрĕ, кĕнисене хыванма пулăшрĕ, тулли çеткăсене ăçта лартмаллине кăтартрĕ. Сĕтел те хатĕр имĕш унăн. Хăнасем тĕлĕнчĕç.

— Ăçтан пĕлнĕ эсир эпир килессе?

— Техника вăхăчĕ халь, телефон пур вĕт. Лиза шăнкăравласа пĕлтерчĕ.

Пĕрерĕн-пĕрерĕн сĕтел хушшине вырнаçрĕç, ытлашши-

ěх никам та ěçмерě-çимерě, ěçре йěркеленě сěтелех çителěклě пулчě, çавăнпа ытларах ташларěç, хăшě-пěри шăкăл-шăкăл калаçрě.

— Пурăнаççě çав çынсем!

— Музейри пекех, мěн чухлě тупра!

— Хваттер пысăк, пěр залě çеç хěрлě кěтес пысăкăш.

— Суту-илӳре ěмěрěпе ěçлěр-ха, тен, сирěн те çакнашнашкалах пулě.

— Хěрсем, мěн пăшăлтататăр унта, ларăр сěтел хушшине,— чěнчě Елизавета Алексеевна. Ку вара вăхăт чылая кайрě, чыса та пěлмелле тенěн пулчě.

— Чăнах та, хěрсем, ытлашшиех ларса кайрăмăр пулмалла, çул курки тытар та килсене,— вăхăтра сисрě хуçасен сăмахне Наташа.

Çур çěр иртсен тин кěпěрленсе тухрěç урама. Хăнасене килěсене таксисем ăсатрěç. Серегăпа пěр вырăн ăшне кěрсе выртнине тěтреллěн çеç астăвать. Дуня. Вăранса кайрě те, иккěш те витěнмесěр çара пакартăн выртаççě имěш. Малтанах вăл вăтаннă пек те пулчě, анчах пуç тавра шутласа пăхрě те аллине сулчě. Вăл вăраннине Серега сисрě.

— Мěн кирлěччě сана, кăвакарчăнăм.

— Тем, ěçес килет, çăвар типсе ларнă.

— Халех, халех.

Серега кухньăна кайса икě тулли бокал илсе килчě.

— Мěн ку? — ыйтрě Дуня.

— Шампански.

— Эп лимонад тесе, куна халлěхе куçпа курас килмест.

— Савăла савăлпа çапса кăлараççě.

— Пулин, кайса ларт, куç ан куртăр.

— Пěлетěн-и, ěлěк аристократсем шампанскипе мухмăр чěртнě, вěсем вара ухмахсем пулман, пěлнě мěн тумаллине, хăвах курăн ак.

— Эй санпа, хăпма пěлмен сăпса, кӳр эппин, аристократ...

Вěсем кунěпе вырăн çинчен тăмарěç. Пуç ыратни шампанскипе иртмерě, лимонад та пулăшмарě, коньяк çеç кăшт канăç кӳрчě.

Тепěр ик кунтан ěçрен таврăннă хыççăн телефон шăнкăртатрě. Кам пулма пултарать-ши? Дуня трубкăна илчě.

— Алле, итлетěп.

— Ырă кун пултăр, каçарăр сире чăрмантарнăшăн.

— Юрě-çке, темех мар.

— Сирěн телефон номерне мана хěр тантăшу пачě, вăт,

калаҫса илес терĕм, тен, тĕл пулăпăр?

— Ой, паян ывăннă эпĕ, канас кăмăл ҫеҫ манăн.

— Ыранхи кун пирки мĕнле-ши?

— Курăнĕ унта, кунĕ пулсан, ҫимĕҫĕ те пулать теҫҫĕ пирĕн ĕҫре.

— Шантарса калас пулсан?

— Вырсарни кун.

Дуня трубкăна хучĕ, темиҫе минут шухăша кайрĕ, пĕр вырăнта тăчĕ вăл, унтан чалăшшăн кулса илчĕ: мĕнле парне хатĕрленĕ-ха ман валли Маша? Сассинчен кăмăллă ҫын пек.

Вырсарни кун часах тăмарĕ Дуня вырăн ҫинчен. Вăрансан чӳрече каррине сирчĕ те тулта ăмăр ҫанталăк тăнине курчĕ. Ҫумăр ҫăвать, шултра тумламсем рама ҫумĕнчи шăвăҫа палтлатса шаккаҫҫĕ. Ҫакна курса, ниҫта та тапранас, нимĕн те тăвас килмерĕ унăн, вара вăл каллех вырăн ăшне чăмрĕ. Кăнтăрлаччenex йăваланчĕ вăл вырăн ҫинче. Телефон шăнкăравласан ҫеҫ тăчĕ вăл вырăн ҫинчен. Кам пулма пултарать-ши ку вăхăтра? Никам та шăнкăравламалла марччĕ-ҫке. Вăл трубкăна тытрĕ.

— Аллă, кам кирлĕччĕ?

— Ку эпĕ-ха, ҫак кунсенче сире чăрмантарнăскер, вăт паян сире кинона чĕнме хăюлăх ҫитернĕскер.

— Кун пек ҫанталăкра килтен тухассăм кăмăл ҫук.

— Тăвар е сахăр мар пулĕ, ирĕлесрен хăрамалли ҫук.

— Эсир вĕҫне ҫити пĕлĕр малтан, кайран шухăшăра пĕлтерме пултаратăр. Кăмăлăр пулсан, пуччĕ килĕр ман патăма.

— Сирĕн адресăра пĕлместĕп ҫав.

— Ас туса юлăр, Пушкин урамĕ, ҫав ҫурт, ҫав хваттер.

— Юрать, халех ҫитетĕп.

Дуня ăшаланса ӳкрĕ, темиҫе кун ĕнтĕ, тĕрĕссипе, юбилей каҫĕ хыҫҫăн, вăл хваттерне тирпейлемен, ун-кун япаласем, ҫи-пуҫ выртаҫҫĕ. Вăл хăвăрт вырăн пуҫтарса хучĕ те, спальнăйĕнче кунпа та ҫитĕ тесе, зала йĕркене кĕртрĕ, кухньăра тирпей йĕрки турĕ. Юлашкинчен йĕрке шайне лартрех хваттерне, халь ĕнтĕ такама йышăнма та намăс мар. Унтан ҫӳҫ-пуҫне майларĕ, модăри платье тăхăнчĕ. Сывлăш ҫавăрса илем тенĕччĕ кăна, шăнкăрав сасси илтĕнчĕ.

— Ҫитрĕ пулмалла.

Вăл ҫăмăллăн сывласа илсе алăк патне утрĕ, ҫула май тепĕр хут тĕкĕр ҫине пăхса илчĕ, хăйне кăмăллă юлчĕ, ва-

ра алăка пырса уçрĕ, алăк хăлăпне тытиччен хăй хăвăрт шутласа илчĕ: интереслĕ, мĕнле çын-ши, килĕшмесен, чейпе кăна хăналăп, часах ăсатса ярăп.

Алăка уçсан, вăл вăйпитти арçынна курчĕ, çи-пуçĕ çийĕнче латлă ларать, яп-яка та тап-таса, пит-янахне тăрăшса хырни курăнать, арçын одеколонĕн шăрши кăшт сисĕнет. Янкăр кăвак куçне курчĕ те çухалсах кайрĕ Дуня. Ун пек таса куç курман вăл нихçан та.

— Ырă кун пултăр,— сăмах хушрĕ арçын.

Дуня пурпĕр чĕлхине çăтнăн хытса тăчĕ.

— Алăк сулли урлă каçарас теместĕр-и?

— Каçарăр, тархасшăн, эп çухалса кайрăм пулмалла, çанталăкĕ пусăртрĕ паян кăмăла.

— Паян эппин сирĕншĕн йывăр кун.

— Аплах мар пулĕ те, никама та кĕтменччĕ те.

— Мана та-и?

— Каçарăр та, маннă эп сирĕн пирки. Шăнкăравласан тин аса илтĕм.

Дуня, стена çумнерех пăрăнса тăрса арçынна çул пачĕ.

— Кĕрĕр, кĕрĕр.

Хăй хыçĕнчен алăк хупăнсан, арçын хыçалта тытнă аллине кăларчĕ те Дуняна йăм хĕрлĕ розăсен çыххине тыттарчĕ.

— Ку сире валли. Мана Коля тесе чĕнме пултаратăр.

— Мана Дуня теççĕ. Эсир хывăнăр, иртĕр малалла, эп чечексене вазăна лартам-ха.

Коля зала иртрĕ, кунта хăтлă, ытлашши япала çук, анчах уншăн чухăн çын хваттерĕ теме те çук, кашни япала хăй вырăнĕнче, хăйне май илĕртет. Вăл диван çине е креслó çине ларас-ши тесе шутланăччĕ çеç, Дуня урапаллă пĕчĕк сĕтел тĕртсе кĕчĕ, сĕтел варринче роза букечĕ, ик енĕпе тутлă шăршă саракан чейпе тултарнă чашăксем, сахăр вази, печенье, конфет тирĕкĕсем. Вĕсем сĕтел икĕ енĕпе хире-хирĕç ларчĕç те килленсе чей ĕçрĕç. Коля Германири çар хĕсмечĕ пирки каласа пачĕ, Дуня — хăй çинчен. Çаплала ларса, каç сĕмĕ те çитрĕ хваттере. Дуняна пĕр ыйту канăç памарĕ: мĕнле-ха çакăн пек кăмăллă та чипер арçын ку тарана çити тăр пĕччен? Юлашкинчен чăтаймарĕ, ыйтрĕ ыйтрех:

— Эсир мана каçарăр та тӳрккесле ыйтнăшăн, çакăн чухлĕ пурăнса та пĕчченех пулнă-и?

— Çук, пĕччен мар.

Дуня аван марланчĕ. Пĕр кана шăплăх тăчĕ пӳлĕмре. Шăплăха хăна татрĕ.

— Аса илме йывăр та, каласах пулать. Çар училищине пĕтерсе хыççăн лейтенант пакунĕсене илтĕм те тăван киле курма таврăнтăм, пĕрле вĕреннĕ тантăш хĕре тĕл пултăм, вăл мана тахçанах юратать имĕш, хăй те мана килĕшетчĕ. Вăт çавăн чухне çырăнса пĕрлешрĕмĕр те. Вунвиçĕ çул телейлĕ пурăнтăмăр, хĕр ача ӳстереттĕмĕр. Икĕ çул каялла «Жигули» машинăпа пынă чухне хирĕç килекен грузовик пырса çапрĕ. Хам эпĕ икĕ уйăх госпитальте сывалтăм. Мăшăрăмпа хĕрĕм вара вилмеллех сусăрлнă, пытарма хутшăнаймарăм та.

Ку хутĕнче чылайлăха шăпланчĕç вĕсем, кашни хăйĕн шухăшне путрĕ.

— Ну, паянлăха çитĕ пулĕ, ыттине тепринче калаçăпăр. Коля ура çине тăчĕ, кайма хатĕрленчĕ.

— Тĕрĕсех калатăр пулĕ, çитĕ паянлăха.

Дуня та тăчĕ, ăсатма хатĕрленчĕ. Уйрăлнă чухне Коля Дуньяна пит çăмартинчен чуп туса илчĕ. Уйрăлас килместчĕ те Дунян, нимех те тăваймăн, сăпайлăх шанăçа ӳстерет тенине асра тытрĕ.

Тепĕр кунне хăпартлануллă кăмăлпа çӳрерĕ Дуня ĕçре. Кун пеккине чылай хушă курманччĕ ĕçтешĕсем, тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕç.

— Мĕн пулнă санпа, Дуня?

— Мĕн, пĕччен тесе савăк кăмăллă та пулмалла мар-и манăн?

— Тĕлĕнмелле...

— Пĕрремĕш хут куратпăр Дуня вĕсе тенĕ пек çӳренине...

Пурте тĕлĕнеççĕ, пуçĕсене сула-сула илеççĕ. Ун пӳлĕмĕнчен хул пуççисене тĕлĕнӳллĕн сиктерсе тухаççĕ.

Ĕç вĕçленнĕ тĕлелле Серега сĕтĕрĕнсе çитрĕ, Дуня тухасса витрина умĕнче кĕтсе тăчĕ. Ăна асăрхасан, Дуня кăмăлсăрланчĕ, мĕнле хăтăлмалли пирки шутларĕ. Тен, хыçалти алăкран тухса тармалла? Вăл хатĕрлесе хунă çеткине илчĕ те асăрханулăн пусса хыçалти алăк еннелле утрĕ. Хыçалтан хулăн сасă илтĕнчĕ:

— Мадам, тен, пулăшмалла?

Çакна кĕтменскер, Дуня шартах сикрĕ, тăп чарăнса тăчĕ, вăрт çаврăнчĕ, Мишăна асăрхасан, чунĕ лăштах пулчĕ.

— Эс ухмах-им, Миша, çавăн пек хăратма?

— Ма хыçалти алăкпа?

— Кунтан çывăхрах мана.

— Хăть унтан, хăть кунтан çавах пек, ман шутпа, Серега сана килĕшсех каймасть.

— Чипер çынах, анчах ман урăххи пур.

— Çук сан никам та, пĕлетпĕр эпир.

Çав вăхăтра коридора Люба тухрĕ, Миша варлийĕ. Вăл Дуняна хулĕнчен çатăрласа тытрĕ те вăйпах Серега патне туртса кайрĕ. Лешĕ пĕчĕк банкăна икĕ пӳрнипе тытса, импортлă сăра ĕçсе тăратчĕ.

Тăваттăн калаçса подъезд умне çитрĕç. Вĕсем умне пĕр арçын тухрĕ.

— Салам ĕçченсене.

— Сана, мужик, мĕн çитмест?

Мишăпа Серега маларах тухрĕç, арçын çулне пӳлчĕç. Арçына палласа илсе, Дуня шак хытса тăчĕ, ним калама пĕлмерĕ.

— Ут хăвăн çулупа, чăрмантарса ан çӳре, атту тем курасси пулĕ,— терĕ Миша кăнттамăн.

— Атьсем, ан тĕкĕннĕ пултăр ăна,— асăрхаттарчĕ Дуня пĕрле килнĕ арçынсене. Люба унпа юнашар ним ăнланмасăр тăчĕ.

— Эх, эсир-те, хĕр тантăшу пекех сăпайлă çын тесе шутланăччĕ, сирĕнтен ав эрех шăрши перет. Кунта килсе йăнăшрăм пулмалла.

Арçын Мишăпа Серегăна çăмăллăн сирсе урам еннелле утса кайрĕ.

— Коля, тăхта, пĕтĕмпех ăнлантарам!

— Арçын çаврăнса пăхмарĕ, çирĕп утăмсемпе утса, çурт кĕтессинче пăрăнса çухалчĕ.

Дуня ун хыçĕнчен туртăннăччĕ, Люба тытса чарчĕ, çурăмĕнчен ачашласа лăплантарчĕ.

— Лăплан, Дуня, сур ун çине, кирлех-и ун пек курнăçлă çын, Серега пур сан, мĕн кирлĕ тата?

— Вăл чĕнсен, ун хыççăн таçта кайма та шанăçлă, пурнăçне те чăтма пулать.

— Тĕлĕнмелле, мĕн тупнă эс ун çумĕнче?

— Ну, сире...

Шывланнă куçĕсемпе Дуня подъезда чупса кĕчĕ, лифт кĕтмесĕрех чупса хăпарса кайрĕ. Хваттер алăкĕ умне çитсен уçăнаниепле те çăрана кĕртеймерĕ, алли чĕтрерĕ, аран-аран уçрĕ алăка. Çав вăхăта лешсем, унпа пĕрле килнисем, лифтран кĕпĕрленсе тухрĕç те Дуня хыççăн хваттере кĕчĕç.

— Паян эп ывӑннӑ, пурне те кайма ыйтатӑп.
— Мӗн эсӗ, Дуня, ыран ҫавах канатпӑр.
— Леш Коля текенни ҫумне кӗвӗҫме пултаратӑп,—хутшӑнчӗ калаҫӑва Серега.
— Кирлех мана сан кӗвӗҫӗвӳ, сырлан.
Дуня тепӗр пӳлӗме кӗчӗ, платйине хывса халат тӑхӑнчӗ те зала тухрӗ. Люба сумкинчен «Амарета» кӗленчине кӑларчӗ те сӗтел ҫине лартрӗ.
— Черккесем пар, мадам.
Кресло ҫинче ларакан Дуня вырӑнтан тапранмарӗ, сӑмах та чӗнмерӗ. Хваттерӗнче такам пур-и е ҫук-и, уншӑн халь ӗнтӗ пурпӗрех пулчӗ.
— Ну сана, хамах хуҫаланам-ха.
Люба серванта кӗрсе кайрӗ, черккесем илсе шывпа чӳхерӗ, сӗтел ҫине лартрӗ, унтан холодильникрен кӑлпаса, сыр, вӑлча кӑларчӗ.
— Пурӑнаҫҫӗ ҫав сутуҫӑсем, мӗн кирли пурте пур вӗсен.
Серега черккесене тултарчӗ, пурте ӗҫрӗҫ. Дуняшӑн халь мӗн ӗҫни пӗрех пулчӗ: хӑть пылак шыв, хӑть йӳҫӗ эрех. Ерипен кӑмӑлӗ ҫӗкленчӗ унӑн. Люба ун ҫумне пырса ларчӗ, ыталаса илчӗ, вара иккӗш юрӑ юрласа ячӗҫ.
Тепӗр эрнерен Серега Дуня патне пурӑнма куҫрӗ. Ҫывӑрма выртас умӗн хӗр тантӑшӗ Маша шӑнкӑравларӗ.
— Еҫсем мӗнле сан, Дуня?
— Чиперех.
— Паллашрӑн-и каччӑпа?
— Ахӑ.
— Эппин аван, тек пӗччен тунсӑхлама тивмӗ хваттерте.
— Окей, Маша.
— Саншӑн хавас, Дуня. Канлӗ чунпа ҫӳрӗп ӗнтӗ тек.
— Вӑхӑт тупӑнсан кӗрсе тух.
— Хаваспах.
— Трубкӑна хурсан, Маша кӑмӑллӑн кулса илчӗ, эппин эп панӑ телефон номерӗ палламан арҫынна усӑллӑ пулчӗ. Тек хӗр тантӑшӑмӑн кун-ҫулӗшӗн кулянас ҫук, тинех чӗре лӑпланчӗ. Шӗкӗр турра. Маша ҫӑмӑллӑн сывласа ярса чашӑк-тирӗк ҫуса хума кухньӑна кӗчӗ.
Пӗр шӑмат кун Серега Дуняна кӳлӗ хӗрне канма чӗнчӗ. Дуня хаваспах килӗшрӗ. Унӑн вырсарни кун ӗҫлемеллеччӗ те, вӑл матушкӑран отгул ыйтса илчӗ. Серега ҫурӑмӗ ҫинче пысӑк рюкзак. Дуня икӗ аллинче икӗ тулли сум-

ка. Электричкăра халăх лăк тулли, проходра тăрса пыма тиврĕ.

Вырăна çитсен, Серега çыранран инçех те мар çĕр айĕнчен палаткăпа резина кимĕ чавса кăларчĕ. Чи малтан палатка лартрĕç вĕсем. Дуня май килнĕ таран пулăшрĕ. Мĕн тери аван кунта: кӳлĕ сывлăшĕ уçă, вăрман сывлăшĕ сиплĕ, çĕр те вăй парса тăрать кунта. Таврара канлĕх тăрать, чун килленет шăплăхпа.

Кунта юхан шыв çыранĕсенчи пек хăйăр çук, шыв хĕрринче çитиех курăк ӳсет. Серегăпа Дуня утиял сарса тăсăлса выртрĕç. Тӳпере сайра шупка пĕлĕтсем шăваççĕ. Кун каç енне суланса пырать, анчах хĕвел анман-ха. Вăрман кайăк юррипе тулнă, мĕн тĕслĕ сасă çук пулĕ унта. Курăк ăшĕнче шăрчăксем сикеççĕ, пĕр вĕçĕм чĕриклетеççĕ. Кунтан ырлăх çук пулĕ çĕр çинче.

Серега тăрса резина киммине карăнтарчĕ.

— Дуняша, айта пулă тытма, хĕвел аннă чухне аван кĕмелле.

— Тен, мансăрах кайăн, эп кунта кăвайт чĕртĕп.

— Шыв хĕрринче пулса та пулă шӳрпи тутанса пăхмасăр мĕнле вара?

— Апла пулсан, килĕшмелле, вăлтисем пур-и?

— Тахçанах хатĕрлесе хунă.

— Пулăсене хăратас мар тесе, асăрханулăн шыв çийĕн ярăнчĕç. Шыв çинче шăплăх татах та туйăмлăрах. Çыран хĕррипе шапасем кăрлатаççĕ, шыв çинче вĕтĕ пулă вылять, хушăран çăрттан е уланкă сиксе тухса шаплаттарать. Пулă аван туртрĕ, ăмана вăлтана тирсе шыва яратăн çеç, пулă пырса хыпать те. Кĕçех шӳрпелĕх пулă тытрĕç вĕсем, вара çырана таврăнчĕç. Дуня пулă тасатрĕ, Серега кăвайт чĕртрĕ, пĕчĕк хуранпа шыв ăсса килсе кăвайт çине çакса ячĕ. Кăштахран сăмсана пулă шӳрпи шăрши кăтăкларĕ. Ним çинчен те мар калаçса, вĕсемваскамасăр апатланчĕç, пĕрле илсе килнĕ тутлă хĕрлĕ эрехе ĕçрĕç. Паçăрах тĕттĕмленнĕччĕ ĕнтĕ. Вĕсем палаткăна кĕрсе выртрĕç. Çак самантшăн Дуняпа çыхланнăскер, Серега хăйĕн вăрттăн сăмахне пуçларĕ.

— Сана кунта килĕшет-и, Дуняша?

— Мĕн каламалли пур, юмахри çăтмах. Тавах сана улах уяв туса панăшăн.

— Юнашарах хăтлă пĕчĕк ял пур, тен, хваттер сутса çурт илсе ярар çавăнта? Йӳнĕ хакпах сутакансене тупма пулать.

— Темле ёнтӗ, хула пурнӑҫне хӑнӑхнӑ та.

— Темех мар, кунти ҫӑтмаха хӑвӑрт хӑнӑхӑн. Тепӗр тесен, ӗҫе хуланах ҫӳреме пултаратӑн, электричка ҫӳрет. Кунти халӑхран ҫурри ытла пулӗ хулара ӗҫлет.

— Шутласа пӑхас пулать, виҫмесӗр чуххӑмӑн татмалли ӗҫ мар ку.

— Васкамалли ӗҫ мар, кунта час-часах килсе ҫӳресен хӑнӑхӑн-ха.

Каласу ҫакӑнпа вӗҫленчӗ. Анчах ку темӑна Серега яланах асра тытрӗ, кашни май килмессерен каласусенче ял пурнӑҫне ырлама тӑрӑшрӗ. Дуня вара ерипен ял еннелле туртӑна пуҫларӗ. Юлашкинчен хваттерне сутса Серега патне куҫрӗ, кӗнеке ҫинчен пӗтӗм укҫине илчӗ, хваттерти пӗтӗм япаласене комиссионнӑй магазина ӑсатрӗ, вӗсемшӗн укҫа илмелли квитанцине Серега ячӗпе ҫыртарчӗ. Кирек хӑш вӑхӑтра та яла куҫма хатӗр вӑл халь, комиссионнӑй магазинран укҫа илессе ҫеҫ кӗтсе пурӑнаҫҫӗ вӗсем.

Серега хваттерӗнче Дуня апат хатӗрлетчӗ, сухан ӑшаланӑ чухне тем ҫинчен шухӑша кайса асӑрхаман та сухана кӑштах ҫунтарса янӑ, тухнӑ сӗрӗме кӑларас тесе форточкӑна уҫрӗ. Ҫав вӑхӑтра хыҫалтан пырса Серега ыталарӗ.

— Йӑлӑхтармарӗ-и сана ҫак сӗрӗме сывлани?

— Ара, хӑв ҫиме ыйтатӑн вӗт.

— Айта кӳлӗ хӗрне кайса килер.

— Эп хирӗҫ мар.

Эрне варри пулнӑран иртнинчи пек тӑрса мар, ларсах кайрӗҫ вӗсем электричкӑпа. Каллех палатка лартрӗҫ, кӑвайт чӗртрӗҫ, анчах ку хутӗнче каҫхи пулла шыва анмарӗҫ, ир валли хӑварчӗҫ. Тӗлӗкре Дуня каллех ашшӗпе амӑшне курчӗ. Амӑшӗ пӳрнепе юнасах ир-ирех, тӑнӑ-тӑман киле кайма хушать пек. Ҫур ҫӗр иртсен вӑранчӗ те Дуня тек ҫывӑраймарӗ, ӑшӗ канӑҫсӑррӑн вӑркарӗ унӑн, паллӑ тем марри шиклентерчӗ.

Ир-ирех кӳлӗ ҫийӗн явӑнакан тӗтре витӗр резина кимӗпе кӳлӗ варринелле ишрӗҫ вӗсем. Пулӑ аван хыпать ӑмана. Ҫӗрлехи тӗлӗк ҫинчен манса та кайрӗ Дуня, хӑй тытма пултарнӑ кашни пулӑшӑн савӑнчӗ. Дуня асӑрхаман самантра Серега малтанах хатӗрлесе хунӑ тачка арматурӑна ярса илчӗ те Дуняна пуҫӗнчен шаплаттарчӗ, лешӗ палтах шыва тирӗнчӗ. Серега хӑвӑрт ҫырана ишсе тухрӗ те палаткипе киммине ҫӗр айне пытарса ним пулман пек

электричка чаранакан вырана уттарчĕ.

Унтанпа Дуня ĕçленĕ магазин çывăхĕнче никам та курман ăна, вăл ăçта пурăннине Миша та пĕлмест. Серега ытлашши тухса çӳремерĕ. Дуняран юлнă укçа пĕр кана пурăнмаллăх çителĕклĕ ăна. Магазина йăпăрт тухса мĕн кирлине илет те килтех ĕçсе-çисе вăхăта ирттерет. Çапла пĕр эрне иртĕхрĕ вăл. Унтан килти пурнăç йăлăхтарчĕ те каç еннелле чи чаплă ресторана çӳреме пуçларĕ.

Маша темиçе хутчен те Дуня хваттерĕ умне пыра-пыра тăчĕ, анчах кашнинчех ăна уçса кĕртекен пулмарĕ, кунсерен шăнкăравларĕ, трубка та тытакан çук. Çавнашкал икĕ уйăх та иртсе кайрĕ пулĕ. Пĕррехинче çапах та телефон трубкине тытрĕç.

— Алле, итлетĕп сире.

Палламан сасă пулчĕ.

— Кам пулчĕ ку? Дуняна парăр-ха трубкăна.

— Тек пурăнмасть кунта вăл, хваттерне пире сутса хăварнă.

— Мĕн кирлĕ мара калаçатăр?

— Ма ман сире суймалла тет?

— Хăçан сутнă вара?

— Пĕр-ик уйăх каялла.

Маша хытса тăчĕ, трубкăна та хума манчĕ, тепĕр вĕçĕнче пик-пик тусан çеç вырăна хучĕ. Мĕнле-ха капла? Дуня яланах унпа канашлаканччĕ, пĕр пĕчĕк ĕçе те унпа калаçса илмесĕр тумасчĕ. Ăçта çухалнă вара халь? Ĕç хыççăн тӳрех Дуня хваттерне васкарĕ Маша. Алăка çамрăк хĕрарăм уçрĕ.

— Сире кам кирлĕччĕ?

— Дуня.

— Вăл тек кунта пурăнмасть.

— Çавна пĕлес тесе килсе пăхас терĕм те.

— Урăх нимĕн те пĕлтерме пултараймастăп.

Алăк шалтлатса хупăнчĕ. Маша халь ĕнтĕ ют пулса тăнă алăкран хăпрĕ те ерипен утса анса кайрĕ. Ăçта пулма пултарать Дуня? Ăçта шырамалла? Ма пĕлтермест хăй çинчен? Маша вăл ĕçлекен магазина кайма шутларĕ. Унта та вăл ăçта çухалнине пĕлмеççĕ, отпуска кайнă та таврăнман-ха теççĕ. Пĕр Люба çеç кăшт ытларах калама пултарчĕ.

— Вăл ялта çурт туянса унта пурăнма куçас пек калаçатчĕ.

— Хăш еннелле, мĕнле яла каламан-и?

— Çук, каламан.

— Пуçа хуйхăллăн усса тухса утрĕ Маша магазинран. Чунĕ туять, тем инкекĕ пулнах Дуняпа. Хваттерне çитсен те канлĕх тупаймарĕ вăл, пĕрмай Дуня пирки шутларĕ. Унăн канăçсăрлăхне ĕçрен таврăннă упăшки тӳрех асăрхарĕ.

— Мĕн пулнă санпа, сăнна çухатнă?

— Дуня çухалнă, пĕр сас-хура та çук.

— Маттур хĕр арăмччĕ-çке, ăçта кайса кĕме пултарнă вара?

— Пĕлетĕн-и, çук вăл. Хваттерне сутнă, отпускран ĕçе тухман, пирĕн пата килменни е шăнкăравламанни те икĕ уйăх ытла.

— Эппин милицие пĕлтермелле.

— Вăт, кайса пĕлтер те.

— Ыран каяр, паян кая юлнă пулĕ.

— Ма ырана хăвармалла тет, вĕсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлесçĕ вĕт.

— Лăплан Маша, тăна кĕр, ир каçран ăслăрах.

Тепĕр кунне Маша ĕçе кая юлса çитетĕп тесе шăнкăравласа пĕлтерчĕ те милици уйрăмне кайрĕ. Ăна милици капитанĕ кĕтсе илчĕ.

— Гражданка, эсир мĕн ĕçпеччĕ?

— Заявлени çырас тетĕп.

— Мĕн пирки?

— Пĕр хĕр арăм çухалнă.

— Сирĕншĕн вăл кам пулать?

— Э-э, капла ĕç каймасть, тăванĕ пулмалла.

— Сирĕншĕн çавах мар-и?

— Сирĕнтен заявлени йышăнмастпăр.

— Чунсăр этем мар пулĕ те эсир?

— Сирĕнсĕрех ĕç мăй таран, çĕршер заявлени выртать, кĕçех хут айне пулатпăр. Эсир тата кунта...

— Манăн милици мана сыхлать тени ахалех эппин?

— Çын çитмест пирĕн.

— Тьфу, сирĕнпе чăнлăх тупаймăн.

— Эс кунта асăрханулларах пул, атту самант вунпилĕк талăка лекĕн.

Маша шанăçсăррăн аллине сулса тухса утрĕ милици уйрăмĕнчен.

Юра ĕçрен таврăннă тĕле апат та хатĕрлеймерĕ Маша, пĕр май шухăшласа ларчĕ. Ăçта каймалла, мĕн тумалла,

камра хӳтлӗх шырамалла? Милицире ӗҫ тухманнине Юра мăшăрӗ сăнӗнченех туйса илчӗ.

— Ну, мӗнле унта?

— Мӗнле, мӗнле, нимӗнле те мар, заявление тăванӗсенчен ҫеҫ илетпӗр терӗҫ.

— Да, савăнăҫли ним те ҫук.

Маша ниепле те лăплана пӗлмерӗ, каҫпа выртсан та ҫывăрса каяймарӗ, пӗр вӗҫӗм ăшталанса выртрӗ, эмел те ӗҫрӗ, ҫавах усă пулмарӗ. Ир еннелле ҫеҫ кăтăш пулнă пулмалла, будильник вăратнине те сисмен. Упăшкин вăратма тиврӗ.

— Пӗлетӗн-и, ман пӗр шухăш пур, пӗрле вӗреннӗ пӗр юлташ следовательте ӗҫлет, ҫавăнпа калаҫса пăхас тетӗп.

— Э-э, вăл та милици ҫынниех, усă пулӗ-ши?

— Юлташла пулса килӗшетех ӗнтӗ.

— Маншăн пулсан хăть тем ту та Дуняна шыраса тупма пулăш ҫеҫ. Манăн пӗртен пӗр хӗр тантăш вăл.

— Юрӗ, ӗҫ умӗн кӗрсе тухăп.

Юра сивӗнме ӗлкӗрнӗ чейне сыпса ячӗ те прокуратурăна васкарӗ. Юлташӗ ӗҫе ҫитме ӗлкӗрейменччӗ-ха. Юра урама тухрӗ. Сигарет чӗртсе яма ӗлкӗрнӗччӗ ҫеҫ, юлташне ӗҫе пынине курчӗ.

— Дима, тăхта-ха.

— Юра, эсех-и ку?

— Ҫам пултăр тата?

— Пӗртте улшăнман.

— Эс, ав, мăнтăрланнă, иккӗмӗш янах та тухнă.

— Ҫулсем хăйсеннех илеҫҫӗ, тек ачалла чупса ҫӳреме ҫук ҫав.

— Ҫуратăп, майора ҫитнӗ.

— Ҫулталăк ӗнтӗ.

— Нумай пулать курманни, эп сан патна ӗҫпеччӗ.

— Эс манпа тӗл пулма килнӗ тесе савăннăччӗ, эс пур, ӗҫпе.

— Ху пӗлен, самани йывăрлансах пырать, ăҫта унта хăнасене ҫӳресси, туссене те манса пыратпăр.

— Ăнланмалла, калаҫа пар эппин, мӗн сиксе тухнă сирӗн унта.

Вӗсем Дима кабинетне кӗчӗҫ. Юра мӗн пӗлни-илтнине пӗтӗмпех каласа пачӗ.

— Ӗлӗксене ун пеккисем сайра-хутра ҫеҫ пулаканччӗ, халь вара нумайланчӗҫ.

Дима сейфран коньяк кăларчӗ.

— Сапасра тытатăп, айта эппин тĕл пулнă ячĕпе пĕрер черкке пулин те сыпар, пире вăл пăсас çук.

— Юрĕ, пĕр эрнелĕх хам шутран отгул илĕп те тĕпчеме тытăнăп.

— Эпĕ те отгул илĕп, пĕрле меллĕрех пулĕ пире.

— Вăт, калаçса татăлтăмăр тейĕпĕр.

Дима пĕтĕм хучĕсене пухса сейфа питĕрсе хучĕ, начальник патне кĕрсе заявлени çырчĕ. Çав хушăра Юра ĕçне шăнкăравларĕ, отгул кирли пирки пĕлтерчĕ, заявленине каярах çырса парасса шантарчĕ. Вара вĕсем тĕплĕнрех Машăпа калаçма Юра килне кайрĕç. Маша вĕсене хумхануллă кĕтсе илчĕ. Юра паянхи ĕç-пуç пирки каласа пачĕ ăна.

— Эппин эпĕ те сирĕнпе пĕрле пулатăп.

— Çук, Маша, ку хĕр арăм ĕçĕ мар, эс ачасемпе пул.

— Эп хам та питĕ кăсăкланатăп-çке.

— Эс луччĕ унăн сăн ӳкерчĕкне пар, ăçта пурăнни тата ĕçлени пирки хут çине çыр.

Дима чи малтан Дуня хваттерĕ пирки интересленчĕ. Унта пурте йĕркеллех, саккуна пăсни çук. Унтан пускилĕсене ыйтса çӳрерĕ, никам та нимĕн те пĕлмест. Пĕр хваттерĕнче паçăр никам та çукчĕ, халь çĕнĕрен çавăнта шăнкăравлас терĕ. Алăка пĕр карчăк уçрĕ, алăкĕ сăнчăр çинче пулчĕ.

— Мĕн кирлĕччĕ-ши сире?

— Эп милицирен-ха.

— Токумент пур-и?

Дима милици удостоверенине кăларса кăтартрĕ.

— Эппин кĕрĕр, кĕрĕр, йĕкĕтсем.

Димăпа Юрăна малалла ирттерсе, вăл алăка хупрĕ.

— Атьсемри, тен, чей лартмалла?

— Çук, тавтапуç.

— Эп чиччас ĕлкĕрме пултарап.

— Кирлĕ мар, кинеми, эс луччĕ пускилӳ пулнă Дуня пирки мĕн пĕлнине каласа пар.

— Вунă çул пурăнчĕ кунта вăл, усаллине нимĕн те пĕлместĕп ун пирки. Вăт пĕр виçĕ уйăх каялла ун патне Серега текен йĕкĕт киле пуçларĕ, çавăнтанпа ĕçкĕсем кайрĕç, вĕсен, пĕр вĕçĕм мусăк кĕрлерĕ. Кайран пĕтĕмпех шăпланчĕ. Дуня та курăнми пулчĕ.

— Мĕнлерех çынччĕ Сереги?

— Типшĕмскер, тĕксĕм ӳтлĕскер, çĕмĕрт пек хура куçлă.

Кинемипе сывпуллашса вĕсем Дуня ĕçленĕ магазина кайрĕç. Серега пирки унта никамах та татса калаймарĕ. Люба тем пĕлнĕ пек туйăнчĕ, вара вĕсем унран тĕплĕнрех ыйтас терĕç. Люба хăй мĕн пĕлнине каласа пачĕ, Серега адресне те пĕлтерчĕ. Ку калаçу пирки никама та пĕлтерме юрамасть тесе асăрхаттарчĕ Дима Любăна. Серега хваттерĕ пирки вĕсем малтан ЖЭКа кĕрсе ыйтса пĕлчĕç. Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер имĕш, унччен вăл Серега мăшăрĕн пулнă, анчах лешĕ виçĕ çул каялла аварие лексе вилнĕ. Халь вара хваттер Серега çинче.

Дуня пирки ыйтса пĕлме вĕсем Машăна яма шутларĕç. Алăка шыçмак куçлă типшĕм арçын уçрĕ.

— Сире мĕн кирлĕ, хĕрарăм?

— Эсир Дуняна пĕлнĕ-и?

— Пĕлнĕ тейĕпĕр.

— Ăçта вăл халь?

— Пĕлместĕп, яла каяс пирки калаçатчĕ.

— Мĕнле яла?

— Хăйĕнчен ыйтăр.

— Арçын сăмса умĕнче алăка хупрĕ.

Маша макăрса ярсa кĕчĕ киле.

— Туятăп, вăл пурне те пĕлет, анчах каламасть.

— Лăплан, мĕн кирлине хамăрах тăвăпăр.

— Ана черетпе сыхлама тивет пулмалла.

— Паллах.

Вĕсем черетпе Серегăна сыхлама пуçларĕç. Лешĕн кунсерен пĕр маршрут пулчĕ: кунĕпе çывăрать, каç тĕлне пĕр шурă çӳçлĕ хĕр патне кĕрсе тухать, вара иккĕш ресторана каяççĕ, ĕçеççĕ, çиеççĕ, ташлаççĕ, савăнаççĕ. Ир енне Серега хĕре килне ăсатса ярать. Ку Юрăна йăлăхтарса çитерчĕ.

— Дима, тен, ахалех йĕрлетпĕр эпир?

— Çук, Юра, туятăп, ку хĕрпе ахальтен çӳремест вăл.

— Пĕр май пĕр пек кун иртет, мĕн чухлĕ йĕрлемелле тет вара?

— Чăтăмлăх кирлĕ пирĕн ĕçре. Тепĕр темиçе кун кĕтер-ха мĕн пуласса.

Кĕтсе илчĕç илчĕçех вĕсем хăйсене кирлине. Шăмат кун Серега пысăк рюкзакпа килтен тухрĕ. Ун хыçĕнчен леш шурă çӳçлĕ хĕр сумка йăтса утрĕ. Дима хăйĕн машининчен тухса телефон будки патне чупрĕ.

— Юра, итле тимлĕ, хăвна валли çеç çи-пуç ил, мана та ан ман, мĕн те пулин çимелли ил, тата термоспа вĕри

чей. Ķилтех пул эп тата шăнкăравлăп. Вăл трубкăна çакрĕ те машинине тапратса ярса лешсем ларнă троллейбус хыççăн вĕçтерчĕ. Серегăпа шурă çÿçлĕ хĕр электричкăпа кайма шутларĕç имĕш, кассăра билет илчĕç. Дима телефон шыраса чупкаларĕ, ниçта тупаймасăр касса алăкне шаккарĕ.

— Ķунта кĕме юрамасть, çамрăк çын.

— Наччас шăнкăравламалла ман, таврара телефон çук.

— Нумай эсир, шăнкăравлас текенсем.

— Эп милицирен, ак удостоверени.

— Тÿрех çавăн пек каламаллаччĕ те.

Дима кассăна чупса кĕрсе Юрăна шăнкăравларĕ.

— Юра, вĕçтер чукун çул вокзалне, мана тупмасан, эп мĕнле электричкăпа кайнине кассиртан пĕлĕн. Анасса вара вĕсем ăçта анĕç, çавăнта анăн та сана кĕтсе илĕп. Эс кашни чарăнăва чÿречерен пăхса пыр.

— Юрать.

Дима телефонпа калаçнă вăхăтра кассир кăмăлсăррăн йăшаланса ларчĕ.

— Хăвăрах ăнланатăр пулĕ, пирĕн кунта ют çынсене кĕртме юрамасть.

— Ķаçарăр эсир мана, аванах ăнлантăп та ĕçсем çавăн пек ыйтаççĕ.

Дима перрона тухрĕ. Ķĕçех электричка çитрĕ те, Серегăпа хĕр юлташĕ электричкăна кĕчĕç. Дима кассира записка парса хăварма ĕлкĕрчĕ. Электричкăна вăл лешĕ тапранса кайнă самантра кĕме ĕлкĕрчĕ. Вăл сăнакан мăшăр пĕр вакунра вырăн йышăннă та калаçса-кулса пыраççĕ.

Пĕр улах станцăра анчĕç Серегăпа хĕр. Ķунта урăх пĕр çын та анакан пулмарĕ. Дима лешсем асăрхамалла мар анса юлма тăрăшрĕ. Станцă çурчĕ патне пырса, черетлĕ электричка хăçан килессе пĕлчĕ, вара Серегăпа шурă çÿçлĕ хĕре куçран вĕçертмерĕ. Лешсем кÿлĕ хĕрне анчĕç. Сереги пĕр пысăк йывăç сывăхĕнче çĕр айĕнчен палаткăпа кимĕ чавса кăларчĕ. Димăна çакă çеç кирлĕ пулнă, вăл васкавлăн станцăна таврăнчĕ, Юрăна кĕтрĕ. Ķĕçех электричка çитсе чарăнчĕ, состав варринче вырнаçнă вакунран Юра икĕ сумкăпа тухрĕ.

— Эп сана тÿрех асăрхарăм. Пăх-ха, мĕнле инçете килнĕ вĕсем.

— Ķÿр пĕр сумкине, утар, вĕсене нумайлăха пĕччене хăварма юрамасть.

Вăрман сукмакĕпе вĕсем анаталла анса кайрĕç. Вăрман сарала пуçланă, эппин кĕр çитесси инçех мар, вăрманти уçă варкăшранах палăрать вăл, кайăксем юрлани те илтĕнсех каймасть. Кĕç сулхăнланчĕ, каç сĕмĕ çапа пуçларĕ. Хушăран ура айĕнче турат хуçăлать те сасси инçете сарăлать. Çывăхрах шăши чăштăртатни илтĕнет. Йывăççем хушшипе тăмана çунаттисемпе шавласа вĕççе иртрĕ, инçех мар йывăç тураттин çине вырнаçса уху! кăшкăрса илчĕ.

Димăпа Юра канма килнĕ мăшăртан инçех мар вырнаçрĕç, кунтан лешсем мĕн туни пĕтĕмпех курăнать. Ытларах вăхăта вĕсем палаткăра ирттерчĕç, хушăран-хушăран тухса кĕреççĕ. Акă тухрĕç те кăвайт чĕртсе ячĕç, унтан кăвайт умне вырнаçса темĕнле иномарка кĕленчерен эрех ĕçрĕç те каллех палаткăна кĕрсе çухалчĕç.

Димăпа Юра çĕрĕпех вăрăм тунасене тăрантарчĕç. Юрать-ха сигарет тĕтĕмĕ пулăшкалать, анчах пĕр май туртмастăн вĕт. Çур çĕр иртсен сивĕтрĕ, вара Юра илсе килнĕ ăшă тума уртса яма тиврĕ.

Ир-ирех Серегăпа шурă çӳçлĕ хĕр палаткăран тухрĕç, çăвар кара-кара карăнкаларĕç, кимĕ вĕрсе карăнтарчĕç, шыва антарчĕç, вара кӳлĕ варринелле ишсе кайрĕç. Шыв çийĕн çăра тĕтре явăнать. Кĕçех вĕсем куçран çухалчĕç. Димăпа Юра çырана анчĕç, анчах нимĕн те тума пултараймарĕç. Малалла мĕн пулса иртессине кĕтмеллли çеç юлать. Кĕçех кӳлĕ енчен хĕр сасси хăрушшăн илтĕнчĕ:

— Ай, пулăшăр!

Унтан шывра шăмпăлт туни хăлхана кĕчĕ, кĕсменпе çыран хĕрринелле васкаса ишни илтĕнчĕ. Юра кӳлĕ хĕрринелле ыткăнасшăн пулчĕ, Дима ăна тытса чарчĕ.

— Шăп пул, унсăрăн пĕтĕмпех пăсса хума пултаратăн.

— Унта хĕре вĕлереççĕ, эпир пур лăпкăн кĕтсе тăратпăр.

— Хывăнса ишсе кай эппин сивĕ шывра, инçех кайăнши.

— Мĕн те пулин тумалла-çке.

— Пытанар хăвăртрах палатка хыçне.

Тепĕр темиçе минутран кимĕ çырана çитрĕ. Серега, кимĕрен пĕчченех тухса, ăна çырана турта пуçларĕ. Çав самантпа усă курса, Дима ăна хыçалтан пырса ярса илчĕ, аллисене çурăм хыçне пăрса илчĕ. Юра та чупса çитрĕ. Вара вĕсем Серегăна самаях çӳллĕ те çителĕклĕ тачка йывăça ыталаттарчĕç те аллисене наручник тăхăнтартрĕç.

Капла ниҫта та тарайрас ҫук. Унтан васкасах кимĕне шыва антарчĕҫ те паҫăр сасă илтĕннĕ тĕтрере ик-виҫ метртан нимĕн те курăнман тĕлелле хăвăрт ишсе кайрĕҫ. Анчах тĕтрере ик-виҫ метртан нимĕн те курăнмасть. Те малалла ишмелле, те аяккинелле пăрăнмалла, пallă мар. Юлашкинчен Юра сылтăмра шыва путса пыракан мĕлкене асăрхарĕ.

— Ав курăнать, иш ҫавăнта.

Юра свитерне хывса печĕ те йĕмĕ-мĕнĕпех шыва чăмрĕ, хыпашласа хĕрĕн ҫӳҫĕнчен ярса илчĕ, вара хăйпе пĕрле ҫиеле туртса кăларчĕ. Вĕсем хĕре кимĕ тĕпне вырттарчĕҫ, искусственнăй сывлаттарма пикенчĕҫ. Тем чухлĕ тăрмашсан, усă пулчĕ-пулчех, хĕр рăварĕнчен шыв юхса тухрĕ, хĕр сывласа ячĕ, куҫĕсене уҫрĕ.

— Чĕртейместпĕр пулĕ тенĕччĕ, мĕн чухлĕ шывра пултăн та. Юрать куртка сана пĕр хушă шыв ҫинче тытса тăнă. Чăнах та кĕпепе ҫуралнă эсĕ, шутла, иккĕмĕш хут ҫуралтăн.

Дима станцăна чупрĕ, милици уйрăмне шăнкăравласа пĕлтерчĕ. Сехет-сехет ҫурăран машина килсе ҫитрĕ. Серегăна илсе кайрĕ.

Серега хăйĕн айăпĕсене йышăнчĕ. Ку шурă ҫӳҫлĕ хĕрĕ унăн пиллĕкмĕш жертви имĕш. Тепĕр кунне водолазсем тăватă виле шăммисене тупрĕҫ. Маша вĕсене тăваттăшне те пĕр шăтăка пытарчĕ, палăк хăми ҫине тăватă ят ҫыртарчĕ.

## ТУПМАЛЛИ


Ах, Қатенька, Қатенька... 3
Ылханлӑ ылтӑн 7
Ултавҫӑ 25
Шӑпа 31
Пичче 35
Ывӑл ларатнӑ улмуҫҫисем 40
Вите витти 45
Хӗр тантӑшсем 55

Николай ЖИРНОВ

# ЫЛХАНЛӐ ЫЛТӐН

КАЛАВСЕМ

Сдано в набор 30. XI. 1998 г. Подписано к печати 21. XII. 1998 г. Формат 60×84/16. Бумага газетная. Гарнитура литературная. Печать высокая. Учетно-изд. l. 4,0. Тираж 1000. Заказ № 18. Лицензия № 040807 от 10. 04. 1997 г.

Кугесьская типография Государственного Комитета по печати ЧР. 429500, Чувашская Республика Чебоксарский район, пгт. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

15=00

